Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2656-2

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем

## 2 класс

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чӑваш чӗлхи вӗрентмелли меслет кӑтартӑвӗсем

**2 класс**

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2017

УДК 37.091.3
ББК 74.268.19=635.1
И 26

**Игнатьева В.И.**

И 26 Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем: 2-мĕш класс / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017. — 160 с.
ISBN 978-5-7670-2656-2

Пособи В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсен 2-мĕш класĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентме хатĕрленĕ комплект шутне кĕрет. Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшсе тăрать.

**УДК 37.091.3**
**ББК74.268.19=635.1**

**ISBN 978-5-7670-2656-2**

© Игнатьева В.И., Чернова Н.Н., Николаева Л.В., 2017
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2017

# УМĔН КАЛАНИ

Иккĕмĕш класра чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи пек вĕрентмелли уроксенче учительсен ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарас тĕллевпе ĕçлемелле. Ачасене кашни урокрах чăвашла пуплеве итлесе ăнланма, чăвашла калаçма, вулама тата çырма вĕрентсе-хăнăхтарса пымалла. Палăртнă тĕллеве вĕрентекенсем авторсем хатĕрленĕ вĕрентӳ комплексĕпе усă курса пурнăçлама пултараççĕ. Меслетлĕх кĕнеки — комплексăн пĕр пайĕ. Ку кĕнекере авторсем иккĕмĕш класра пурнăçламалли тĕп ĕçсен системисене палăртнă, хăйсем хатĕрленĕ вĕренӳ пособийĕпе, ĕç тетрачĕсемпе мĕнле усă курса ĕçлемеллине тĕслĕхшĕн çырса кăтартнă, пĕтĕмлетӳпе тĕрĕслев ĕçĕсем валли материал панă.

Мĕне, мĕнле тĕп шухăшсене никĕсе хурса йĕркелемелле-ха иккĕмĕш класра чăваш чĕлхи вĕрентес ĕçе? Паллах, программăра палăртнă тĕп шухăшсене пурне те шута илмелле: материала ачасем ăнланса вĕренччĕр тесе ĕçлемелле; вĕрентĕве ачасен çулне, вĕсен аталанăвĕн шайне кура йĕркелемелле; пĕлĕве, хăнăхусемпе ăслайсене çирĕп системăра парса пымалла; вĕрентĕвĕн содержанийĕ ăслăлăх енчен тивĕçлĕ шайра пулмалла; уроксенче ачасене пур енлĕн аталанмашкăн условисем туса памалла; маларах вĕреннине тăтăшах аса илсе çирĕплетсе пымалла; курăм хатĕрĕсемпе анлă усă курмалла т.ыт.те. Кунсăр пуçне, вĕренекенсем уроксенче туяннă пĕлӳсемпе, хăнăхусемпе тата ăслайсемпе кулленхи пурнăçра усă курма пултарччăр тесе тăрăшмалла. Çакă ачасене чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи пек вĕрентес ĕçĕн тĕп тĕллевĕпе çыхăннă шухăш. Вĕрентĕве пурнăçри пек е пурнăçа çывăх йĕркелесси, кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕренме уроксенче хутшăну саманчĕсем йĕркелесси — чи кирли. Вăл е ку лару-тăрура ачана чăвашла калаçма-хутшăнма кирлĕ сăмахсемпе, пуплев пĕрлĕхĕсемпе, вĕсене йĕркелеме кирлĕ чĕлхе хатĕрĕсемпе ачасене уроксенче паллаштармалла кăна мар, кулленхи хутшăнура усă курма та вĕрентмелле.

Иккӗмӗш класра чӑваш чӗлхи урокӗсене йӗркеленӗ чух вӗрентекенӗн ҫичӗ-сакӑр ҫулхи ачасен уйрӑмлӑхӗсене шута илмелле. Ку ҫулхи ачасем хӑйсене ирӗклӗ тытаҫҫӗ, именсе лармаҫҫӗ. Ӗҫе тӳрех тума тытӑннипе, кӗтме юратманнипе, чӑтӑмӗ нумайлӑха ҫитменнипе палӑраҫҫӗ. Вӗсен чупас, сикес, пӗр-пӗринпе выляс килет. Ҫакӑ ачан хусканусем тӑвас туртӑмӗ пысӑк пулнипе ҫыхӑннӑ. Ачасене тимлӗ итлеме хӑнӑхтарас тӗллевпе вӗрентекенӗн кашни урокрах физкультура саманчӗсем йӗркелемелле, тӑхтавсем вӑхӑтӗнче те ачасене тӗрлӗ вӑййсем выляттармалла. Вӑййисем чӑвашла пулсан вара пушшех те аван.

Иккӗмӗш класра ачасене чӑвашла вулама вӗрентес, чӑвашла вулавӑн тӗп вӑрттӑнлӑхӗсене уҫса парас тӗллевпе тӗплӗ ӗҫлемелле. Вулавпа ҫыхӑннӑ вӑрттӑнлӑхсем пӗтӗмпех чӑваш чӗлхин фонетика системин хӑй евӗрлӗхӗпе ҫыхӑннӑ. Чӑвашла вуланӑ чух вырӑсла вулав хӑнӑхӑвӗсем ҫине яланах таянма май ҫук. Чӑвашла вулав — хӑйне евӗрлӗ вулав. Чӑваш алфавитӗнчи сас паллисенчен чылайӑшӗ икӗ е темиҫе пӗлтерӗшлӗ. Тӗслӗхрен, шавлӑ хупӑ сасса пӗлтерекен сас паллисене вӗсен сӑмахри вырӑнне кура хыттӑн та, ҫемҫен те, янӑратса та, янӑратмасӑр та вулама пулать. Паллах, ачасен вӗсене хӑҫан ҫемҫен, хӑҫан хыттӑн, хӑҫан янӑратса, хӑҫан янӑратмасӑр вуламаллине пӗлмеллех. Унсӑрӑн чӑвашла тӗрӗс вулама кӑна мар, ҫырма вӗренме те май ҫук.

Ачасене вулама вӗрентсе пынӑ май ҫырма та вӗрентмелле. Ҫырни вӗренекене тӑван мар чӗлхери сасӑсене, сасӑ ҫыхӑнӑвӗсене илтме, уйӑрма, ҫырура тӗрӗс палӑртма хӑнӑхтарать. Малаллахи тапхӑрта ҫырма пӗлни, вулама пӗлни евӗрлех, ачасене чӑвашла вӗренме пулӑшать, ҫавӑнпа та ҫак ӗҫе те уроксенче тимлемелле. Ҫырма вӗрентес ӗҫе вулама вӗрентессипе тачӑ ҫыхӑнтарса туса пымалла. Чи малтан сасӑпа сас палли тытӑмӗ пӗр килекен сӑмахсем, ҫавнашкал сӑмахсенчен йӗркеленӗ ансат предложенисем ҫырма вӗрентмелле. Каярахпа орфографие кӑштах йывӑрлатма, ҫыру ӗҫӗсен тӗсӗсене кӑткӑслатма та юрать. Кӗнекепе ӗҫ тетрачӗсенче ачасене чӑвашла вулавӑн тӗп вӑрттӑнлӑхӗсене курматуйма тата тӗрӗс ҫырма вӗрентес тӗллевпе тӗрлӗ материал панӑ.

Вӗрентекенӗн уроксенче питӗ тимлӗ ӗҫлемелле, ачасем вуланӑ чух тӑвакан пӗр йӑнӑша та тӳрлетмесӗр хӑвармалла мар. Уроксенче сасӑллӑ вулавӑн тӗрлӗ тӗсӗпе усӑ курмалла, кашни ачана мӗн май килнӗ таран нумайрах сасӑпа вулаттарма тӑрӑшмалла, анчах вӗреннӗ сӑмахсенчен ҫеҫ тӑракан текстсене харпӑр хӑй тӗллӗн вуласа содержание ӑнланма вӗрентесси ҫинчен те манмалла мар. Малтанхи вӑхӑтра ачасене ҫурма сасӑпа (сӗрлесе) вулама хӑнӑхтармалла, каярах вулавӑн ку тӗсӗ пӗчӗккӗн-

пĕчĕккĕн ăшри вулава куçать. Çапла вара, иккĕмĕш класра чăвашла вулав ăсталăхне, унăн хăвăртлăхĕпе палăртулăхне, ăнланулăхне аталантарасси пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç шутланать.

Кĕнекере панă вулав материалĕ калаçу, грамматика тематикипе килĕшӳллĕ, ачасен ăс-хакăл аталанăвне, интересĕсене, çав хушăрах сапăрлăх тĕллевĕсене те тивĕçтерет. Вулав тексчĕсенче ачасем пĕлмен сăмахсем, грамматика формисем е пачах çук, е сахал. Илемлĕ литература тексчĕсенче, паллах, ачасем пĕлмен сăмахсем пулаççех.

Вĕренӳ пособийĕнчи текстсем ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарма кăна мар, чĕлхе материалне вĕрентме-çирĕплетме те пулăшаççĕ. Çĕнĕ сăмахсемпе, грамматика формисемпе, синтаксис конструкцийĕсемпе паллаштарнă хыççăн вĕсене ачасен пуплевĕнче çирĕплетес тĕллевпе текстсене кĕртсех пынă.

Чăвашла тĕрĕс вулама пĕлни ачана малалла чăваш чĕлхине тухăçлă вĕренме питех те кирлĕ, мĕншĕн тесен вулама вĕренсе çитсен ачасем ытти пуплев ĕçĕ-хĕлне вулав урлă йĕркелесе пыма пуçлаççĕ. Ачасем вĕренӳ пособийĕпе е ĕç тетрачĕпе усă курса харпăр хăй тĕллĕн тĕрлĕ ĕçсем, хăнăхтарусем пурнăçлама хăнăхаççĕ, вулани çине таянса калавсем йĕркелеççĕ, чăвашла çырма вĕренеççĕ.

Ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси вĕсене пуплев ĕçĕ-хĕлне чăвашла пурнăçлама хăнăхтарассипе çыхăннă. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ пĕтĕмпех чĕлхе материалне пĕлни çинче никĕсленет. Чĕлхене вĕрентмесĕр пуплеве аталантарма май çук, апла пулсан ачасене уроксенче чĕлхе ăслăлăхĕн тĕрлĕ сийĕнчи материалпа паллаштарсах пымалла. Кунта чăваш фонетикин тĕп законĕсене ăнлантарни те (терминсемпе паллаштармасăр, закон ячĕсене каламасăр), чăваш чĕлхинчи уйрăм сасăсене, сасă çыхăнăвĕсене тĕрĕс калама вĕрентни те, сăмахсенче пусăм тĕрĕс лартма хăнăхтарни те, интонацие чухлама хăнăхтарни те, пĕлекен сăмахсен, сăмах майлашăвĕсен йышне ӳстерсе пыни те, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарса ансат калăплă предложенисем, текстсем йĕркелеме вĕрентни те кĕреççĕ. Кунсăр пуçне, ачасене чăваш чĕлхинчи пулăмсене вырăс чĕлхинчи пулăмсемпе танлаштарма хăнăхтарса пымалла. Çапла майпа вĕсен ăс-тăнĕ аталанса пырать, чĕлхе туйăмĕ çуралать. Çак хăнăху ачасене малалла аслăрах классенче ытти чĕлхесене вĕреннĕ чух питех те кирлĕ пулать.

Вĕрентӳ комплексĕнче грамматика материалĕпе ĕçлессин системи йĕрленсе пырать. Иккĕмĕш класра, тĕпрен илсен, чăваш чĕлхинчи глаголсем çинчен калаçатпăр. Ачасем хăйсен хальхи, иртнĕ, пулас ĕçĕсем çинчен каласа пама вĕренеççĕ. Авторсем

грамматика материалĕпе ĕçлессин системине çак вĕрентӳ тĕллевĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ: чĕлхе материалне вĕреннĕ чух ачасене хăйсене чĕлхе тĕпчевçисем пек ĕçлеме, пĕлменнине пĕлнинчен уйăрма, пĕтĕмлетӳсем (правило-ориентирсем) тума, пĕтĕмлетӳсене модельсем, схемăсем евĕр палăртма хăнăхтарасси. Чи кирли çак ĕçре — ачасене грамматика формин функци пĕлтерĕшне ăнланса илме майсем туса парасси. Вăл е ку грамматика формипе хăçан, мĕн е кам çинчен, мĕнле лару-тăрура калаçнă чух усă курмалла — ачасен çакна питĕ лайăх ăнланса илмелле, пĕлмелле, çавăнпа грамматика материалĕпе ĕçленĕ чух правило-ориентирсем тăвассине тимлемелле. Правило-ориентир тăвасси, тĕслĕхрен, çапла пулма пултарать: 7-мĕшпе 8-мĕш уроксенче ачасем пĕр-пĕринпе хутшăнса 6-мĕш хăнăхтарури материала тишкереççĕ, правило-ориентир тăваççĕ, тунă правилăна сасăлаççĕ. Учитель вĕсене пулăшать. **Правило-ориентир тĕслĕхĕ:** чтобы показать порядок следования предметов при их счете (или сказать о том, который по счету предмет) по-чувашски, надо к слову, обозначающему число, присоединить аффикс ***-мĕш*****: пĕрремĕш, вуннăмĕш**. У этого аффикса нет твердого варианта.

Чĕлхе материалне вĕрентес ĕçре усă курмалли хатĕрсен шутне фишкăсем, схемăсем, модельсем, таблицăсем кĕреççĕ. Вĕсен тĕслĕхĕсене вĕренӳ пособийĕнче панă. Схемăсемпе модельсене, правилăсене таблица е слайдсен пуххи евĕр туса хатĕрлесен аван. Ĕçре тĕрев схемăсемпе усă курни çичĕ-сакăр çулхи ачасен психикин уйрăмлăхĕсемпе килĕшсе тăрать. Ку çулхи ачасемшĕн уроксенче сăмахпа каланине илтни çеç çителĕксĕр. Туйăм-сисĕм органĕсем вĕренӳ ĕçне мĕн чухлĕ ытларах хутшăнаççĕ, çавăн чухлĕ ачасем материала лайăхрах ăнланаççĕ те, асра та хăвараççĕ.

Иккĕмĕш класра тимлемелли тепĕр ĕç — ачасене чăваш сăмахĕсенче пусăм лартма вĕрентесси. Пусăм лартма пĕлни уйрăмах чăвашла вуланă чух питех те кирлĕ. Сăмахсенче пусăм тĕрĕс лартмасан вуланине пачах та ăнланма май çук. Пусăм правилисемпе ĕçлетпĕр пулин те, ачасене пулăшас тĕллевпе вĕренӳ кĕнекинче сăмахсем тăррине пусăм лартсах панă. Иккĕмĕш класра ачасем тин кăна вулама хăнăхса пыраççĕ-ха, вулавпа, пусăм лартассипе çыхăннă пур ĕçе те хăвăрт тăваймаççĕ. Çакă вара урок пахалăхне чакарма, ытти пуплев ĕçĕ-хĕлне аталантарассине чăрмантарма пултарать. Унсăр пуçне пирĕн ачасене вĕренӳ пособийĕнчи текстсене кăна мар, ача-пăча валли çырнă кĕнекесене те, чăвашла тухса тăракан хаçат-журнала та вулама хăнăхтармалла, апла пулсан ачасене чăваш чĕлхинчи пусăм йĕркипе паллаштармаллах.

Çакна шута илсе ачасене чăваш алфавичĕпе паллаштарнă, уçă сасăсене тата вĕсен сас паллийĕсене вĕрентнĕ хыççăн пусăм лартмалли правилăсемпе ĕçлеме палăртнă, мĕншĕн тесен ку правилăсене ăнланасси пĕтĕмпех уçă сасăсене тата вĕсен сас паллийĕсене пĕлнипе çыхăннă. Çакна каласа хăвармалла: пусăм лартмалли правилăсемпе ачасене пĕр урокра паллаштарма палăртнă, мĕншĕн тесен вĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарса вĕрентме меллĕ. Вĕренӳ пособийĕнче пусăм лартмалли правилăсене алгоритм евĕр панă. Ачасем унпа усă курса хăйсем правилăсем тăваççĕ, малалла вара кашни урокрах пусăм лартма вĕренсе пыраççĕ. Вĕренӳ пособийĕнче çак тĕллеве пурнăçлама ятарласа хатĕрленĕ хăнăхтарусемпе ĕçсем те пур, анчах вĕсем сахал тата кашни урок валлиех çук, апла пулсан вĕрентекенсен хăйсен хушма ĕçсем хатĕрлемелле. Кашни урокрах словарь ĕçĕ ирттернĕ чух пусăм лартма вĕрентес тĕллеве те пурнăçламалла.

Чăваш чĕлхине хутшăну хатĕрĕ тăвас тĕллевпе вĕрентетпĕр пулсан, вырăсла калаçакан ачасен чăвашла калаçас хăнăхăвне аталантарса-çирĕплетсе пырасси уроксенче тĕп вырăнта тăмалла, мĕншĕн тесен çынсем ытларах кулленхи пурнăçра калаçса хутшăнаççĕ. Урокри ытти ĕçсем: тăнласси, каласси, çырасси, чĕлхе материалĕпе паллаштарасси, унпа пуплеве йĕркеленĕ чух усă курма вĕрентесси — пĕтĕмпех калаçма вĕрентессине пулăшса пымалла.

Ачасене калаçма вĕрентес ĕçе уроксенче программăра кăтартнă уйрăм темăсемпе пуплев саманчĕсем (ситуацийĕсем) йĕркелесе пурнăçламалла. Меслетлĕх кăтартăвĕсенче авторсем май пур таран пуплев саманчĕсен тĕслĕхĕсене çырса кăтартма тăрăшнă, вĕренӳ пособийĕнчи ĕçсемпе хăнăхтарусем те вĕрентекенсене çак ĕçре пулăшма тивĕç, анчах та вĕрентекенсем ку ĕçе хăйсем майлă та йĕркелеме пултараççĕ.

Чăвашла ирĕклĕн калаçас тесен ачан вĕреннĕ сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене хăвăрт аса илме, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарса предложенисем йĕркелеме, предложенисене кирлĕ интонаципе тата хăвăртлăхпа калама пĕлмелле. Çакă калаçма вĕрентесси чĕлхе материалĕпе ĕçлессипе тачă çыхăнса пулса пынине, чĕлхе материалне пĕлни калаçăвăн лингвистика никĕсĕ пулнине кăтартса парать. Чăнах та ĕнтĕ, чĕлхери сасăсене тĕрĕс калама пĕлмесен, пĕлекен сăмахсен, сăмах майлашăвĕсен йышĕ пысăк пулмасан, сăмахсене пĕр-пĕринпе çыхăнтармалли мелсене (аффикссене, хыçсăмахсене т.ыт.те) пĕлмесен калаçу çуралаймасть. Апла пулсан, уроксенче калаçу темисемпе шайлашуллăн ачасене хăйсен пуплевне йĕркелеме кирлĕ чĕлхе материалĕпе паллаштарсах пымалла.

Иккĕмĕш класс ачисем хăйсен пурнăçĕнче пулса иртни, хăйсем вуласа пĕлни, курни-илтни çинчен каласа пама е пĕр-пĕр япалана, ĕçе е пулăма сăнласа пама вĕренеççĕ. Çапла майпа вĕсен пуплевĕ монолог шайĕнче аталанать. Монолог йĕркелеме вĕрентесси ачасене предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнтарма вĕрентессипе, урăхла каласан, шухăша текст туса уçса пама хăнăхтарассипе çыхăннă. Малтанхи тапхăрта çакă, паллах, калав шайĕнче çеç пулса пырать. Каярах вара калава сăнлав тата уйлав (рассуждение) элеменчĕсене те кĕртмелле. Ачасене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн кăткăсрах та кăткăсрах текстсем туса калаçма вĕрентсе пымалла.

Диалог формипе калаçасси иккĕмĕш класра ытларах ыйту-хурав евĕрлĕ пулса пырать, ачасем уроксенче вĕрентекенпе, пĕр-пĕринпе калаçаççĕ. Çак ĕçе пурнăçлама вĕсен ыйтусене чăвашла тĕрĕс йĕркелеме, пĕр-пĕрне итлеме, пĕр-пĕрин пуплевне тăнлама пултармалла. Диалог пĕрлĕхĕнчи предложенисем пĕр-пĕринпе çыхăннă, çавăнпа та уроксенче вĕренекенсене калаçăва пуçлакан çыннăн пуплевĕнчен кирлĕ сăмахсене уйăрса илме, хуравланă чух çав сăмахсемпе ырăнлă усă курма вĕрентсе-хăнăхтарса пымалла.

Диалог формипе калаçасси ытларах ыйту-хурав евĕрлĕ пулса пырать пулин те уроксенче диалогăн ытти тĕсĕсене аталантарасси çинчен те манмалла мар. Уйрăмах ачасене ыйту-ыйту, пĕлтерӳ-ыйту, пĕлтерӳ-пĕлтерӳ евĕрлĕ диалогсем йĕркелеме вĕрентмелле. Вĕренӳ пособийĕнче диалогăн çак тĕсĕсене аталантармалли ĕçсем пур. Вĕсене уйрăм паллăпа (икĕ ача пек) палăртнă. Вĕрентекенсем хăйсем те тĕрлĕ мелсемпе усă курса хушма хăнăхтарусем йĕркелеме пултараççĕ. Ачасене уйрăмах вăйă евĕр хăнăхтарусем килĕшеççĕ. Вăйăсем выляса ачасем пĕр-пĕринпе чăвашла хутшăнма хăнăхаççĕ.

Калаçу — аудированипе тачă çыхăннă ĕç. Пĕр-пĕринпе калаçас-хутшăнас тесен пĕр-пĕрне итлеме, илтме, ăнланма пĕлмелле. Тĕслĕхрен, ыйтнине ăнланмасан калаçăва малалла тăсма май çук. Ачасен ыйтнине çирĕплетсе те, хирĕçлесе те хуравлама пултармалла, савăнса е хурланса калаçма пĕлмелле.

Уроксенче калаçупа аудировани хăнăхăвĕсене пĕрле, пĕр çыхăнура, пĕр темăсемпех аталантарса пымалла. Ачасем урокра пĕр темăпах калаçчăр, вулаччăр, кирлĕ пулсан çырччăр та.

Пуплеве тăнласа ăнланма, чĕлхери сасăсене илтме, уйăрса илме пултарни, сăмахсене пĕлни, грамматика формисемпе синтаксис конструкцийĕсен пĕлтерĕшне ăнланни кирлĕ. Чи кирли вара — сăмахсен, сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене пĕлни, кирлĕ чухне вĕсене хăвăрт аса илме пултарни. Урăхла каласан,

чӗлхе материалне пӗлмесӗр пуплеве итлесе ӑнланма май ҫук. Сӑмах майӑн каласан, итлесси-тӑнласси пуплев пӗрлӗхӗсемпе ӗҫленинчен пуҫланать те ӗнтӗ, ҫавӑнпа та авторсем вӗренӳ кӗнекинче ачасемшӗн ҫывӑх калаҫу темисемпе ятарласа хатӗрленӗ тӑнламалли текстсем панӑ. Кашни урок пуҫламӑшӗнчех пӗчӗк сӑвӑ е сӑвӑ сыпӑкӗ пур. Вӗсенчен чылайӑшне аудировани хӑнӑхӑвне аталантарас, ҫак ӗҫӗн шайне тӗрӗслес тӗллевпе панӑ. Вӗрентекенсем, паллах, хӑйсем те урок темипе килӗшӳллӗн хушма ӗҫсем хатӗрлеме пултараҫҫӗ.

Вӗренӳ пособийӗнчи текстсене йывӑрлӑх тӗлӗшӗнчен виҫӗ ушкӑна уйӑрма пулать:

1) **ҫӑмӑллисем** (ку текстсене ачасен чӗлхе пӗлӗвне шута илсе авторсем хӑйсем хатӗрленӗ, ҫавӑнпа вӗсенче ачасем пӗлмен материал пачах ҫук);

2) **вӑтаммисем** (авторсем хӑйсем хатӗрленӗ е илемлӗ литературӑран илсе ҫӑмӑллатнӑ, ачасем пӗлмен грамматика формисем ҫук, анчах пӗлмен сӑмахсен шучӗ 2—3 % яхӑн);

3) **йывӑррисем** (грамматика никӗсӗ кӑткӑсрах, вӗренмен сӑмахсен шучӗ 10—15 % яхӑн, илемлӗ литературӑран илнӗ текстсем).

Текстсене авторсем вӗренӳ пособине тӗллевлӗ кӗртнӗ, кашни текстпа мӗнле ӗҫлемеллине тӗплӗ ҫырса панӑ. Вӗрентекенсен урока хатӗрленнӗ чухне сӗннӗ ӗҫсемпе тӗплӗ паллашмалла, ӗҫе йӗркелеме кирлӗ мелсене палӑртмалла.

Иккӗмӗш класра вӗренекен ачасене чӑвашла ҫырма ятарласа хатӗрленӗ икӗ тетрадьпе ӗҫленӗ май вӗрентмелле. Тетрадьсенчи ӗҫсене авторсем вӗренӳ пособийӗнчи материалпа килӗшӳллӗн хатӗрленӗ. Ку ӗҫсем вӗреннӗ материала ҫирӗплетме, ачасен пӗлӗвӗн, хӑнӑхӑвӗсемпе ӑслайӗсен шайне тӗрӗслесе хаклама май параҫҫӗ.

Тетрадьсенчи ӗҫсене пурнӑҫланӑ май ачасен тӗрлӗ енлӗ пултарулӑхӗ те аталанать, тавракурӑмӗ те анлӑланать. Чи пахи вара — харпӑр хӑй ӗҫне хаклама вӗренни-хӑнӑхни. Кашни урок валлиех тетрадьсенче хаклав таблици пур. Вӗсемпе ӗҫлесе ачасем хӑйсен урокри тӗп ӗҫӗсене хӑйсемех хаклама хӑнӑхса пыраҫҫӗ. Паллах, ачасен ӗҫне вӗрентекен те хаклать, ашшӗ-амӑшӗ те килте хаклама пултарать, анчах та ачасене хӑйсен ӗҫ-пуҫне асӑрхасасӑнаса пыма вӗрентни хальхи вӑхӑтра питех те кирлӗ ӗҫ шутланать. Малтанхи вӑхӑтра вӗрентекенсен урок вӗҫӗнче хаклав таблиципе ӗҫлемешкӗн пӗр 5 минута яхӑн уйӑрмалла, каярах ку ӗҫе кӑштах хӑвӑртрах та туса ирттерме юрать.

## 2-мĕш класс *(102 сехет)*

**Тема: Сывă-и, шкул? Сывă-и, ачасем! Вĕреннине аса илетпĕр, вулама-çырма вĕренетпĕр, хăнăхатпăр** *(14 сехет).*

1-мĕш класра вĕреннĕ пуплев материалне аса илесси.

**[Ă], [ĕ], [ç], [ӳ]** сасăсемпе, вĕсене палăртакан **Ăă, Ĕĕ, Çç, Ӳӳ** сас паллисемпе ĕçлесси. **Ă, ĕ, ç, ӳ** сас паллиллĕ сăмахсене вулама, çырма хăнăхасси. Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсен системине аса илесси.

Сăмахсенчи уçă тата хупă сасăсене уйăрма хăнăхасси.

Сасăсен килĕшĕвне пăхăнса (çемçен е хыттăн) вулама хăнăхасси.

**В** сас паллипе пĕтекен сăмахсене вулама вĕренесси.

Икĕ уçă сасă хушшинчи хупă сасă янăраса илтĕнни, ăна çырура янăраман хупă сассăн паллипе палăртасси. Çавăн йышши сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма хăнăхасси.

Кăтарту наклоненийĕн хальхи вăхăт формисемпе пуплевре усă курма хăнăхасси.

Çитĕннĕ çынсене хисеплесе вĕсемпе калаçнă чух **Эсир, Сире, Сирĕн** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Япалана, япала паллине, ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрма хăнăхасси. Вĕсен схемисемпе усă курса предложенисем йĕркелесси. Панă предложенисен схемисем патне тĕслĕхсем тупасси.

Сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе вуласси, çырасси.

Ӳкерчĕке сăнласа паракан текста суйласа илесси.

Текст тăрăх ыйтусем парасси, вĕсене хуравласси.

**Тема: Кĕрхи кунсем** *(7 сехет).*

Чăвашла вулав вăрттăнлăхĕсене шута илсе вулама хăнăхасси. Чăваш алфавичĕпе паллашасси, ăна вырăс алфавичĕпе танлаштарасси, сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма вĕренесси. Уçă сасă, хупă сасă, хытă хупă сасă, çемçе хупă сасă терминсемпе паллашасси, пуплевре усă курасси. Пусăм правилисемпе паллашасси, вĕсемпе усă курса сăмахсене тĕрĕс вуласси. **Манăн, санăн, унăн** сăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле пуплевре усă курасси. **Ăçта?** ыйтăва хуравлама, хуравланă чух **çине, çинче, патне, патĕнче, умне, умĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

«Шкул», «Пӳлĕм», «Килти чĕр чунсем», «Çуллахи ĕçсем», «Апат-çимĕç», «Пахча çимĕçĕ» темăсемпе 4—5 ансат предложени туса каласа пама хăнăхасси. Чăвашларан вырăсла куçарма вĕренесси.

**Тема: Кун йĕрки** *(11 сехет).*

**Ă, ĕ, ӳ, ç** сас паллиллĕ сăмахсене сасăсен килĕшĕвне пăхăнса вулас хăнăхăва малалла аталантарасси.

Çемçе, вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсем, **е, ю, я** сас паллиллĕ сăмахсем. Вĕсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

Икĕ уçă сасса тата ялан янравлă хупă сасăпа уçă сасса пĕлтерекен сас паллисем хушшинчи хупă сасса пĕлтерекен сас паллине янăратса  вулама, ăна çырура тĕрĕс палăртма хăнăхасси.

Чăваш алфавичĕпе усă курма вĕренесси.

Пусăм правилисемпе усă курма вĕренесси.

Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен сăпатланăвĕпе, хисеп тăрăх улшăннипе, вĕсен пурлă тата çуклă формисемпе паллашасси.

Кăтарту наклоненийĕнчи хальхи вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри глаголсемпе пуплевре усă курасси.

Япала ячĕн камăнлăх формисемпе пуплевре усă курма вĕренесси.

Япаласене ушкăнлама хăнăхасси, пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене астуса юласси.

**«Ку манăн (санăн, унăн, Сашăн) + яп.я.»** йышши пуплев ĕлки. Çак ĕлкепе усă курса ачасене предложенисем тума хăнăхтарасси. Т ĕ с л ĕ х р е н: Ку санăн кĕнекӳ-и? — Ку манăн кĕнеке. Саша, мана кĕнеке пар-ха. — Акă санăн кĕнекӳ. Ку Сашăн кĕнеки.

**Ăçта?** ыйтăва хуравлама хăнăхасси. **«Яп.я. + çине (çинче, умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче)»** пуплев ĕлкипе усă курса предложенисем тума вĕренесси.

Т ĕ с л ĕ х р е н:

1. — Илемпи, кĕнекене сĕтел çине хур.
   — *Эпĕ кĕнекене сĕтел çине хуратăп.*
   — Илемпи, сĕтел çинче кĕнеке пур-и?
   — *Сĕтел çинче кĕнеке пур.*
2. — Вова, доска умне тух.
   — *Эпĕ доска умне тухатăп.*
   — Вова ăçта тăрать?
   — *Вова доска умĕнче тăрать.*

Кун каçа мĕн ĕçлени çинчен 4—5 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси, юлташсемпе калаçма хăнăхасси.

**Тархасшăн** йышши сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

**Т е м а: Ăстасен çĕршывĕнче** *(15 сехет).*

Чăвашла вулавăн вăрттăнлăхĕсене (маларах вĕреннисене) астуса юлнине, вулама тата çырма пĕлнине малалла аталантарасси.

Чăваш чĕлхинчи пусăм (ударени) системипе усă курса пусăм тĕрĕс лартма вĕренесси.

***-Çă(-çĕ)*** аффикс хушса çĕнĕ сăмахсем тума вĕренесси, вĕсемпе предложенисем тăвасси.

**Тĕрĕ — тĕрлет — тĕрĕçĕ** йышши сăмахсем хушшинчи çыхăнăва уçса парасси.

**Çине, çинче, умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе предложенисем тума хăнăхасси.

Ĕçе пĕлтерекен сăмахсене тĕрлĕ сăпатра лартса предложенисем тума вĕренесси. Предложенири сăмахсен йĕркине аса илесси.

Япала ячĕн камăнлăх формисемпе усă курма хăнăхасси.

Чăваш тумĕпе, тĕррипе паллашасси.

Сăмахсене ушкăнлама хăнăхасси.

Чăвашларан вырăсла куçарасси.

Сăмахсенчен предложенисем йĕркелеме вĕренесси.

Предложенисенчен текст тăвасси. Тĕрлĕ профессипе ĕçлекен çынсем çинчен 4—5 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси.

**Тема: Юратнă тăван çĕршывăм** *(6 сехет).*

Янăраса илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсене аса илесси.

Япала ячĕсене камăнлăх формине, глаголсене çуклă формăна лартма хăнăхасси.

Пĕрешкел тата хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Хирĕçленине **ан** татăкпа усă курса палăртма вĕренесси.

Чăваш вăййисемпе паллашасси.

Юлташ çинчен каласа пама хăнăхасси.

Тантăш патне çыру çырма вĕренесси.

**Тема: Çĕнĕ çула хатĕрленетпĕр** *(6 сехет).*

Вулав хăнăхăвне аталантарасси. Пусăм тĕрĕс лартма хăнăхасси.

**Валли, хыççăн** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Çынна пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисемпе усă курасси. Тĕрлĕ вăхăтри глаголсене пуплеве кĕртесси.

Саламлă çыру çырма вĕренесси.

Çĕнĕ çула хатĕрленни çинчен ансат предложенисемпе каласа пама вĕренесси.

Вырăсларан чăвашла куçарасси.

**Тема: Хĕл çитрĕ** *(14 сехет).*

Вулав тата çыру хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси.

**[Йĕ], [йă], [йӳ]** сасă çыхăнăвĕсем пур сăмахсене тĕрĕс каламa, вулама-çырма хăнăхасси.

Юнашар тăракан икĕ пĕр пек хупă сас паллине вăрăммăн вулама вĕренесси **(пĕррехинче, таврăннă, параппан, аллă)**.

*-Çă(-çĕ)* аффикссемпе сăмахсем тума хăнăхасси.

Камăнлăх формисенчи япала ячĕсемпе предложенисем тăвасси. Тĕслĕхрен:

— Валя, Ленăн кам пур?

*— Ленăн ашшĕ, амăшĕ, аслашшĕ, асламăшĕ пур.*

**Ăçта?** (куда? где?), **мĕнпе?** ыйтури сăмахсемпе предложенисем тума вĕренесси.

Хĕл çинчен, юлташ çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕренесси.

Пĕрре иртнĕ (курса иртнĕ) вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕпе, пурлă тата çуклă формисемпе паллашасси.

Хĕллехи каникулта мĕн туни çинчен каласа пама вĕренесси.

**Тема: «Шутлама вĕренетпĕр»** *(5 сехет).*

Чăвашла 100 таран шутлама вĕренесси, вĕсене япала ячĕсемпе юнашар тăнă чух тĕрĕс калама вĕренесси, хисеп ячĕсен кĕске формипе хăçан усă курнине ăнланса илесси.

**Миçе тенкĕ тăрать?** ыйтăва хуравлама вĕренесси.

**Вуннă тата виççĕ миçе пулать? — Вуннă тата виççĕ вун виççĕ пулать** йышши пуплев пĕрлĕхĕсене вĕренесси.

Пушă вăхăтра мĕн туни çинчен 5—6 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси.

**Тема: Пирĕн çемье** *(8 сехет).*

**Мĕн кирлĕ, кил кунта** йышши сăмах çыхăнăвĕсенче иккĕмĕш сăмах пуçламăшĕнчи хупă сасса янăратса калама, сас паллине тĕрĕс вулама хăнăхасси.

Сăмахра юнашар тăракан икĕ пĕр пек сас паллине вăрăммăн каласа тĕрĕс вуласси **(анне, атте, лайăххи)**.

Пусăм тĕрĕс лартса вулама хăнăхасси.

Камăнлăх формине йышăннă япала ячĕсемпе пуплевре анлăрах усă курасси.

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупма хăнăхасси, вĕсене пуплеве кĕртесси **(ватă — çамрăк, пысăк — пĕчĕк)**.

***-Çăм(-çĕм)*** аффикссем хушса **аннеçĕм, аппаçăм** йышши сăмахсем тăвасси.

Хушу наклоненийĕнчи глаголсемпе пуплевре усă курма вĕренесси.

Эрнери кун ячĕсене аса илесси.

**Чи лайăххи** йышши пĕрлешӳсемпе предложенисем йĕркелесси.

Çемье, çемьери çынсем çинчен ансат предложенисемпе каласа пама вĕренесси. Саламлă çыру çырма вĕренесси.

**Тема: Çуркунне** *(7 сехет).*

Сăмахсене пусăм тĕрĕс лартса вуласси.

Янравлă хупă сасăллă, **[нч], [лч]** сасăллă сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе пуплевре усă курма вĕренесси. Çурхи уйăхсен ячĕсене астуса юласси.

**Ăçта?** ыйтăва хуравлама хăнăхасси. Хальхи, пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсене, иртнĕ причастисене пуплеве кĕртесси.

**Умне, умĕнче, çине, çинче, патне, патĕнче** сăмахсемпе предложенисем тăвасси.

Сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе çырасси.

**Тема: Çулла** *(6 сехет).*

Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсене аса илесси.

Йывăç, чечек, вĕçен кайăк, пулă ячĕсемпе пуплеври усă курма хăнăхасси.

Сăмахсене ушкăнлама вĕренесси.

**Мĕнле?** ыйтури сăмахсемпе усă курасси. Пулас вăхăтри глаголсене пуплеве кĕртесси.

Чăвашла вуланине вырăсла калама хăнăхасси.

Вырăсларан чăвашла куçарасси.

Панă предложенисенчен текст йĕркелеме вĕренесси.

Калаçу, тăнлу, вулав тата çыру хăнăхăвĕсене аталантарасси.

**Тема: Çулталăк вăхăчĕсем. Вĕреннине аса илсе тĕрĕслер** *(3 сехет).*

**Хăш вăхăт? Миçемĕш?** ыйтусене хуравлама вĕренесси.

Çулталăк вăхăчĕ çинчен каласа пама вĕренесси.

Вĕреннине аса илесси. Тĕрлĕ вăхăтри глаголсемпе усă курасси.

Пуплев хăнăхăвĕсене тĕрĕслесси. Ачасем тĕрĕс, ăнланса вулама, пăхса çырса илме пĕлнине тĕрĕслесси.

# УРОКСЕМ

## 1—2-мĕш уроксем

## Тема: Шкула

***Урок тĕллевĕ:*** вĕренӳ кĕнекипе, кĕнекери геройсемпе паллаштарасси, чăвашла вулав правилисене пăхăнса вулама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕренӳ пособийĕпе, пособире йышăннă паллăсемпе паллаштарасси; 2) пĕрремĕш класра вĕреннĕ вулав правилисене аса илтересси, вĕсене пăхăнса вулама хăнăхтарасси; 3) **в** сас паллипе вĕҫленекен сăмахсене вулама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **паян, уяв, пулать, авăн уйăхĕ, пуҫланать, пĕрремĕшĕ.**

***Грамматика материалĕ:*** чăваш чĕлхинче **в** сас палли сăмах вĕҫĕнче те янравлă сасăсене пĕлтерни.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

а) Вĕрентекенпе ачасем пĕр-пĕрне сывлăх сунаҫҫĕ.

— Ырă кун пултăр, ачасем! (Сывлăх сунатăп, ачасем!)

— *Ырă кун пултăр!* (Сывлăх сунатпăр!)

ă) Пĕр-пĕрне сывлăх сунаҫҫĕ.

— *Ырă кун пултăр, Лена!*

— *Ырă кун пултăр, Паша!*

**2. Вĕренӳ пособийĕпе, ҫыру тетрачĕсемпе паллашни.**

Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕнчи ĕҫсем ҫинчен калаҫмалла (ачасем чăвашла ăнланмасан вырăсла калаҫма юрать).

— Ачасем, пĕлтĕр эпир чăваш чĕлхи вĕренме тытăнтăмăр. Уроксенче вылярăмăр, юрларăмăр, ташларăмăр, сăвăсем каларăмăр. Эсир нумай чăваш сăмахĕ вĕрентĕр. Вĕсене манса каймарăр-и? Мĕнле сăмахсем астăватăр? Калăр-ха. (Ачасем астуса юлнă чăваш сăмахĕсене калаҫҫĕ.) Эсир халĕ чăвашла сывлăх сунма, паллашма, пĕр-пĕрин ҫинчен ыйтса пĕлме, чĕр чунсем, теттесем, юлташсемпе тăвансем ҫинчен каласа пама, чăвашла вулама тата ҫырма пĕлетĕр. 2-мĕш класра эпир чăвашла вулама, ҫырма малалла вĕренĕпĕр, тата та нумай ҫĕнĕ сăмахпа паллашăпăр,

чăвашла тата лайăхрах калаçма вĕренĕпĕр. Чăвашла вĕренме пире кăçал çак кĕнекепе тетрадьсем пулăшĕç.

Вĕрентӳçĕ малтан «Чăваш чĕлхи» кĕнекене алла илсе уçса кăтартать, унтан кашнине кĕнеке валеçсе парать, ачасем ăна пăхаççĕ. Ачасем авторсен сăмахĕсене вулаççĕ, кĕнекери паллăсемпе паллашаççĕ, вĕсем мĕне пĕлтернине ăнланаççĕ, кĕнекери геройсене — Анюкпа Ванюка, Сергей Сергеевича — сывлăх сунаççĕ. Кайран вара ĕç тетрачĕсемпе паллашаççĕ.

**3. Пĕрремĕш класра вĕреннине аса илни.**

а) Анюкпа Ванюк (пуканесем) ачасемпе калаçаççĕ.

— Эсĕ мĕн ятлă?

— *Эпĕ Саша ятлă.* (Эпĕ Лена, ... ятлă.)

— Эсĕ Катя ятлă-и?

— *Çапла, эпĕ Катя ятлă.* (Çук, эпĕ Катя ятлă мар, эпĕ Оля ятлă.)

— Эсĕ Ваня-и?

— *Çук, эпĕ Миша.*

Ачасене хăйсем мĕн ятлине тĕрлĕ формăра калаттармалла. Вĕрентӳçĕ (Анюкпа Ванюк ролĕсенче) ачасене ыйтусем парать, ачасем ыйтăва хуравлаççĕ.

ă) Вĕренӳ хатĕрĕсен чăвашла ячĕсене аса илеççĕ.

Вĕрентекен ачасене класри япаласене, вĕренӳ хатĕрĕсене кăтартать, ачасем вĕсен чăвашла ячĕсене калаççĕ, предложенисем тăваççĕ.

**4. Кĕнекепе ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Вĕрентекен сăвва вуласа парать, ачасем сăвăра мĕн çинчен каланине вырăсла калаççĕ (аудировани ĕçĕ).

ă) 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

3-мĕш ĕçе пурнăçласа вулав правилисене аса илеççĕ. Вĕрентекен малтан фишкăсем мĕне пĕлтернине ыйтать. Ачасем икшерĕн ĕçлесе схемăсене «вулаççĕ», унтан вĕрентекен схемăсене ăнлантарса пама ыйтать.

б) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

5-мĕш ĕçе тетрадьре пурнăçлаççĕ.

**Кану саманчĕ. «Пытанмалла выляни» вăйă.**

— Эпир пĕрремĕш класра тĕрлĕ вăйă выляма вĕреннĕччĕ. Атьăр-ха чăвашла калаçса выляр. Вылянă май эсир **çапла, çук** сăмахсемпе усă курма тăрăшăр.

Вĕрентӳçĕ ачасене мĕнле вăйă выляссине калать, ертӳçине палăртать. Ертсе пыраканĕ — Паша. (Кайран Паша рольне ытти ачасем выляççĕ.) Паша çаврăнса тăрать. Çав вăхăтра учитель хушнипе пĕр ача пытанать.

— *Паша, кам çук?* — ыйтаççĕ ачасем.

— *Миша çук,* — тет Паша.

— *Çапла, Миша çук,* — теççĕ ачасем.

Малалла ертӳçи Миша пулать. Вăйă малалла тăсăлать.

Вылянă май ачасем канаççĕ кăна мар, **çук, çапла** сăмахсемпе усă курма та хăнăхаççĕ.

Асăрхаттарни: кану саманчĕсене кашни урокрах чăвашла калаçса ирттермелле.

в) 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Вĕрентекен сăмахсеневаскамасăр, юлашки сассине уйăрарах вулать. Ачасем ыйтăва хуравлаççĕ, унтан хăйсен хуравне Анюкпа Ванюк тунă пĕтĕмлетӳпе танлаштараççĕ, кайран тепĕр хут **в** сас паллине чăваш сăмахĕсен вĕçĕнче янăратсах вуламаллине çирĕплетсе хăвараççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн Сергей Сергеевич сĕнекен схемăна (7-мĕш ĕç) тишкереççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ.

г) 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Вĕрентекен чăвашла сăмахсене вулать, ачасем куçарăвне вулаççĕ; вĕрентекен вырăсла сăмахсене вулать, ачасем чăвашлисене вулаççĕ, мĕншĕн çапла вуланине ăнлантарса параççĕ, вулав правилисене аса илсе çирĕплетеççĕ; çĕнĕ сăмахсемпе предложенисем тупаççĕ.

д) 9-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Çыру тетрадĕнче панă текстри сăмахсенче йăнăш çырма пултаракан вырăнсене ачасем аялтан йĕр туртса паллă тăваççĕ. Вĕрентекен ачасен ĕçне тĕрĕслет.

ж) 10-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**5. Вĕреннине пĕтĕмлетни.**

а) Доска е экран çинче **уяв, калав, ялав** сăмахсем панă. Ачасем вĕсене вулаççĕ, правилăна çирĕплетеççĕ.

ă) 11-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем малтан пĕр-пĕрне каласа параççĕ, унтан пĕр-икĕ ача доска умĕнче каласа парать.

**6. Киле ĕç пани.**

Ачасен урокра вĕреннĕ материалпа усă курса çемьери çынсене Пĕлӳ уявĕ çинчен чăвашла каласа памалла, ашшĕ-амăшĕн вара ачасен ĕçне хакламалла.

**7. Ĕçе хаклани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçпе усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклать.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

— Сывă пулăр, ачасем!

— *Сывă пулăр!*

# 3-мĕш урок

## Тема: Кĕркунне

***Урок тĕллевĕ:*** кĕркунне çинчен текстсем вулаттарса, калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кĕрхи уйăх ячĕсемпе паллаштарасси; 2) чăвашла тĕрĕс, илемлĕ вулама хăнăхтарасси; 3) кĕркунне çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **юпа уйăхĕ, чӳк уйăхĕ, шăп, пахчара, шăнать, час-часах, ылтăн кĕркунне, хура кĕркунне.**

***Грамматика материалĕ:*** вулав правилисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

— Ырă кун пултăр, ачасем! (Сывлăх сунатăп, ачасем!)

— *Ырă кун пултăр!* (Сывлăх сунатпăр!)

Ачасем пĕр-пĕрне те çакнашкалах сывлăх сунаççĕ.

**2. Пуплев зарядки.**

а) Дежурнăйпа калаçаççĕ.

— Паян кам дежурнăй?

— *Паян эпĕ дежурнăй.*

— Класра кам çук?

— *Класра пурте пур.* (Паян класра Иванов Костя çук.)

— Тавтапуç.

ă) Паянхи çанталăк çинчен калаçаççĕ.

— Паян ăшă-и (сивĕ-и)?

— Хĕвел пăхать-и?

— Çумăр çăвать-и?

— Халĕ кĕркунне-и?

Ачасене вĕсен пĕлӳ шайне кура 4—5 ыйту парса çанталăк çинчен калаçтармалла.

Асăрхаттарни: сывлăх сунни тата пуплев зарядки çакăнта çырса кăтартнă евĕр кашни урокрах пулса пымалла. Урокăн çак тапхăрне малашне кăтартса çеç хăварнă, тĕплĕ çырса паман.

**3. Вĕреннине аса илсе çирĕплетни. Комментариллĕ вулав йĕркелени.**

Доска е экран çинче сăмахсем панă:

| | |
|---|---|
| чечек | илемлĕ |
| шыв | пысăк |
| шкул | таса |

Ачасем малтан сăмахсене вулаççĕ, вулав правилисене аса илсе калаççĕ, унтан сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем малтан учителе итлеççĕ, сăвă мĕн çинчен пулнине калаççĕ (аудировани ĕçĕ). Пĕр хут вуласа пани çителĕксĕр пулсан икĕ хут та вуласа пама юрать. Унтан кĕнекесене уçаççĕ, сăвва илемлĕ вулама, пăхмасăр калама вĕренеççĕ.

ă) Словарь ĕçĕ.

Малтан вĕрентекен чăвашла сăмахсене вулать, ачасем куçарăвĕсене вулаççĕ. Унтан вĕрентекен вырăсла сăмахсене вулать, ачасем чăвашлисене вулаççĕ, мĕншĕн çапла вуланине ăнлантарса, вулав правилисене аса илсе çирĕплетеççĕ. Кайран çĕнĕ сăмахсемпе предложенисем тупаççĕ.

Асăрхаттарни: словарь ĕçне çакăнта çырса кăтартнă евĕр кашни урокрах туса пымалла. Урокăн çак тапхăрне малашне кăтартса çеç хăварнă, тĕплĕ çырса паман.

б) 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**Кану саманчĕ.** Иртнĕ урокра вылянă вăййа выляма юрать.

в) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

г) Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ĕç условине вулаççĕ, кашни йĕркери сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, предложени йĕркелеççĕ, тетрадьре çырса хураççĕ.

д) 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Малтан пĕр-пĕрне, унтан доска умне тухса каласа параççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçпе усă курса ачасем малтан харпăр хăй ĕçне хаклани, унтан вĕсен ĕçне учитель хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

— Сывă пулăр, ачасем!

— *Сывă пулăр!*

Асăрхаттарни: Сывпуллашни кашни урокрах пулмалла.

## 4-мĕш урок

### Тема: Шкулта

***Урок тĕллевĕ:*** шкул çинчен калаçтарса, текстсем вулаттарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ***-лă(-лĕ), -мĕш*** аффикссен пĕлтерĕшне ăнлантарасси, çак аффикссемпе пулнă сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) чăвашла тĕрĕс вулама хăнăхтарасси; 3) глаголсен формисене улăштарса текста çĕнетме вĕрентесси; 4) ыйтăва хуравламалли алгоритмпа паллаштарасси, унпа усă курма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:* ӳнер урокĕ, таврапĕлӳлĕх урокĕ, ĕç урокĕ, туслă, тăрăшса.**

***Грамматика материалĕ:*** ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пĕрремĕш сăпат форми; ***-лă(-лĕ), -мĕш*** аффикссем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, çирĕплетни.**

а) «Хăш ушкăн лайăхрах пĕлет?» вăййă.

Ачасем икĕ ушкăна уйрăлаççĕ. Кашни ушкăнăн «Кĕркунне» темăпа сăмахсем тупса калама тăрăшмалла. Хăш ушкăнĕ нумайрах тупать, çав çĕнтерет.

ă) Кĕрхи уйăхсен ячĕсене аса илеççĕ; хăш уйăх, эрнен хăш кунĕ, миçемĕш число пулнине калаççĕ; çанталăка сăнлаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Учитель малтан хăй вуласа парать, ачасем сăввăн содержанине вырăсла калаççĕ (аудировани ĕçĕ). Унтан ачасем сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ. Пăхмасăр вĕренме сăвва доска çине çырса парсан аван. Малтан сăвва пурте пĕрле вулаççĕ, унтан учитель иккĕмĕш йĕркери **шăппăн** сăмаха хуратать, ачасем сăвва хуратнă сăмаха аса илсе вулаççĕ. Кайран вĕрентекен **урок** сăмаха хуратать, ачасем татах сăвва хуратнă сăмахсене **(шăппăн, урок)** аса илсе вулаççĕ. Учитель тепĕр сăмаха (тĕслĕхрен, **тăрăр** сăмаха) хуратать. Ачасем татах сăвва хуратнă сăмахсене каласа вулаççĕ. Çапла майпа ĕçлесе учитель сăвăри пур сăмаха та хуратать, ачасем кашнинче сăвва хуратнă сăмахсене каласа вулаççĕ, юлашкинчен пăхмасăр вĕренсе çитеççĕ.

ă) 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Вĕрентекен 3-мĕш ĕçри чăвашла сăмахсене вулать, ачасем куçарăвне вулаççĕ. Унтан вăл вырăсла сăмахсене вулать, ачасем чăвашлисене вулаççĕ, мĕншĕн çапла вуланине правилăсемпе ăнлантарса параççĕ. Çĕнĕ сăмахсемпе предложенисем тупаççĕ.

б) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем текста хăйсем тĕллĕн вулаççĕ, ĕçсене пурнăçлаççĕ.

в) 5—7-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

6-мĕш ĕçе пурнăçланă май ачасем вĕрентӳçĕ ертсе пынипе ыйтăва хуравламалли алгоритм туса хатĕрлеççĕ:

— ыйтăва вула;

— ыйту сăмахне туп;

— ыйту сăмахне курав сăмахĕпе улăштарса калуллă предложени ту.

Çак алгоритмпа усă курса хăнăхтарура панă ыйтусене хуравлаççĕ.

7-мĕш ĕçе çыру тетрадĕнче çырса пурнăçлаççĕ.

г) 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Малтан пĕр парта хушшинче ларакансем пĕр-пĕрне каласа параççĕ, кайран 1—2 ача доска умне тухса калать.

**5. Ĕçе пĕтĕмлетни.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Сăмах майлашăвĕсене астуса юлмалла.

**7. Ĕçе хаклани.**

Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 5-мĕш урок

### Тема: Шкулта. Алфавит

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш алфавичĕпе усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) шкул пурнăçĕ çинчен калаçтарасси; 2) сас палли сассăн паллийĕ пулнине аса илтересси; 3) чăваш алфавичĕпе паллаштарасси.

***Лексика материалĕ:*** **сасă, паллă, сас палли.**

***Грамматика материалĕ:*** чăваш алфавичĕ.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни.**

Вĕреннĕ сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, грамматика материалне (хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвне) аса илес, пуплевре çирĕплетес тĕллевпе «Репортер» вăйă выляма юрать. Вăййа учитель пуçлать: пĕр-пĕр ача патне пырать те ăна «Шкулта» темăпа ыйтусем парать. Ача хуравлать. Кайран ку ача «репортер» пулать, теприне ыйтусем парать. Тĕслĕхрен:

— Сывлăх сунатăп, Таня. Эсĕ иккĕмĕш класра вĕренетĕн-и?

— ...

— Сирĕн паян мĕнле уроксем пулаççĕ?

— ...

— Физкультура урокĕнче эсир мĕн тăватăр?

Çапла майпа вăйă малалла тăсăлать, ачасем вĕреннĕ сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхаççĕ, учитель ачасен пĕлĕвĕ-хăнăхăвĕсене тĕрĕслет.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

4-мĕш урокри евĕр ĕçлесе сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

ă) 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

3-мĕш ĕçе малтан сăмахпа каласа, кайран тетрадьре диктант евĕр çырса пурнăçлаççĕ.

б) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

в) Доска (е экран) çинче çак сăмахсене панă: **юпа, авăн, чӳк, уйăх, паян, кĕркунне**. Ачасен сăмахсене алфавит йĕркипе вуламалла, вĕсемпе предложенисем тупмалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 6-мĕш ĕçе, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

Вĕреннĕ сăвва тепĕр хут аса илмелле.

**7. Ĕçе хаклани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 6-мĕш урок

### Тема: Сасă тата сас палли. Шкулта

***Урок тĕллевĕ:*** алфавит тавра ĕçлеттерсе ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш чĕлхинчи сасăсене хак пама вĕрентесси; 2) чăваш алфавичĕпе усă курма хăнăхтарасси; 3) чăваш чĕлхи урокĕ çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **уçă сасă, хупă сасă, хытă хупă сасă, çемçе хупă сасă.**

***Грамматика материалĕ:*** уçă сасăсемпе хупă сасăсем пĕрпĕринпе хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăни (çемçе сыпăксем, сăмахсем; хытă сыпăксем, сăмахсем).

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни.**

а) **Сасă, сас палли** сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнланнине тĕрĕслемелле. Учитель сас паллисем кăтартать, ачасем вĕсем мĕнле сасăсене палăртнине калаççĕ, сас палли сассăн палли пулнине çирĕплетсе хăвараççĕ.

ă) Алфавита аса илсе çирĕплетмелле.

Учитель ачасене сас паллисем валеçсе парать. Ачасем вĕсене

магнитсемпе доска çине алфавит йĕркипе вырнаçтараççĕ. Унтан алфавита пурте пĕрле, кайран пĕрерĕн калаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Сăвăпа ĕçленĕ хыççăн учитель ачасене фишкăсен пĕлтерĕшĕсене аса илтерет: учитель фишка кăтартать, ачасем ку фишка мĕнле сасса пĕлтернине калаççĕ, кĕнекере тупса вулаççĕ. Унтан ӳкерчĕке пăхма, унти сас паллисене тупма, кашни сас паллийĕ мĕнле сасса палăртнине калама сĕнет.

ă) 2-мĕш ĕçе çыру тетрадĕнче пурнăçламалла.

б) 3, 5, 6-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

4-мĕш ĕçе çыру тетрадĕнче çырса пурнăçламалла. Урокра ачасем сăмахсене вулаççĕ, вырăсла куçараççĕ.

**6. Ĕçе хаклани.**

Тетрадьри 3-мĕш ĕçе тăваççĕ, малтан харпăр хăй ĕçне, унтан пĕр-пĕрин ĕçне хаклаççĕ.

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 7—8-мĕш уроксем

### Тема: Урокра

***Урок тĕллевĕ:*** «Урокра», «Кĕр» темăсемпе вĕреннĕ материала аса илсе ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) **миçе? миçемĕш?** ыйтусене хуравлама вĕрентесси; 2) сасăсене хак пама хăнăхтарасси; 3) тĕсе пĕлтерекен сăмахсене аса илсе вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **сăвă, тĕрĕслев ĕçĕ, ыйтать, хуравлать.**

***Грамматика материалĕ:*** шут тата йĕрке хисеп ячĕсем; япалана, унăн паллине, ĕç-хĕле пĕлтерекен сăмахсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннĕ материала аса илсе çирĕплетни.**

Ачасем хăйсем çырнине вуласа параççĕ, пĕр сăмаха фишкăсемпе усă курса сасă тишкерĕвĕ тăваççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Сăвва пăхмасăр калама 4-мĕш урокра çырса кăтартнă пек вĕрентмелле.

ă) 2—6-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Сăвăпа ĕçленĕ хыççăн 3-мĕш ĕçе пурнăçлани вырăнлă. Малалла вара хăнăхтарусемпе ĕçсене кĕнекере панă йĕркепех пурнăçламалла. 6-мĕш ĕçе ачасем ушкăнпа пурнăçлаççĕ: пĕр-пĕринпе хутшăнса материала тишкереççĕ, правило-ориентир тăваççĕ, тунă правилăна ăнлантараççĕ.

Правило-ориентир çапла пулма пултарать: чтобы показать порядок следования предметов при их счете (или сказать по-чувашски о том, который по счету предмет), надо к слову, обозначающему число, присоединить аффикс ***-мĕш:*** **пĕрремĕш, вуннăмĕш**. У этого аффикса нет твердого варианта.

б) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**Кану саманчĕ.**

а) «Шуй» (Улитка) вăййă. Ачасем тăраççĕ. Вĕсем малтан шĕвĕр пӳрнесемпе сывлăшра спираль «çыраççĕ», унтан чавсасене, алăсене, кайран хулпуççисене вылятса спирале пысăклатса пыраççĕ.

ă) «Çур тата тулли уйăх» вăййă. Ачасем тăраççĕ те пуç тăрринче сылтăм алăпа çур çаврака «çыраççĕ». Унтан икĕ алăпа çаврака тăваççĕ. Кайран сулахай алăпа каллех çур çаврака тăваççĕ.

б) 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

8-мĕш ĕçри сăмахсене малтан вулаççĕ, ытлашши сăмаха тупаççĕ, мĕншĕн ытлашши пулнине калаççĕ; унтан сăмахсене тепĕр хут вуласа вырăсла куçараççĕ, предложенисем тăваççĕ; кайран çыру тетрадĕнче çырса хураççĕ.

в) 9-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕç.

**6. Ĕçе пĕтĕмлетни.**

**Миçе?** ыйтури сăмахсенчен **миçемĕш?** ыйтури сăмахсем тума пĕлнине çирĕплетсе хăвармалла, правило-ориентира тепĕр хут каламалла.

**7. Ĕçе хаклани.**

Çыру тетрадĕнчи материалпа усă кураççĕ.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 9—10-мĕш уроксем

### Тема: Пусăм. Урокра

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш чĕлхинчи пусăм правилисене тишкернĕ май ачасене ушкăнпа ĕçлеме, чĕлхе пулăмĕсене тишкерме, пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш чĕлхинчи пусăм правилисене тишкерсе вĕсемпе паллаштарасси; 2) урокра мĕн туни ҫинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **пусăм.**

***Грамматика материалĕ:*** алфавит, чăваш чĕлхинчи пусăм правилисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕҫе тĕрĕслени, вĕреннĕ материала аса илсе ҫирĕплетни.**

а) Сăмахсене астуса юлнине тĕрĕслемелле.

ă) ***-мĕш*** аффикспа пуплевре усă курма пĕлнине аса илсе ҫирĕплетмелле. Учитель шут хисеп ячĕсем калать, ачасем вĕсен ҫумне ***-мĕш*** аффикс хушса йĕрке хисеп ячĕсем тăваҫҫĕ, вĕсемпе предложенисем йĕркелеҫҫĕ.

**4. Ҫĕнĕ материалпа ĕҫлени.**

а) 1-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла, урок темипе паллашмалла.

ă) 2-мĕшпе 4-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла.

Ачасем малтан пĕрремĕш юпари сăмахсене вулаҫҫĕ, ку сăмахсем вырăс чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен тата пусăм лартас енпе пĕрешкел пулнине палăртаҫҫĕ, сăмахсем айĕнчи пĕтĕмлетĕве тишкереҫҫĕ, унпа килĕшеҫҫĕ. Унтан иккĕмĕшпе виҫҫĕмĕш юпари сăмахсене вулаҫҫĕ, куҫараҫҫĕ, тишкереҫҫĕ, ҫак ыйтусене хуравлаҫҫĕ:

**— Мĕнпе уйрăлса тăраҫҫĕ икĕ юпари сăмахсем?**

**— Пĕрремĕш юпари сăмахсенче пусăм хăш сыпăк ҫине ӳкет?**

**— Иккĕмĕш юпари сăмахсенче пусăм хăш сыпăк ҫине ӳкет? Мĕншĕн?**

**— Аялта панă схемăсем мĕне пĕлтереҫҫĕ?**

Ҫапла ĕҫленĕ хыҫҫăн пĕтĕмлетӳсем тăваҫҫĕ, ĕҫ тетрадĕнче схемăсем ӳкереҫҫĕ. Ун хыҫҫăн тăваттăмĕш юпари сăмахсене вулаҫҫĕ, куҫараҫҫĕ, тишкереҫҫĕ, анчах пĕтĕмлетӳ тăваймаҫҫĕ. Учитель ачасене Сергей Сергеевичăн алгоритмĕпе паллашма сĕнет (4-мĕш ĕҫ). Ачасем чăваш сăмахĕсенче пусăм лартмалли правилăсемпе паллашаҫҫĕ.

б) 3-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

Малтан сăмахпа каласа, унтан ĕҫ тетрадĕнче ҫырса пурнăҫлаҫҫĕ. Ҫыриччен 7—8-мĕш уроксенче пурнăҫланă «Шуй» тата «Ҫур тата тулли уйăх» вăйăсене выляни вырăнлă.

в) 5-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

Текста ҫыру тетрадĕнче панă (3-мĕш ĕҫ).

**5. Киле ĕç пани.**

Пусăм правилисене вĕренмелле.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

Ачасем пусăм правилисене тепĕр хут аса илсе калаççĕ, вĕрентӳçĕ панă сăмахсенче пусăм лартаççĕ.

**7. Ĕçе хаклани.**

Çыру тетрачĕпе ĕçлесе хаклаççĕ.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 11—12-мĕш уроксем

### Тема: Уроксем хыççăн

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен кулленхи пурнăçĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) уроксем хыççăн мĕн туни çинчен каласа пама вĕрентесси; 2) алгоритмпа усă курса чăваш сăмахĕсенче пусăм тĕрĕс лартма хăнăхтарасси; 3) чăваш сăмахĕсен пулăвне сăнаттарасси.

***Лексика материалĕ:*** **юмах, савăнтарать, ыран, ăста.**

***Грамматика материалĕ:*** пусăм, сăмахсен пулăвĕ.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Доска е экран çинче маларах вĕреннĕ сăмахсене панă: **чăваш чĕлхи урокĕ, вырăс чĕлхи урокĕ, таврапĕлӳлĕх урокĕ, ӳнер урокĕ, ĕç урокĕ, авăн уйăхĕ, юпа уйăхĕ, чӳк уйăхĕ, пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, вуннăмĕш.**

Ачасем малтан сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, пусăм лартаççĕ, унтан вĕсемпе предложенисем тăваççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Сăвва пăхмасăр калама 4-мĕш урокра çырса кăтартнă йĕркепе вĕренмелле.

ă) 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

Ачасем предложенисем тăваççĕ. Тĕслĕхрен: **Уроксем хыççăн эсĕ ӳнер шкулне каятăн. Эсĕ илемлĕ ӳкеретĕн.**

б) 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

в) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем çырма хатĕрленеççĕ: малтан «Çур тата тулли уйăх» хăнăхтарăва, унтан «Лăпкă хумсем» хăнăхтарăва (алăпа сывлăш-

ра хумлă-хумлă йĕрсем тунă пек кăтартаççĕ) пурнăçлаççĕ. Кайран çыру тетрадĕнчи ĕçе тăваççĕ.

г) 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем 6-мĕш ĕçри сăмахсене куçараççĕ, вĕсен пулăвне сăнаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

7-мĕш ĕçри сăвва малтан учитель, кайран ачасем вулаççĕ. Содержанине ăнланма ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ. Учитель ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ. Т ĕ с л ĕ х р е н:

— Ку кам?

— *Ку Ванюк.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл ташлать.*

Калаçнă хыççăн фонохрестоматипе усă курса юрлама вĕренеççĕ.

Юррăн кĕнекере паман пайĕ (вĕçĕ).

Ĕнтĕ Ванюк хыççăн эпир
Пурте ташша ярăпăр!
Кăвва, кăвва, кăвва, кăвва,
Кăвва, кăвва, тут, тут!
Пĕр вăхăта ташлăпăр та
Кайран ĕçе тыт(ă)нăпăр!
Кăвва, кăвва, кăвва, кăвва,
Кăвва, кăвва, тут, тут!

Юрланă чух тĕрлĕ хускану туни аван.

д) 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла, вĕреннине пĕтĕмлетмелле.

Малтан ушкăнпа ĕçлесе калав тăваççĕ, унтан кашни ушкăн хăйĕн ĕçĕпе паллаштарать.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

Çыру тетрачĕпе усă кураççĕ.

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 13-мĕш урок

### Т е м а: Кун ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** кун ячĕсемпе паллаштарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кун ячĕсемпе паллаштарасси; 2) уроксенче, уроксем хыççăн мĕн туни çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** кун ячĕсем, **эрне, кун, вĕçĕ, шăп.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ формисем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, вĕреннине аса илни.**

а) Ачасем сăмахсене астуса юлнине çапла тĕрĕслеççĕ: пĕр ачи вырăсла сăмахсене калать, тепри чăвашла куçарать. Унтан пĕри чăвашла сăмахсене калать, тепри вырăсла куçарать.

ă) Маларах вĕреннĕ сăвă-юрăсене аса илеççĕ, калаççĕ-юрлаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

3-мĕш ĕçе çыру тетрадĕнче (1-мĕш ĕç) çырса пурнăçлаççĕ, орфограммăсене палăртаççĕ.

ă) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Малтан пĕр парта хушшинче ларакан ачасем кĕнекери тĕслĕхпе усă курса пĕр-пĕринпе калаçма хатĕрленеççĕ, унтан доска умне тухса калаçаççĕ. (Ачасене тетте телефонсем валеçсе парсан аван.)

**5. Киле ĕç пани.**

Канмалли кун мĕн-мĕн тăвасси çинчен каласа пама хатĕрленмелле (4-мĕш ĕçри хушма ĕç).

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 14—15-мĕш уроксем

### Тема: Кĕркунне

***Урок тĕллевĕ:*** «Кĕркунне» темăпа калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) «Кĕркунне» темăпа калаçма кирлĕ çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарасси; 2) ӳкерчĕкпе тата панă текстпа усă курса каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **тăкăнаççĕ, ăшă енне, вĕçлет, вĕçсе каяççĕ, пуçлать, хатĕрленет.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен формисем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

Кун ячĕсене аса илеççĕ, паян мĕн кун пулнине калама вĕренеççĕ.

Асăрхаттарни: малаллахи уроксенче те çак ыйтупа ĕçлемелле.

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

Ачасем хӑйсем вырсарни кун мӗн-мӗн тӑвасси ҫинчен малтан пӗр-пӗрне, унтан доска умне тухса каласа параҫҫӗ. Доска умӗнче чӑвашла каланине итлекенсем вырӑсла куҫараҫҫӗ. Ку ӗҫе вӗрентекен аудированипе калаҫу хӑнӑхӑвӗсене аталантарас тӗллевпе ирттерет.

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

Малтан сӑмахсене учитель вулать, ачасем сӑмахсенчи хупӑ сасӑсем мӗнле илтӗннине тата вӗсене мӗнле сас паллисемпе паллӑ тунине, хӑҫан янраса илтӗннине сӑнаҫҫӗ-палӑртаҫҫӗ, правило-ориентира аса илеҫҫӗ. Унтан сӑмахсене ачасем вулаҫҫӗ, вӗсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ.

ӑ) 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла, темӑна палӑртмалла.

б) 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

в) Ҫыру тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

г) 4-мӗшпе 5-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлас умӗн ачасем текста вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ, ӳкерчӗке сӑнаҫҫӗ. Унтан учитель ыйтусем парать, ачасем хуравлаҫҫӗ.

— Вӑрманта мӗн-мӗн пур?

— Вӑрманта камсем пур?

— Вӗсем мӗн тӑваҫҫӗ?

— Пакша мӗн тӑвать?

— Чӗрӗп мӗн тӑвать?

Ҫапла ӗҫленӗ хыҫҫӑн ачасем текст тӑваҫҫӗ.

**5. Киле ӗҫ пани.**

Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗшпе 3-мӗш ӗҫсене тумалла.

**6. Ӗҫе хаклани.**

**7. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

## 16—17-мӗш уроксем

### Тема: Кун йӗрки

***Урок тӗллевӗ:*** кун йӗрки ҫинчен калаҫтарса ачасен пуплевне пур енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вӑхӑтра тӑвакан ӗҫсем ҫинчен виҫҫӗмӗш сӑпатри пӗрреллӗ хисепри глаголсен формипе каласа пама вӗрентесси; 2) виҫҫӗмӗш сӑпатри глаголсене тӗрӗс ҫырма вӗрентесси; 3) ачасене чӗлхене тишкерме, пӗтӗмлетӳсем тума хӑнӑхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** **ӗҫчен, малтан, кашни, пӑхать, ҫӳрет, унтан, супӑнь, нумай.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсен форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

Калаçăва иртнĕ урокри 4-мĕш ĕç евĕр йĕркелемелле.

**3. Вĕреннине аса илни, çирĕплетни.**

а) Кун ячĕсене аса илмелле.

ă) Доска е экран çинче ачасен урокри ĕçĕсене пĕлтерекен сăмахсене панă. Ачасем вĕсемпе усă курса пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ. Тĕслĕхрен: **Саша, эсĕ музыка урокĕнче юрлатăн-и? — Эпĕ музыка урокĕнче юрлатăп.**

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Сăвва пăхмасăр калама 4-мĕш урокра çырса кăтартнă евĕр вĕренмелле.

ă) 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ: малтан 3-мĕш ĕçри сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, схемăна тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, унтан хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюкăн тата Сергей Сергеевичăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе танлаштараççĕ. Учитель ачасенчен кăвак тата симĕс тăваткалсем мĕне пĕлтернине ыйтать. Ачасем ăнлантараççĕ, унтан правило-ориентир тăваççĕ, ыттисене каласа параççĕ.

Правило-ориентир тĕслĕхĕ: чтобы рассказать о том, что делает в настоящее время мой друг (Ваня, Аня, любимая кошка, ветерок и т.д.), надо к основе слова, обозначающего действие, присоединить ***-ать*** или ***-ет***. К твердой основе присоединяется ***-ать***, а к мягкой — ***-ет***: **Катя тумланать. Çил вĕрет.**

б) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

в) 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене тетрадьре пурнăçламалла.

г) 9-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

10-мĕш ĕçе тетрадьре пурнăçламалла.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсене мĕнле çырмаллине аса илсе çирĕплетсе хăвараççĕ, правилăна калаççĕ.

**7. Харпăр хăй ĕçне хаклани.**

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 18-мĕш урок

## Тема: Кун йĕрки

***Урок тĕллевĕ:*** кун йĕрки çинчен калаçтарса ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтра тăвакан ĕçсем çинчен нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсен формипе усă курса каласа пама вĕрентесси; 2) ку формăри глаголсене тĕрĕс çырма вĕрентесси; 3) ачасен чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхăвĕсене аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** урок темипе хальччен вĕреннĕ сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсен форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Киле панă ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн иртнĕ урокра вĕреннĕ правилăсене аса илеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

ă) 2—4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ: малтан 2-мĕш ĕçри схемăна тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, кайран хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюкăн тата Сергей Сергеевичăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе танлаштараççĕ, правило-ориентир тăваççĕ, каласа параççĕ.

Правило-ориентир тĕслĕхĕ: чтобы рассказать о том, что делают в настоящее время мои друзья, надо к основе слова, обозначающего действие, прибавить ***-аççĕ*** или ***-еççĕ***. К твердой основе присоединяется ***-аççĕ,*** а к мягкой — ***-еççĕ:*** **Ачасем çыраççĕ, ӳкереççĕ.**

б) 5-мĕш ĕçе çырмасăр, 6-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

— Ачасем, хальхи вăхăтра камсем е мĕнсем тăвакан ĕçсем çинчен чăвашла мĕнле каламалла? Схемисене доска çине ӳкерĕр. Тĕслĕхсем тупса çирĕплетĕр.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 19-мĕш урок

### Тема: Пахчари кĕрхи ĕçсем

***Урок тĕллевĕ:*** кĕркунне çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) уçă сасăпа вĕçленекен ĕç-хĕле пĕлтерекен сăмахсене виççĕмĕш сăпат, пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисенче тĕрĕс усă курма вĕрентесси; 2) пусăм правилисене аса илсе çирĕплетесси; 3) вуланă текст содержанине каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **хамăр, çаралаççĕ.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпатри глаголсен формисем.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Киле панă ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн пахча çимĕç, улма-çырла ячĕсене аса илеççĕ. Учитель пахча çимĕç, улма-çырла ӳкерчĕкĕсене пăтраштарса кăтартать, ачасем ячĕсене чăвашла калаççĕ, икĕ ушкăна (улма-çырла, пахча çимĕç) уйăрса çыраççĕ, пусăм лартаççĕ, вуласа параççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

ă) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Пусăм лартаççĕ, илемлĕ вулама вĕренеççĕ, ун хыççăн ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

— Ачасем ăçта?

— Вĕсем мĕн тăваççĕ?

— Çĕр улми мĕнле?

— Кусем мĕнле ачасем?

б) 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ĕçе тетрадьре çырса пурнăçлаççĕ, çырма пĕлеймен вырăнсене сиктерсе хăвараççĕ.

в) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

4-мĕш ĕçе тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

Пĕтĕмлетӳ тĕслĕхĕ: основы некоторых слов, обозначающих действия, оканчиваются на гласные звуки **а** или **е**. При присоединении к основам таких слов аффикса ***-аççĕ(-еççĕ)*** эти гласные выпадают: **вула +** ***аççĕ*** **= вулаççĕ; итле +** ***еççĕ*** **= итлеççĕ.**

5-мĕш ĕçре панă схемăсемпе усă курса тунă пĕтĕмлетĕве тĕрĕслеççĕ.

г) 3-мĕш ĕçре сиктерсе хăварнă вырăнсене тĕрĕс çыраççĕ е йăнăшсене тӳрлетеççĕ.

д) 6-мĕшпе 7-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла.

Урокра ачасем текста вулаҫҫĕ, куҫараҫҫĕ, хушма ĕҫе тетраде ҫырса пурнăҫлаҫҫĕ.

**5. Киле ĕҫ пани.**

7-мĕш ĕҫри текст содержанине чăвашла каласа пама хатĕрленсе килмелле.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

Урокра вĕреннĕ правилăна аса илеҫҫĕ, тĕслĕхсем тупаҫҫĕ.

**7. Ĕҫе хаклани.**

**8. Урока вĕҫлени. Сывпуллашни.**

## 20—21-мĕш уроксем

### Тема: Эпир — ĕҫчен ачасем

***Урок тĕллевĕ:*** уроксем хыҫҫăн мĕн туни ҫинчен пĕрремĕш сăпатра каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) глаголсене хальхи вăхăтра **эпĕ** сăмахпа ҫыхăнтарса усă курма вĕрентесси; 2) пĕрремĕш сăпатри глаголсене тĕрĕс ҫырма вĕрентесси; 3) ачасен чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхăвĕсене аталантарса пырасси.

***Лексика материалĕ:*** **ăс, ăслă, мухтать, калав, уҫăлса ҫӳретĕп, кунсерен, кăмăллатăп, ăсталатăп.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисеприпĕрремĕш сăпатри глаголсен форми.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕҫе тĕрĕслени.**

Киле панă ĕҫе тĕрĕсленĕ хыҫҫăн «Кам тимлĕрех» вăййă выляҫҫĕ. Доска е экран ҫинче предложенисем панă: **Паша ирех тăрат, ҫăвăнать, апат ҫиеть те шкула каят. Шкулта ачасем вулаҫĕ, задачăсем шутлеҫҫĕ, тăрăшса вĕренеҫĕ**. Ачасен юри тунă йăнăшсене тупса тӳрлетмелле. Кам йăнăш нумайрах тупать — ҫав ҫĕнтерет.

**4. Ҫĕнĕ материалпа ĕҫлени.**

а) 2-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

ă) 1-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

Сăвва 4-мĕш урокри пек ĕҫлесе пăхмасăр калама вĕренмелле.

б) 3-мĕш ĕҫе тетрадьре ҫырса пурнăҫламалла, пĕтĕмлетӳ тумалла.

в) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла, правило-ориентир тумалла.

Тĕслĕхрен: чтобы рассказать о том, что я делаю в настоящее время, надо к основе слова, обозначающего действие, прибавить ***-атăп*** или ***-етĕп***. К твердой основе присоединяется ***-атăп***, а к мягкой — ***-етĕп***: **Эпĕ çыратăп, ӳкеретĕп.**

г) 6-мĕш ĕçе çырса пурнăçламалла.

Çырма пĕлмен вырăнсене сиктерсе хăвараççĕ. 7-мĕш ĕçе пурнăçланă хыççăн ку ĕç патне таврăнаççĕ, сиктерсе хăварнисене çыраççĕ.

д) 7-мĕш ĕçе тишкермелле, пĕтĕмлетӳсем тумалла.

е) 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Текста ачасем харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, мĕн ăнланнине вырăсла каласа параççĕ.

ĕ) 10-мĕшпе 11-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

11-мĕш ĕçе пурнăçланă чух ачасем малтан пĕр-пĕрне каласа параççĕ, кайран доска умне тухса калаççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

9-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 22-мĕш урок

### Тема: Пирĕн çемье

***Урок тĕллевĕ:*** харпăр хăй çемйи çинчен **эпир** сăмахпа усă курса каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтра тăвакан ĕçсем çинчен пĕрремĕш сăпатра, нумайлă хисепре (**эпир** сăмахпа çыхăнтарса) каласа пама вĕрентесси; 2) ачасен чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхăвĕсене аталантарса пырасси.

***Лексика материалĕ:*** **сывă, яланах, çитĕнетпĕр, кĕтет, тĕп хула, пурте.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри нумайлă хисепри пĕрремĕш сăпатри глаголсен форми.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Ачасем хăйсен амăшĕсене пулăшни çинчен каласа параççĕ.

ă) Иртнĕ урокра тунă правило-ориентира аса илеççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕшпе 1-мĕш ĕçсене çырмасăр, 3-мĕш ĕçе çырса пурнăçламалла.

ă) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем правило-ориентир тăваççĕ: чтобы рассказать о том, что мы делаем в настоящее время, надо к основе слова, обозначающего действие, прибавить ***-атпăр*** или ***-етпĕр***. К твердой основе присоединяется ***-атпăр***, а к мягкой — ***-етпĕр***: **Эпир чупатпăр, сикетпĕр**.

б) 5-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

в) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Текста ачасем харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, ăнланнине вырăсла каласа параççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

7-мĕш ĕçе тумалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 23—24-мĕш уроксем

### Тема: Манăн юлташсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен кулленхи пурнăçĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтра тăвакан ĕçсем çинчен иккĕмĕш сăпатра, пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре (**эсĕ** тата **эсир** сăмахсемпе çыхăнтарса) каласа пама вĕрентесси; 2) иккĕмĕш сăпатри глаголсене тĕрĕс çырма вĕрентесси; 3) глаголсен хальхи вăхăт формисемпе усă курма хăнăхтарасси; 4) ачасен чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхăвĕсене аталантарса пырасси.

***Лексика материалĕ:*** **васкатăн, Улатăр, ирсерен, пултаруллă, пушă вăхăт.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепри иккĕмĕш сăпатри глаголсен формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Килте хатĕрленĕ калава ачасем малтан пĕр-пĕрне каласа параççĕ, кайран темиçе ача доска умне тухса калать.

ă) Иртнĕ урокра тунă правило-ориентира аса илеççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕшпе 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 3-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла, пĕтĕмлетӳ тумалла.

б) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем малтан сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, унтан икĕ ушкăнри сăмахсене танлаштараççĕ, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине асăрхаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. 5-мĕш ĕçе пурнăçланă хыççăн хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюк пĕтĕмлетĕвĕсемпе танлаштараççĕ.

Унтан правило-ориентирсем тăваççĕ: чтобы мне (или нам) рассказать о том, что ты делаешь в настоящее время (указывает на кого-то), надо к основе слова, обозначающего действие, присоединить ***-атăн*** или ***-етĕн***: **Эсĕ çыратăн, вĕренетĕн**.

Если основы слов-действий оканчиваются на гласные **а** или **е**, то при письме эти гласные выпадают, пишется только гласная в аффиксе (**ташлатăн, ĕçлетĕн)**.

Если основы слов-действий оканчиваются на **й**, то при письме сочетание этого звука с гласной **а (йа)** обозначается буквой **я (каятăн)**. Если основы слов-действий оканчиваются на **у**, то в данной форме вместо этого звука нужно говорить и писать **ăв (тăватăн)**.

Çапла ĕçлесе нумайлă хисеп формипе пуплевре усă курмалли правило-ориентирсем тăваççĕ.

в) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен каласа пама кирлĕ правило-ориентирсене аса илеççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

г) 7—10-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ĕçсене пурнăçланă хыççăн вĕреннине пĕтĕмлетеççĕ.

**5. Вулама пĕлнине тĕрĕслени.**

Учитель ачасене текстсем валеçсе парать. Ачасем вĕсене вулаççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ. Вĕрентекен ачасен вулавне программăра палăртнă хаклав виçисене тĕпе хурса хаклать.

Текстсен тĕсĕсем:

### КĂВАКАЛ

Акă кăвакал. Вăл хăмăр. Кăвакал шывра ишет. Кăвакалăн чĕппи пур. Чĕппи сарă.

### ÇУЛЛА

Çулла ăшă. Сарă хĕвел пăхать. Эпĕ çулла дачăра ĕçлетĕп. Кишĕр ӳстеретĕп, çум çумлатăп, шăваратăп. Çырла пуçтаратăп. Çырла хĕрлĕ, тутлă. Эпĕ çырла юрататăп.

## УЛАЙ

Манăн йытă пур. Вăл Улай ятлă. Вăл ула. Улай манăн тус. Вăл ăслă. Эпир Улайпа вылятпăр.

## ВĂРМАНТА

Маруç, Çемен тата Çеруш вăрманта. Вăрманта кăмпа, çырла нумай. Ачасем кăмпа, çырла пуçтараççĕ. Вăрманта пакшапа чĕрĕп пур. Пакша хăмăр, чĕрĕп сăрă, пĕчĕк. Пакша та, чĕрĕп те кăмпа пуçтараççĕ.

## МĂРМĂР

Пирĕн кушак Мăрмăр ятлă. Мăрмăр хура тĕслĕ, куçĕ симĕс, хӳри шурă. Вăл сĕт, какай, пулă, хăйма юрататъ. Мăрмăрăн çури пур. Вăл пĕчĕк. Эпĕ кушаксене юрататăп, вĕсемпе вылятăп.

## ĔНЕ

Ку ĕне. Вăл хĕрлĕ тĕслĕ. Ĕне сĕт парать. Эпĕ сĕт юрататăп. Ĕнен пăру пур. Пăру курăк çиет.

## УРОКРА

Ачасем урокра. Вĕсем ӳкереççĕ. Саша сарă хĕвел ӳкерет. Миша пысăк пӳрт ӳкерет. Ваня чечек ӳкерет. Таня симĕс вăрман ӳкерет. Маттур ачасем!

## ПӲЛĔМ

Манăн пӳлĕм пур. Вăл пысăк, таса. Пӳлĕмре сĕтел, пукан, диван, кавир, çӳлĕк, телевизор, компьютер пур. Пӳлĕмре пĕр чӳрече. Чӳрече пысăк. Манăн пӳлĕмре кĕнеке нумай.

Эпĕ пӳлĕмре кĕнеке вулатăп, компьютерпа вылятăп, телевизор пăхатăп, çывăратăп.

## ПИРĔН КЛАСС

Акă пирĕн класс. Пирĕн класс пысăк, таса. Класра доска, шкап, çӳлĕк, чӳречесем пур. Доска хура тĕслĕ. Класра виçĕ чӳрече. Чӳречесем пысăк, таса. Эпир класра вĕренетпĕр.

**6. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 25—26-мĕш уроксем

## Тема: Вĕренӳ хатĕрĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** вĕренӳ хатĕрĕсем ҫинчен вĕсем камăн пулнине кăтартса пуплеме вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япала камăн е мĕнĕн пулнине палăртакан аффикссемпе паллаштарасси; 2) япала ячĕсене **манăн, санăн, унăн** сăмахсемпе тĕрĕс ҫыхăнтарма вĕрентесси; 3) ачасен чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхăвĕсене аталантарса пырасси.

***Лексика материалĕ:*** **тĕрĕслетĕп, йĕрке, пилĕк хут.**

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсен камăнлăх категорийĕн пĕрреллĕ хисепри 1, 2, 3-мĕш сăпат формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Ҫĕнĕ материалпа ĕҫлени.**

а) 2, 1, 3, 4-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла, пĕтĕмлетӳсем тумалла.

ă) 5—7-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла.

Ачасем тетрадьре схемăсем ӳкереҫҫĕ, хăйсен схемисене Анюкпа Ванюкăн тата Сергей Сергеевичăн схемисемпе танлаштараҫҫĕ, палăртнă ыйтусене татса параҫҫĕ, правило-ориентирсем тăваҫҫĕ.

б) 8-мĕшпе 9-мĕш ĕҫсене пурнăҫламалла.

**4. Киле ĕҫ пани.**

10-мĕш ĕҫе тетрадьре пурнăҫламалла.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

Урокра тунă правило-ориентирсене тепĕр хут аса илеҫҫĕ, тĕслĕхсемпе ҫирĕплетеҫҫĕ.

**6. Ĕҫе хаклани.**

**7. Урока вĕҫлени. Сывпуллашни.**

# 27-мĕш урок

## Тема: Вĕренӳ хатĕрĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** **ăҫта?** (где?), **ăҫта?** (куда?) ыйтусене хуравлама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) **ăҫта?** ыйтăвăн пĕлтерĕшне тишкерсе ăнлантарасси; 2) **ҫине, ҫинче, умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе усă курса калаҫма вĕрентесси; 3) япала камăн е мĕнĕн пулнине палăртакан аффикссемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **ăҫта? шăтăк, лапам.**

***Грамматика материалӗ:*** **ăçта?** (где?), **ăçта?** (куда?) ыйтусем; япала ячӗсен камăнлăх категорийӗн пӗрреллӗ хисепри 1, 2, 3-мӗш сăпат формисем.

***Урок юхăмӗ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вӗреннине аса илни, киле панă ӗçе тӗрӗслени.**

а) Ачасем килте йӗркелесе çырнă сăмах майлашăвӗсене вуласа параççӗ, мӗншӗн вăл е ку аффикспа усă курнине калаççӗ.

ă) Вӗреннине аса илеççӗ, пуплевре **манăн, санăн, унăн** сăмахсемпе усă курма хăнăхаççӗ: учитель ачасемпе, ачасем пӗр-пӗринпе калаçаççӗ. Тӗслӗхрен, учитель Коля патне пырать те унăн кӗнекине кăтартса ыйтать:

— Коля, ку камăн кӗнеки?

— *Ку манăн кӗнеке,* — тет Коля.

Унтан юнашар ларакан Сашăн ручкине кăтартать те унран ыйтать:

— Саша, ку санăн ручку-и?

— *Çапла, ку манăн ручка.*

Унтан ытти ачасенчен Сашăн ручкине кăтартса ыйтать.

— Ку унăн (Сашăн) ручки-и?

— *Çапла, ку унăн ручки.*

**4. Çӗнӗ материалпа ӗçлени.**

а) 2, 1, 3, 4-мӗш ӗçсене пурнăçламалла, пӗтӗмлетӳсем тумалла.

ă) 5-мӗш ӗçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

б) 6—8-мӗш ӗçсене пурнăçламалла, правило-ориентирсем тумалла.

Тӗслӗхрен: чтобы рассказать о том, что предмет находится на чем-то (где-то), надо использовать слово **çинче: сӗтел çинче, парта çинче**. Чтобы рассказать о том, что предмет находится перед чем-то (где-то), надо использовать слово у**мӗнче: сӗтел умӗнче, парта умӗнче**. Чтобы рассказать о том, что предмет находится между чем-то или кем-то (где-то), надо использовать слово **хушшинче: сӗтел хушшинче, парта хушшинче**. Чтобы рассказать о том, что предмет находится у кого-то или где-то, надо использовать слово **патӗнче: сӗтел патӗнче, парта патӗнче.**

Çакăн пек правилăсем **çине, умне, патне, хушшине** сăмахсемпе усă курма вӗрентес тӗллевпе те тумалла.

в) Тетрадьри 2-мӗш ӗçе пурнăçламалла.

**5. Киле ӗç пани.**

9-мӗш ӗçе тетрадьре пурнăçламалла. Предложенисене чăвашла куçарса çырмалла, схемăсем ӳкермелле.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

Ачасем вĕрентекен хушнă ĕçсене пурнăçлаççĕ.

— Саша, кĕнекене сĕтел çине хур.

— *Эпĕ кĕнекене сĕтел çине хуратăп.* (Саша кĕнекене сĕтел çине хурать, хăй мĕн тунине калать.)

— Кĕнеке ăçта выртать?

— *Кĕнеке сĕтел çинче выртать.*

Ку ĕç хыççăн схемăсемпе ĕçлеççĕ, тепĕр хут правилăсене аса илсе çирĕплетеççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ.

**7. Ĕçе хаклани.**

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 28-мĕш урок

### Тема: Шкула

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен кулленхи пурнăçĕпе çыхăннă материалпа усă курса аудировани, калаçу, вулав, çыру хăнăхăвĕсене аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) **ăçта?** (где?), **ăçта?** (куда?) ыйтусене хуравлама хăнăхтарасси; 2) **çине, çинче, умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** «Шкулта» темăпа çыхăннă халиччен вĕреннĕ сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** **ăçта?** (где?), **ăçта?** (куда?) ыйтусем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни.**

а) Учитель предложенисене вырăсла калать, ачасем — чăвашла: **Оля сидит за партой. Папа идет к телевизору. На столе лежит книга. Положи тетрадь на стол. Лена рассказывает стихотворение у доски. Садись за парту. Выходи к доске. Стой у доски.**

ă) Ачасем ушкăнсене пайланаççĕ. Кашни ушкăн кун йĕркин пĕр вăхăтне (ирхине, шкулта, уроксем хыççăн, каçхине) каласа пама хатĕрленет. Унтан ушкăнран пĕри доска умне тухса каласа парать.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

1—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

**7. Ĕçе хаклани.**

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 29—30-мĕш уроксем

### Тема: Кĕрхи çанталăк

***Урок тĕллевĕ:*** кĕрхи çанталăк çинчен пуплеме хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) халиччен вĕреннĕ пуплев конструкцийĕсемпе усă курма хăнăхтарасси; 2) иккĕн калаçас, мĕн те пулин çинчен каласа парас хăнăхусене аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** **шăнать, саралать, хĕрелет, шуралать.**

***Грамматика материалĕ:*** **ăçта?** (где?), **ăçта?** (куда?) ыйтусем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Маша çинчен каласа параççĕ.

ă) Çырнă текстпа усă курса хăйсем çинчен каласа параççĕ.

б) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

б) 7—9-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Урока пĕтĕмлетни, ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 31-мĕш урок

### Тема: Зоопаркра

***Урок тĕллевĕ:*** зоопаркри чĕр чунсен пурнăçĕпе çыхăннă материалпа усă курса аудировани, калаçу, вулав, çыру хăнăхăвĕсене аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) тискер чĕр чунсен ячĕсемпе паллаштарасси; 2) чĕр чунсем çинчен ыйтусене хуравласа каласа пама хăнăхтарасси; 3) чăвашла текстсене харпăр хăй тĕллĕн вуласа ăнланма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:* тĕве, упăте, арăслан, хир сысни, пăлан, çурçĕр тилли, хыпар хучĕ, çурçĕр, пăхаççĕ, утă,васкăр, пĕлтерет.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глагол формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Ачасем кĕрхи çанталăк, çут çанталăкри улшăнусем çинчен каласа параççĕ.

ă) Вĕреннĕ чĕр чун ячĕсене аса илеççĕ: учитель ӳкерчĕксем кăтартать, ачасем чĕр чун ячĕсене калаççĕ.

б) «Кам чăвашла лайăх пĕлет» вăййă выляççĕ.

Учитель мечĕке ывăтса парать, мечĕк тытаканнин чăваш сăмахĕ каламалла, калаймасан мечĕке юлташне памалла, сăмаха юлташĕн каламалла.

в) Учитель ыйтусем парать, ачасем ыйтусене туллин, темиçе предложенипе хуравлаççĕ, хусканусем туса кăтартаççĕ.

— Эсĕ ирхине мĕн тăватăн?
— Эсĕ шкулта мĕн тăватăн?
— Чăваш чĕлхи урокĕнче мĕн тăватăн?
— Вырăс чĕлхи урокĕнче мĕн тăватăн?
— Физкультура урокĕнче мĕн тăватăн?
— Музыка урокĕнче мĕн тăватăн?
— Математика урокĕнче мĕн тăватăн?

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Малтан пĕр парта хушшинче ларакан ачасем пĕр-пĕрне каласа параççĕ, кайран пурте уйрăм ачасен калавне итлеççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

Тетрадьри 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 32—33-мĕш уроксем

### Тема: Зоопаркра

***Урок тĕллевĕ:*** чĕр чунсем çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен хирĕçлесе калама вĕрентесси; 2) чĕр чунсен тата вĕсен çурисен ячĕсене

аса илсе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) тишкерӳ, пĕтĕмлетӳ мелĕсемпе усă курма вĕрентесси; 4) хатĕр план тăрăх калав йĕркелеме вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** хальччен вĕреннĕ сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен хирĕçлев формисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Учитель ачасем чĕр чун ячĕсене пĕлнине тĕрĕслет: ӳкерчĕк кăтартать, ачасем чĕр чун ятне чăвашла калаççĕ.

ă) «Вула та çурине туп» вăйă выляççĕ.

Доска çине çак сăмахсене çырмалла: **упа, кушак, йытă, сысна.**

Ачасем чĕр чунсен ячĕсене вулаççĕ, вĕсен çурисене ӳкерчĕксенче тупса кăтартаççĕ, ячĕсене калаççĕ.

б) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Аудировани хăнăхăвĕн шайне тĕрĕсленĕ хыççăн сăвва пăхмасăр калама 4-мĕш урокра çырса кăтартнă пек вĕренмелле.

ă) 2—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

б) 6—9-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Ачасем ĕçе туманнине палăртмалли хатĕрсене шыраса тупса палăртаççĕ, правило-ориентир тăваççĕ: чтобы сообщить о том, что действие не выполняется (не происходит) в данный момент, надо вставить после основы слова-действия аффиксы отрицания ***-мас(-мес)*** или ***-ма(-ме)***.

6-мĕш ĕçри глаголсемпе предложенисем тăваççĕ, правилăна çирĕплетеççĕ.

в) 10-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 34-мĕш урок

### Тема: Фермер ĕçĕ-хĕлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** фермер ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен килĕшсе тата

хирĕçлесе калаçма хăнăхтарасси; 2) чăваш сăмахĕсен пулăвне асăрхама хăнăхтарасси; 3) текста харпăр хăй тĕллĕн вуласа ăнланма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **сăвать, кукка, кĕтӳ, улăх, сĕт ĕçтеретĕп, курăк çитеретĕп, кĕтет, кĕтӳçĕ, хăрать, хăравçă.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен хирĕçлев формисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Ачасем килте тупса çырнă сăмахсене вуласа параççĕ.

ă) Учитель вырăсла сăмахсем калать, ачасем чăвашла куçараççĕ, предложенисем тăваççĕ: **не пишет, не любят, не играем, не боюсь, не читаешь, не танцуете.**

б) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕшпе 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем учительпе пĕрле пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: ĕçе пĕлтерекен сăмахĕ ĕçне пĕлтерет, ***-çă(-çĕ)*** аффикслă сăмахĕ çав ĕçе тăвакана пĕлтерет.

б) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

в) 5-мĕш ĕçе тетрадьре пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 35—36-мĕш уроксем

### Тема: Выльăх пăхакансен ĕçĕ-хĕлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** выльăх пăхакансен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă материалпа усă курса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 2) диалог тата монолог формисемпе калаçас хăнăхусене аталантарасси; 3) вырăсла панă текста чăвашла куçарма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **макăрать, йĕрет, сĕлĕ, çĕмĕрнĕ.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен çирĕплетӳ тата хирĕçлев формисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Килте çырнă предложение вуласа параççĕ.

ă) Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене (фермер, ветеринар, доярка, кĕтӳçĕ, зоотехник) сăнлакан ӳкерчĕксемпе ĕçлеççĕ: учитель ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕшпе 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Предложенисене малтан вуласа куçараççĕ, унтан ачасем икшерĕн ĕçлесе юмаха малалла тăсаççĕ, вĕçлеççĕ, кайран юмаха каласа параççĕ.

б) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

в) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

г) 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ĕçе ушкăнпа пурнăçлаççĕ. Ачасем малтан ӳкерчĕксене сăнаççĕ, унтан текстсене вулаççĕ, кирлĕ текста тупаççĕ, мĕншĕн ку текст вырăнлă пулнине калаççĕ. Кайран ытти ӳкерчĕксенче мĕн курнине каласа пама хатĕрленеççĕ. Учитель ачасене маларахри уроксенчи текстсемпе, предложенисемпе усă курма юрани çинчен пĕлтерет. Юлашкинчен ачасем ӳкерчĕксенче мĕн курни çинчен каласа параççĕ.

д) 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Тетрадьри 3-мĕш ĕçе тумалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 37-мĕш урок

### Тема: Хĕл çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** хĕл, ачасен хĕллехи вăййисем çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пусăм правилисене аса илсе вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси; 2) тумтир ячĕсене аса илесси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) **мĕнпе?** (чем? на чем?) ыйтури сăмахсемпе усă курма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **тăвайкки, пăр.**

***Грамматика материалĕ:*** сăмахри пусăм.

*Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вӗреннине аса илни, киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

а) Доска е экран ҫинчи кроссворда шутлаҫҫӗ. Ачасем черетпе тухса кроссворда чӗр чун ятне ҫыраҫҫӗ те ун ҫинчен каласа параҫҫӗ.

ӑ) «Вӗрентекенпе вӗренекен» вӑйӑ. Вӑййа учитель пуҫлать. Вӑл вӗренекенсене пӗр-пӗр ӗҫ тума хушать. Ачасем хушнӑ ӗҫе тӑваҫҫӗ, мӗн тунине калаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ. Тӗслӗхрен:

— Вова, доска умне тух.

— *Эпӗ доска умне тухатӑп.* (Вова калать те доска умне тухать.)

— Вова ӑҫта тӑрать?

— *Вова доска умӗнче тӑрать.* (Пурте калаҫҫӗ.)

Унтан пӗр-пӗр ача вӗрентекен пулать. **Сӗтел патне, сӗтел патӗнче, парта хушшине, парта хушшинче** сӑмах майлашӑвӗсемпе те ҫакӑн пек ӗҫлеҫҫӗ.

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) 1-мӗшпе 2-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

ӑ) 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

Хушнӑ ӗҫсене тетрадьре ҫырса пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн сӑмахсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ.

б) 4-мӗшпе 5-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

«Хӗлле» текста ачасем харпӑр хӑй тӗллӗн вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ, унтан ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

в) 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**5. Киле ӗҫ пани.**

Ҫыру тетрадӗнчи 3-мӗшпе 4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла (4-мӗш ӗҫ — кӗнекери 6-мӗш ӗҫ).

**6. Ӗҫе хаклани.**

**7. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

## 38—39-мӗш уроксем

### Тема: Хӗлле

***Урок тӗллевӗ:*** ачасене хӑйсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен калаҫтарса пуплеве тӗрлӗ енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хӗллехи уйӑхсен ячӗсемпе паллаштарасси; 2) харпӑр хӑй тӗллӗн вулама хӑнӑхтарасси; 3) ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пама вӗрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **раштав уйăхĕ, кăрлач уйăхĕ, нарăс уйăхĕ, шуратать, çĕр, лапка-лапка, мамăк.**

***Грамматика материалĕ:*** **мĕнпе?** ыйтури сăмахсем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) 3-мĕш ĕçре мĕншĕн **туфли, çумăр, кимĕ** сăмахсем ытлашши пулнине калаççĕ.

ă) Хĕлле мĕн тăхăнни, мĕн туни çинчен каласа параççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Кĕнекери 2-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 1-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

б) Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш, кĕнекери 4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

в) Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш, кĕнекери 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Тетрадьри 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 40-мĕш урок

## Тема: Пирĕн патра хĕл каçакан кайăксем

***Урок тĕллевĕ:*** пирĕн патра хĕл каçакан кайăксем çинчен калаçтарса ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кайăк ячĕсемпе паллаштарасси; 2) чăвашла пуплеве итлесе ăнланас хăнăхăва аталантарасси; 3) вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **чакак, кăсăя, уйăп, çерçи, ула такка, ула курак, чана, кăвакарчăн.**

***Грамматика материалĕ:*** хушу наклоненийĕнчи глаголсен 2-мĕш сăпат форми.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Килте çырса хатĕрленĕ текста вуласа параççĕ.

ă) Кĕрхи тата хĕллехи уйăхсен ячĕсене аса илеççĕ. Доска е

экран çинче уйăх ячĕсене пăтраштарса панă. Ачасем вĕсене йĕркипе лартса вулаççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) Çыру тетрадĕнчи 1—4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

б) 1-мĕш ĕçри ÿкерчĕкпе ĕçлемелле.

Ачасем ÿкерчĕке сăнаççĕ, унта мĕнле кайăксем пуррине, вĕсем мĕн тунине калаççĕ. Учитель кайăксене хĕлле пулăшмалли çинчен каласа хăварать.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 41—42-мĕш уроксем

### Тема: Кайăксене пулăшатпăр

***Урок тĕллевĕ:*** кайăксен хĕллехи пурнăçĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) текста харпăр хăй тĕллĕн вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) пĕр-пĕр кайăка сăнласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **выçă, йывăр, сырăш, кĕрпе, чĕпĕтет, валли.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Кайăк ячĕсене каласа тухаççĕ, предложение вуласа параççĕ.

ă) Апат-çимĕç ячĕсене аса илеççĕ: учитель **çăкăр, пăтă, кукăль, какай** ÿкерчĕкĕсене кăтартать, ачасем сăмахсене чăвашла калаççĕ. Унтан учитель сăмаха чăвашла калать, ачасем ÿкерчĕке кăтартаççĕ.

б) Кайăксене сăнлама кирлĕ сăмахсене аса илеççĕ. Ачасем малтан сăмахсене вырăсла калаççĕ, кайран чăвашла куçараççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Малтан сăвва вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ. Унтан ӳкерчĕкре тата мĕнле кайăксем пуррине, вĕсем мĕн тунине калаççĕ.

б) 2—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

в) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ачасем юпасенчи сăмахсене вулаççĕ, танлаштараççĕ, куçараççĕ, мĕншĕн ыйту палли лартнине ăнланма тăрăшаççĕ. Учитель ачасене çитес урокра ку ыйту патне таврăнасси çинчен пĕлтерет.

**5. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 43-мĕш урок

### Тема: Кайăксене пулăшатпăр

***Урок тĕллевĕ:*** кайăксен хĕллехи пурнăçĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çирĕплетӳ тата хирĕçлев аспекчĕсенчи пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсен пулăвĕпе паллаштарасси; 2) иртнĕ вăхăтра харпăр хăй тунă ĕç-хĕл çинчен каласа пама вĕрентесси; 3) чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхусене малалла аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** кайăксен ячĕсем, хĕле сăнлакан сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Килте çырнă предложенисене вуласа параççĕ.

ă) «Кам нумайрах кайăк ячĕ пĕлет?» вăййă выляççĕ. Хут çине хăйсем пĕлекен кайăк ячĕсене çыраççĕ. Кам чи нумай ят çырать, çав çĕнтерет.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçлаççĕ, правило-ориентир тăваççĕ: чтобы рассказать о тех действиях, которые я совершал в недавнем прошлом, нужно к основе слова, обозначающего действие, присоединить ***-рăм(-рĕм)*** или ***-тăм(-тĕм)***. Если слово оканчи-

вается на **л, н, р,** то присоединяется ***-тăм(-тĕм)***, а если оканчивается на остальные звуки, то присоединяется ***-рăм(-рĕм)***.

Чтобы рассказать о тех действиях, которых я не совершал в недавнем прошлом, нужно вставить между основой слова-действия и аффиксами ***-рăм(-рĕм)*** или ***-тăм(-тĕм)*** аффикс отрицания ***-ма(-ме)***. Например: **кайрăм — каймарăм, çирĕм — çимерĕм**.

б) 7-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Паян шкулта мĕн туни çинчен килтисене каласа памалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 44—45-мĕш уроксем

### Тема: Çĕнĕ çул сывхарать

***Урок тĕллевĕ:*** çывхарса килекен Çĕнĕ çул уявĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çирĕплетӳ тата хирĕçлев аспекчĕсенчи пĕрреллĕ хисеприи иккĕмĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсен пулăвĕпе паллаштарасси; 2) иртнĕ вăхăтра тунă ĕç-хĕл çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 3) чĕлхене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхусене малалла аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** **Хĕл Мучи, Çĕнĕ çул, парне, хутаç, чĕнет, Юр пике, хатĕрлет, илемлетет, тĕрлет, çыхать.**

***Грамматика материалĕ:*** пĕрреллĕ хисепри иккĕмĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Ыйтусене хуравламалла: учитель вырăсла ыйтусем парать, ачасем чăвашла хуравлаççĕ.

— Что ты делал вчера вечером?

— Что ты делал вчера на уроке математики?

— Что ты делал на уроке чувашского языка?

— Что ты делал сегодня утром?

ă) Правило-ориентирсене аса илмелле.

Ачасем хăйсем тин çеç тунă ĕçсем çинчен мĕнле каласа памаллине ăнлантараççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.
ă) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.
б) 3—5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.
в) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.
Иртнĕ урокри пек ĕçлесе правило-ориентир тăваççĕ.
г) 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçламалла, тунă правилăсене çирĕплетмелле.
д) Çыру тетрадĕнчи 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

9-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 46-мĕш урок

### Тема: Çĕнĕ çул парнисем

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕнĕ çула хатĕрленни çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕрреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсен пулăвĕпе паллаштарасси; 2) чĕлхе пулăмĕсене тишкерес, пĕтĕмлетӳсем тăвас хăнăхусене аталантарасси; 3) Çĕнĕ çула хатĕрленни çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **мăйăр, çĕлет, пыл, хутаç.**

***Грамматика материалĕ:*** пĕрреллĕ хисепри виççĕмĕш сăпатри пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

«Карусель» вăйă выляççĕ.

Ачасем икĕ çавракка евĕр хире-хирĕç тăрса тухаççĕ: хĕр ачасем шалти çавракара, арçын ачасем — тул енчи çавракара. Хĕр ачасем арçын ачасем енне çаврăнаççĕ, пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ. Икĕ çавракари ачасен шучĕ пĕр пек пулмалла. Ачасем пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ, калаçаççĕ. Унтан шалти тата тулти çавракасенчи ачасем ылмашăнаççĕ. Тĕслĕхрен: **Эсĕ ĕнер уроксем хыççăн мĕн турăн? Паян ирхине зарядка турăн-и?** т.ыт.те.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 1—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.
ă) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла, правило-ориентир тумалла: что-

бы рассказать о тех действиях, которые кто-то совершал в недавнем прошлом, нужно к основе слова-действия присоединить ***-рĕ(-чĕ)***.

Если основа оканчивается на **л, н, р,** то присоединяется ***-чĕ***, а если основа оканчивается на остальные звуки, то присоединяется ***-рĕ***.

Чтобы рассказать о тех действиях, которых кто-то не совершал в недавнем прошлом, нужно добавить к основе слова-действия аффикс отрицания ***-ма(-ме):*** **кайрĕ — каймарĕ, çирĕ — çимерĕ**.

б) 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçламалла, правило-ориентира тĕрĕслемелле.

в) 9-мĕш ĕçе тетрадьре çырса пурнăçламалла.

**5. Киле ĕç пани.**

Маларах пăхмасăр калама вĕреннĕ сăвăсене аса илмелле, паян урокра вĕреннĕ сăвва пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 47—48-мĕш уроксем

### Тема: Çĕнĕ çул уявĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕнĕ çул уявĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илни, ирттерни çинчен диалог тата монолог формисемпе калаçма вĕрентесси; 2) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) харпăр хăй çитĕнĕвĕсене асăрхас-туяс хăнăхусене аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** **якатать, çывхарать, сыхлать.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ формисем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

а) Иртнĕ урокри пек «Карусель» вăййă выляççĕ.

Тĕслĕхрен: **Эсĕ ĕнер уроксем хыççăн мĕн турăн? Саша математика урокĕнче мĕн турĕ? Санăн аннӳ ирхине апат пĕçерчĕ-и? Паян ирхине зарядка турăн-и?** т.ыт.те.

ă) Çĕнĕ çул çинчен вĕреннĕ сăвăсене аса илеççĕ.

б) Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ, çырма пĕлнине тĕрĕслеççĕ.

**4. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 3, 1, 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Текстсене уйрăм ачасем сасăпа вулаççĕ, учитель ачасем вулама пĕлнине тĕрĕслет.

б) 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

в) Кĕнекери 7-мĕш, тетрадьри 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла, çырма пĕлнине тĕрĕслемелле.

г) 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла, текст тума, çырма пĕлнине тĕрĕслемелле.

Асăрхаттарни: 1-мĕш ĕç тетрачĕн вĕçĕнче панă материалпа ачасен пĕлĕвĕн, хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсен шайне тĕрĕслес тĕллевпе усă курма юрать. Хушма материал пек те усă курма май пур.

**5. Ĕçе хаклани.**

**6. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 49—50-мĕш уроксем

### Тема: Хĕллехи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** вĕренекенсене хăйсен каникулти ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çемьери çынсене пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисемпе паллаштарасси, пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) каникула мĕнле ирттерни çинчен диалог тата монолог формисемпе калаçма вĕрентесси; 3) харпăр хăй çитĕнĕвĕсене асăрхас-туяс хăнăхусене аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** **çиçет, кунĕпе, хăрататать, çил-тăман, юр хырать, кĕтет, пĕррехинче, йĕлтĕр сырать.**

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсен камăнлăх форми.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Çĕнĕ материалпа ĕçлени.**

а) 2-мĕшпе 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

ă) Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Малтан çемьери çынсен ячĕсене каласа тухаççĕ, унтан **[а]** сасă пуррисене çыраççĕ.

б) 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Ушкăнпа ĕçлесе ачасем малтан сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, схемисене тăваççĕ. Унтан 25—26-мĕш уроксенче вĕреннĕ япала

ячӗсен камӑнлӑх формисене аса илеҫҫӗ, хӑнӑхтарури сӑмахсем мӗнпе уйрӑлса тӑнине палӑртаҫҫӗ, учителе пӗлтереҫҫӗ. Учитель ачасем каланине пӗтӗмлетет. Ун хыҫҫӑн ачасем сӑмахсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ.

в) Ҫыру тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

г) 4—6-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

д) Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**4. Киле ӗҫ пани.**

Тетрадьри 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**5. Ӗҫе хаклани.**

**6. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

# 51-мӗш урок

## Тема: Хӗллехи каникулта

***Урок тӗллевӗ:*** вӗренекенсене хӑйсен каникулти ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен калаҫтарса пуплеве тӗрлӗ енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ҫемьери ҫынсене пӗлтерекен сӑмахсен камӑнлӑх формисемпе пуплеври усӑ курма хӑнӑхтарасси; 2) вулав хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси; 3) сӑмахсене ҫыхӑнтарса предложенисем тума вӗрентесси; 4) харпӑр хӑй ҫитӗнӗвӗсене асӑрхас-туяс хӑнӑхусене аталантарасси.

***Лексика материалӗ:*** **ир, ирхине, палӑк, кивӗ, авалхи, вӑрӑм.**

***Грамматика материалӗ:*** япала ячӗсен камӑнлӑх форми.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Сывлӑх сунни.**

**2. Пуплев зарядки.**

**3. Вӗреннине аса илни, киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени**.

а) Ачасем хӑйсен килте хатӗрленӗ тексчӗсене вуласа параҫҫӗ, учитель чи лайӑххине палӑртать.

ӑ) Учитель сӑмах майлашӑвӗсене вырӑсла калать, ачасем чӑвашла калаҫҫӗ, предложени тӑваҫҫӗ: **моя мама, твой папа, Олина бабушка, Пашин дедушка, Димина сестра, мой братик, твоя сестренка.**

**4. Ҫӗнӗ материалпа ӗҫлени.**

а) 1-мӗшпе 2-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

ӑ) Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

б) 3-мӗшпе 4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла.

в) 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла. Ачасем текста тӳрех сасӑпа вуласа куҫараҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ. Хуравӗсене ҫыру тетрадӗнче (2-мӗш ӗҫ) ҫырса хураҫҫӗ.

**5. Киле ĕç пани.**

Каникулта ăçта пулни çинчен каласа пама хатĕрленсе килмелле.

**6. Ĕçе хаклани.**

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 52—53-мĕш уроксем

### Тема: Хĕллехи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** хĕллехи каникула мĕнле ирттерни çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хула ячĕсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсене пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре сăпатлама вĕрентесси; 3) текст тăрăх ыйтусене хуравлама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **Çĕмĕрле, тĕп хула, Мускав, Хусан, Тăван çĕршыв.**

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ вăхăтри нумайлă хисепри глаголсен сăпатланăвĕ.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сывлăх сунни.**

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăвва вулаççĕ, учитель мĕнле ăнланнине тĕрĕслет, ўкерчĕкпе усă курса калаçу ирттерет.

— Арçын ача мĕн тăвать?

— Эсир юр купалатăр-и?

— Хĕр ача мĕн тăвать?

— Юр кĕлеткене мĕнрен тăвать?

**3. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ: пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ, предложенисем тăваççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасене 49—51-мĕш уроксен материалĕсемпе усă курса хатĕрленме вăхăт памалла.

**5. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлесе сăмахсене малалла сăпатлаççĕ, правилăсене (43-мĕш урок) аса илеççĕ.

**6. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсен нумайлă хисепри сăпатланăвĕн схемине тăваççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Эпир | // р, л, н | ***-тăмăр (-тĕмĕр)*** | // | ***-рăмăр (-рĕмĕр)*** |
| Эсир | // р, л, н | ***-тăр (-тĕр)*** | // | ***-рăр (-рĕр)*** |
| Вĕсем | // р, л, н | ***-чĕç*** | // | ***-рĕç*** |

**7. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен схемисене Анюкпа Ванюк схемисемпе танлаштараççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: Чтобы рассказать о действиях, совершенных в недавнем прошлом, к основам на конечные согласные **л, н, р** нужно прибавлять в сочетании со словом эпир аффикс ***-тăмăр(-тĕмĕр***), со словом **эсир** — ***-тăр(-тĕр)***, со словом **вĕсем** — ***-чĕç***; к основам на все остальные согласные и гласные соответственно ***-рăмăр(-рĕмĕр), -рăр(-рĕр), -рĕç***.

**8. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Уйрăм ачасем сăмахсене малтан доска çине çыраççĕ, йăнăш çырасран асăрхаттарса кирлĕ вырăнсене аялтан туртаççĕ, унтан тетраде куçарса çыраççĕ.

**9. 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ачасем пусăм правилисене аса илеççĕ. (Манса кайнă пулсан кĕнекери схемăна (19 с.) пăхмалла.) Унтан сăмахсенче пусăм лартса тухаççĕ, ăнлантараççĕ, сăмахсем айне пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене çыраççĕ.

**10. Тетрадьри 5, 6, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем 4-мĕш ĕçри схемăсем мĕне пĕлтернине ăнлантараççĕ, сăмахсен ыйтăвĕсене калаççĕ, урăх сăмахсем тупса çыраççĕ.

**11. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. (Ыйтусене хуравличчен каласа параканĕ Коля ятлă пулнине пĕлтермелле.)

**12. Çыру тетрадĕнчи 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ыйтусен хуравĕсене малтан текстра тупмалла, вуласа памалла, унтан çырмалла.

**13. Çыру тетрадĕнчи 8-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

Ача пĕлет пулсан «+» паллă, лайăхах пĕлмест пулсан, иккĕленсен — «±» паллă, пĕлмесен «–» паллă çырать.

**14. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**15. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 54—55-мĕш уроксем

### Тема: Хĕллехи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** вĕренекенсене хăйсен каникулти ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçтарса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри пĕрремĕш сăпатри глаголăн çуклă формипе паллаштарасси, унпа пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) хĕллехи çанталăка сăнлама, каникулта мĕн туни çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **вĕçтерет, улать, тăман, кашни.**

***Грамматика материалĕ:*** пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри пĕрремĕш сăпатри глаголăн çуклă форми.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен сăвва васкамасăр, кирлĕ интонаципе вуласа парать. Унтан ачасем словарьпе паллашаççĕ, мĕнле астуса юлнине тĕрĕслеме пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ, сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ. Сăвăри сăмахсемпе усă курса ӳкерчĕкри çанталăка тата паянхи çанталăка сăнлаççĕ. 3-мĕш ĕçе пурнăçласа ачасем чăваш чĕлхинче те вырăс чĕлхинчи пекех сăмахсем тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнине ăнланаççĕ. Пултарайсан — ачасем тĕслĕхсем тупаççĕ: **хур, пăр**.

**2. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Панă тĕслĕхсемпе усă курса ӳкерчĕк тăрăх пĕр-пĕрне тулли ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ, унтан çыхăнуллă калав тăваççĕ.

**3. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕр ача кĕнекери ыйтусене вулать, тепри хуравлать. Хуравласа пĕтерсен ыйту параканни хуравсене хакласа çыру тетрадĕнче иккĕмĕш юпана кирлĕ паллă лартать (çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕç). Хурава хакланă чухне мĕн-мĕн шута илмеллине малтанах калаçса татăлаççĕ: сăмахсене тĕрĕс каласси, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарасси, предложенири сăмахсен йĕрки тĕрĕс пуласси.

**4. Кĕнекери 6, 7, 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

П ĕ т ĕ м л е т ӳ: чтобы рассказать о том, что в недавнем прошлом действие не произошло, надо вставить между основой слова

и аффиксами ***-рӑм(-рӗм), -рӑн(-рӗн), -рӗ, -рӑмӑр(-рӗмӗр), -рӑнӑр(-рӗнӗр), -рӗҫ*** аффикс ***-ма-(-ме-)***.

**5. Кӗнекери 9-мӗш, ҫыру тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.** Ачасене ыйтупа хурав хушшинчи уйрӑмлӑха аса илтермелле: хуравланӑ чух ыйтури **эсӗ** сӑмаха **эпӗ** сӑмахпа тата глагол формине улӑштармалла, предложенири сӑмахсен йӗрки ҫаплипех юлать. Хуравӗсене ҫыру тетрадьне (2-мӗш ӗҫ) ҫырса хураҫҫӗ.

**6. Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗшпе 3-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

3-мӗш ӗҫри ыйту хуравӗсене малтан доска ҫине ҫыраҫҫӗ, йӑнӑш пулма пултаракан вырӑнсене асӑрхаттарса аялтан туртаҫҫӗ, тетраде куҫарса ҫыраҫҫӗ. Унтан доска ҫине ҫырнипе танлаштарса тӗрӗслеҫҫӗ: кашни ача малтан хӑйӗн, унтан юнашар лараканнин ӗҫне хаклать.

**7. Ҫыру тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани, ачасем хӑйсен пӗлӳхӑнӑхӑвӗсене хак пани.**

**8. Киле ӗҫ пани.**

5-мӗш ӗҫри ыйтусене хуравламалла, калав тумалла.

**9. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

## 56-мӗш урок

### Тема: Манӑн тус

***Урок тӗллевӗ:*** туслӑх, юлташсем ҫинчен калаҫтарса ачасен пуплевне тӗрлӗ енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) камӑнлӑх форминчи сӑмахсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси; 2) пӗр-пӗринчен тусӗсем ҫинчен ыйтса пӗлме, пӗр-пӗрне каласа пама хӑнӑхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** **хваттер, ҫурт, хут, миҫемӗш.**

***Грамматика материалӗ:*** япала ячӗн камӑнлӑх форми.

#### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1, 2, 3-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Арҫын ачасем ҫинчен каласа парас умӗн ачасем вӗрентекенӗн ыйтӑвӗсене хуравлаҫҫӗ.

— Арҫын ачасем ӑҫта пурӑнаҫҫӗ? (Хуравланӑ чух ачасем сӑвӑ йӗркисемпе усӑ курма пултараҫҫӗ.)

— *Арҫын ачасем хулара, пӗр урамра пурӑнаҫҫӗ.*

— Вӗсем ӑҫта вӗренеҫҫӗ?

— *Вӗсем пӗр шкулта, пӗр класра вӗренеҫҫӗ.*

— Вӗсем туслӑ-и?

— *Вӗсем туслӑ.*

— Туссем мӗнле пурӑнаҫҫӗ?

— *Туссем пит аван пурӑнаҫҫӗ.*

— Пушӑ вӑхӑтра мӗн тӑваҫҫӗ?

— *Пушӑ вӑхӑтра шахматла выляҫҫӗ.*

Калав тӗсӗ: Арҫын ачасем пӗр хулара, пӗр урамра пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пӗр шкулта, пӗр класра вӗренеҫҫӗ. Арҫын ачасем — туссем. Туссем питӗ аван пурӑнаҫҫӗ, пушӑ вӑхӑтра шахматла выляҫҫӗ.

**2. Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Камӑнлӑх форминчи сӑмахсем мӗнле пулнине калаҫҫӗ. Манса кайнӑ пулсан кӗнекери 25, 26, 49, 50-мӗш уроксене пӑхса аса илеҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 5, 6, 7-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

7-мӗш ӗҫри калава тунӑ чух диалогри хуравсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Калав тӗсӗ: Катя — Ленӑн тусӗ. Вӑл Шупашкарта, Николаев урамӗнче, вуннӑмӗш ҫуртра, пиллӗкмӗш хутра пурӑнать...

**4. Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем сӑмах майлашӑвӗсенчи йӑнӑшсене тупса тӳрлетеҫҫӗ, ӑнлантараҫҫӗ.

**5. Тетрадьри 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем тунӑ предложенисене малтан доска ҫине ҫыраҫҫӗ, йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарса кирлӗ вырӑнсене аялтан туртаҫҫӗ, унтан тетрадьсене куҫарса ҫыраҫҫӗ.

**6. Ҫыру тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Панӑ сӑмахсене кирлӗ формӑра лартса ҫыраҫҫӗ.

**7. Тетрадьри 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани, ачасем хӑйсен пӗлӳхӑнӑхӑвӗсене хаклани.**

**8. Киле ӗҫ пани.**

Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле.

**9. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

## 57-мӗш урок

### Тема: Шутлама вӗренетпӗр

***Урок тӗллевӗ:*** хисеп ячӗсемпе паллашнӑ май ачасен пуплевне тӗрлӗ енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ҫӗр таран теҫеткесемпе шутлама вӗрентесси; 2) япаласен ятне каласа тата каламасӑр шутлама хӑнӑхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** **ҫирӗм, вӑтӑр, хӗрӗх, аллӑ, утмӑл, ҫитмӗл, сакӑр вуннӑ, тӑхӑр вуннӑ, ҫӗр.**

***Грамматика материалӗ:*** шут сӑмахӗсемпе япала ячӗсен ҫыхӑнӑвӗ.

*Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Шут хисепĕсене палăртаççĕ, мĕншĕн икĕ пĕр пек сас палли çырнине ăнлантараççĕ: если при счете предметов слова-предметы не называются, то в названиях чисел пишется удвоенная буква согласного. Если при счете предметов слова-предметы называются, то пишется одна согласная буква.

**2. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем схема мĕне пĕлтернине ăнлантараççĕ: звуки букв **с, ç, п, т, к, х, ш, ч** между двумя гласными слышатся звонко. Схемăна тивĕçтерекен сăмахсене тупса вулаççĕ: **вăтăр, сакăр вуннă, тăхăр вуннă.**

**3. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текста вуланă хыççăн ачасем вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ, хуравĕсене текстра тупса калаççĕ.

**— Анюк каçхине мĕн тăвать? Задача мĕнле? Ванюк мĕн тет? Анюк мĕнле хуравлать? Анюк мĕнле хĕр ача? Вăл мĕн тăвать?**

Текст содержанийĕн тĕсĕ: Каçхине Анюк задача шутлать. Задача йывăр. Ванюк ăна пулăшасшăн. Анюк килĕшмест. Хĕр ача тăрăшать, задачăна шутлать.

Ачасем содержанине каланă чух текстпа усă курма пултараççĕ. Ӳкерчĕк тăрăх калаçу йĕркелеççĕ.

**— Анюкпа Ванюк ăçта лараççĕ? Анюк мĕн тăвать? Ванюк мĕн тăвать? Вăл мĕнле арçын ача? Анюк мĕнле хĕр ача?**

**4. Çыру тетрадĕнчи 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Числосене çырнă чух кĕнекепе усă курма юрать.

**5. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хисеп ячĕсене пĕр ушкăна, çынна пĕлтерекен сăмахсене тепĕр ушкăна уйăрса юпапа çыраççĕ, ăнлантараççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**7. Киле ĕç пани.**

Çĕр таран шутлама вĕренмелле.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 58-мĕш урок

### Тема: Шутлама вĕренетпĕр

***Урок тĕллевĕ:*** шут сăмахĕсене ачасен пуплевне кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕр таран шутлама вĕрентесси; 2) примерсене чăвашла каласа шутлама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **тĕрĕс мар, пурĕ, тӳрлетет, кăларать.**

***Грамматика материалĕ:*** шут сăмахĕсемпе япала ячĕсен ҫыхăнăвĕ.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Вĕрентекен сăвва вулать, ун хыҫҫăн ачасем ҫĕнĕ сăмахсемпе **(тĕрĕс мар, пурĕ, тӳрлетет)** ĕҫлеҫҫĕ, ӳкерчĕкри хур чĕпписене шутлаҫҫĕ, унтан Ырпин, пиччĕшĕн сăмахĕсене тупса вулаҫҫĕ, юлашкинчен сăвва рольсемпе вулаҫҫĕ.

**2. Кĕнекери 3-мĕш, ҫыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Ачасем ыйту хуравĕнче сăмахсен йĕрки ыйтури пекех пулмаллине, ыйту сăмахĕ вырăнне хурав сăмахĕ каламаллине аса илеҫҫĕ те ҫыру тетрадьне ҫырса хураҫҫĕ.

**3. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Ачасем правилăна тӳрех калаймасан 5-мĕш ĕҫ материалĕпе усă курса ҫĕр таран шутлаҫҫĕ, унтан пĕтĕмлетӳ тăваҫҫĕ: чтобы считать до 100, надо знать слова, обозначающие числа-единицы до 10 и числа-десятки, сначала назвать десятки, потом единицы.

**4. Кĕнекери 6-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Ачасем числосене калаймасан правилăна аса илмелле, 5-мĕш ĕҫ материалĕпе усă курмалла.

**5. Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш, ҫыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Шутланă чух «хушать, кăларать» сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантараҫҫĕ. Примерсене ҫыру тетрадьне ҫыраҫҫĕ, унтан тĕслĕхпе усă курса диалог тăваҫҫĕ.

**6. Кĕнекери 9-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Ачасем примерсем тăваҫҫĕ, шутлаҫҫĕ, вĕсене сăмахпа калаҫҫĕ: 10 + 3 = 13, 20 + 3 = 23, ...

**7. Кĕнекери 10-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Ачасем малтан текста вуласа ăнланаҫҫĕ. Унтан вĕрентекен ятне, хисеп ячĕсене улăштарса хăйсен класĕ ҫинчен калав тăваҫҫĕ, вуласа параҫҫĕ.

**8. Ҫыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Ачасем примерсене сăмахпа калаҫҫĕ, ҫырса хураҫҫĕ.

**9. Киле ĕҫ пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, ҫĕр таран шутлама пĕлмелле.

**10. Ҫыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕҫе пурнăҫлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**11. Урока вĕҫлени. Сывпуллашни.**

# 59—60-мĕш уроксем

## Тема: Чӳлмек ăсти

***Урок тĕллевĕ:*** чӳлмекçĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япаласене ячĕсене каласа е каламасăр шутланă чухнехи уйрăмлăха пĕлсе калаçма хăнăхтарасси; 2) хисеп ячĕсене тĕрĕс çырма вĕрентесси; 3) чӳлмекçĕ çинчен калаçма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **тăм, шăхлич, кăкшăм, чӳлмек, чӳлмекçĕ, çамка, çăм, тĕм хура.**

***Грамматика материалĕ:*** шут сăмахĕсемпе япала ячĕсен çыхăнăвĕ.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан **çамка, çăм, тĕм хура** сăмахсен пĕлтерĕшĕсене словарьте тупса вулаççĕ, сăвва вĕрентекен вуланине тимлĕ итлеççĕ, сăвă мĕн çинчен пулнине калаççĕ. Юлашкинчен ачасем сăвăра путеке сăнлакан вырăнсене тупса вулаççĕ, ӳкерчĕк çинчи путеке сăнласа параççĕ.

**2. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсемпе числосене йĕрпе çыхăнтараççĕ.

**3. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем малтан тĕслĕхсене тишкереççĕ, унтан Анюкпа Ванюк ыйтăвне, унтан Сергей Сергеевич хуравне ăнлантараççĕ: при счете предметов от 10 до 100, не называя их, в словах, обозначающих единицы, также пишем две одинаковые согласные буквы и произносим звук долго, когда называем предметы — пишем одну букву, звук произносим кратко и звонко.

**4. Кĕнекери 5-мĕш тата çыру тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ĕçсене пурнăçличчен малтан правилăсене аса илмелле, кĕнекери материалпа усă курмалла.

**5. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем предложенисене малтан доска çине çыраççĕ. Çырнă май правилăсене аса илеççĕ, йăнăш çырма пултаракан вырăнсене аялтан туртса палăртаççĕ, кайран çыру тетрадьне куçарса çыраççĕ.

**6. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан сăмахĕсене вĕрентекен, унтан ачасем вулаççĕ. Ачасем ĕçе икшерĕн икĕ вариантпа тăваççĕ:

1) ӳкерчӗкӗсене хупланӑ, ачасенчен пӗри сӑмахсене вулать, тепри вӗсене вырӑсла калать, унтан ылмашӑнаççӗ;

2) сӑмахсене хупланӑ, ачасенчен пӗри ӳкерчӗкне кӑтартать, тепри сӑмахне чӑвашла калать.

**7. Кӗнекери 6-мӗш ӗçе пурнӑçлани.**

Малтан диалога вӗрентекен вулать, ачасем йӗрлеççӗ, унтан ачасем рольпе вулаççӗ, Миша пичче çинчен каласа пама пулӑшакан предложенисене тупса палӑртаççӗ, вӗсемпе усӑ курса ун çинчен каласа параççӗ.

**8. Кӗнекери 7, 8, 9-мӗш ӗçсене пурнӑçлани.**

8-мӗш ӗçе пурнӑçланӑ чух ачасем кашни схема мӗне (япалана, ӗçе, япала паллине т. ыт. те) пӗлтернине ӑнлантараççӗ.

**9. Çыру тетрадӗнчи 4-мӗш ӗçе çырмасӑр пурнӑçлани.**

Ачасем йӑнӑш тума пултаракан вырӑнсене палӑртса аялтан туртаççӗ, правилисене аса илеççӗ.

**10. Киле ӗç пани.**

Çыру тетрадӗнчи 4-мӗш ӗçе çырса тумалла.

**11. Çыру тетрадӗнчи 6-мӗш ӗçе пурнӑçлани.**

Кашни ача хӑйӗн пӗлӳ-хӑнӑхӑвӗсене хаклать.

**12. Урока вӗçлени. Сывпуллашни.**

## 61—62-мӗш уроксем

### Тема: Чӳлмек ӑсти

***Урок тӗллевӗ:*** чӳлмекçӗн ӗçӗ-хӗлӗ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тӗрлӗ енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) курмасӑр иртнӗ вӑхӑтри ӗçе пӗлтерекен сӑмахсемпе паллаштарасси, вӗсем мӗнле пулнине кӑтартасси, пӗрре (курса) иртнӗ вӑхӑтри ӗçе пӗлтерекен сӑмахсемпе танлаштарасси; 2) текстсене ӗçсен вӑхӑтне кура уйӑрма вӗрентесси.

***Лексика материалӗ:*** **халӑх, авал, кӑмака, хам, хӗртет, ӑсталать, ӑста.**

***Грамматика материалӗ:*** иртнӗ причасти.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗш ӗçе пурнӑçлани.**

Сӑввӑн кашни сӑмахне куçармалла мар, мӗнле ӑнланнине çеç вырӑсла каламалла, ӳкерчӗке сӑнлакан вырӑна тупса вуласа памалла.

**2. Кӗнекери тата çыру тетрадӗнчи 3-мӗш ӗçсене пурнӑçлани.**

Хуравра сӑмахсен йӗрки ыйтӑвӗнчи пекех пулнине, ыйту

сăмахĕ вырăнне çеç кирлĕ сăмах лартмаллине аса илмелле. Çавăнпа хуравĕсене çырнă чух ыйтăвĕсемпе усă курмалла.

**3. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Диалог тĕсĕ:

— Манăн парта çинче кĕнекесем пур.

— Лена, санăн парта çинче миçе кĕнеке?

— Манăн парта çинче икĕ кĕнеке.

Ĕçсене хакланă чух мĕн-мĕн шута илмеллине вĕрентекен палăртать: сăмахсене тĕрĕс калани, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарни, ыйтура тата хуравра сăмахсен йĕрки тĕрĕс пулни, ыйту пама, хуравлама пĕлни.

**4. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи чăвашла тата вырăсла панă сăмах майлашăвĕсене йĕрпе çыхăнтараççĕ.

**5. Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш, çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Пĕрре (курса тата курмасăр) иртнĕ ĕçсем çинчен калакан текстсене вулаççĕ, вырăсла куçараççĕ; пĕрремĕш калаври ĕçсем авал, эпир курма пултарайман вăхăтра пулнине асăрхаççĕ; иккĕмĕш калаври ĕçсем нумай пулмасть, иртнĕ эрнере, пулса иртнине, каласа параканĕ çак ĕçсене хăй те курма пултарнине ăнлантараççĕ; çак пулăмсене мĕнле аффикссемпе палăртнине калаççĕ.

**6. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем Анюкпа Ванюк пĕтĕмлетĕвне ăнлантараççĕ: в первом тексте говорится о прошлых действиях, очевидцем которых говорящий не был. Это показывают слова-действия — **тунă, ăсталанă, хĕртнĕ, илемлетнĕ.** Во втором тексте — о действиях, которые произошли в недавнем прошлом в присутствии говорящего. Об этом говорят следующие слова-действия: **турĕ, ăсталарĕ, хĕртрĕ, илемлетрĕ.**

**7. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕтĕмлетӳ: чтобы рассказать о прошлом действии, очевидцем которого говорящий не был, то в утвердительной форме к основе слова прибавляются аффикс ***-нă(-нĕ)***, в отрицательной форме аффикс ***-ман(-мен)***.

Ытти схемăсене ачасем малтан вĕреннине (41—46, 52—53 уроксем) аса илсе ăнлантараççĕ.

**8. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем** сăмахсемпе çыхăнтарса курса иртнĕ вăхăта тата курмасăр иртнĕ вăхăта лартса çыраççĕ.

**9. Çыру тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене курмасăр иртнĕ вăхăтра çыраççĕ: **Вăл вуланă, çырнă. Вĕсем вуланă, çырнă.**

**10. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем пусăм правилисене (9—10 мĕш уроксем) аса илеççĕ, сăмахсенче пусăм лартаççĕ, пусăмлă сыпăксене палăртаççĕ, вĕсенчен сăмах тăваççĕ, предложенисем çыраççĕ.

Тĕслĕхрен: **тăмран, тăвать, пукане, Лена. Лена тăмран пукане тăвать.**

**11. Çыру тетрадĕнчи 7-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**12. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**13. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 63—64-мĕш уроксем

### Тема: Йывăçпа ĕçлекен ăста

***Урок тĕллевĕ:*** йывăçпа ĕçлекен ăста çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** пĕрре (курса) тата курмасăр иртнĕ вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **кунсерен, йывăçран, ĕмĕт, умра, чылай, ывăс, алтăр, арча, эреш, йывăçпа ĕçлекен ăста.**

***Грамматика материалĕ:*** пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсем; иртнĕ причасти.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

— Сăвва ăнланма словарьти мĕнле сăмахсем пулăшаççĕ? Вĕсене тупăр, вуласа парăр.

Ачасем сăвăри сăмахсене словарьте тупса вулаççĕ, астуса юлма тăрăшаççĕ. Ун хыççăн сăвва тепĕр хут вулаççĕ. Сăвва мĕнле ăнланнине вырăсла калаççĕ. Ӳкерчĕк тăрăх калаçаççĕ, вĕрентекен панă ыйтăва **(Амăшĕ ачине мĕн калать-ши?)** сăвă йĕркисемпе тата хăйсен сăмахĕсемпе усă курса хуравлаççĕ.

Унтан ачасем ӳкерчĕклĕ словарьпе ĕçлеççĕ, ӳкерчĕкĕсене е сăмахĕсене хупласа пĕр-пĕрне мĕнле астуса юлнине тĕрĕслеççĕ.

**2. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

1-мĕш ĕçри сăмахсене малтан доска çине çыраççĕ, йăнăш çырасран кирлĕ вырăнсене аялтан туртса паллă тăваççĕ, унтан тетраде куçарса çыраççĕ.

**3. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш, çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

а) Текстпа ĕçленĕ хыççăн чăвашсем мĕн авалтан йывăçпа ĕçлекен ăстасем пулнине калаççĕ.

ă) Çыру тетрадĕнче ачасем 4-мĕш ĕçри **тунă, çинĕ, ĕçнĕ, илемлетнĕ** сăмахсене юпапа çыраççĕ, вĕсемпе юнашар **турăм, çирĕм, ĕçрĕм, илемлетрĕм** сăмахсене çыраççĕ, аялтан аффиксĕсене туртса паллă тăваççĕ.

**4. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш, çыру тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем тетраде çыраççĕ:

Эпĕ турăм, илемлетрĕм.
Эсĕ турăн, илемлетрĕн.
Эпĕ тунă, илемлетнĕ.
Эсĕ тунă, илемлетнĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Предложенисене мĕнле йĕркепе çырмаллине цифрăсем лартса палăртаççĕ, вуласа параççĕ, унтан çыраççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пурнăçланă чух кĕнекери 4-мĕш ĕçпе усă курмалла, ыйтупредложенире сăмахсен йĕрки хурав-предложенинчи пекех пулнине аса илмелле.

**7. Çыру тетрадĕнчи 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене малтан доска çине çыраççĕ, тĕрĕслеççĕ, унтан тетраде куçараççĕ.

**8. Çыру тетрадĕнчи 8-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**9. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**10. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 65-мĕш урок

### Тема: Тăван çĕршыва сыхлакансен кунĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕршыва хӳтĕлекенсен кунĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем çинчен калама кирлĕ сăмахсемпе ачасен пуплевне пуянлатасси; 2) камăнлăх форминчи япала ячĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **çар, Раççей, çĕршыв, чикĕ, тăван, сыхлать, салтак, хураллать.**

***Грамматика материалĕ:*** камăнлăх форминчи япала ячĕсем.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен вулать, сăвă мĕн çинчен пулнине, ăна пĕлме мĕнле сăмахсем пулăшнине ыйтать. Словарьпе ĕçленĕ хыççăн сăвва тепĕр хут вулаççĕ, ӳкерчĕк тăрăх калаçу ирттереççĕ.

— Ку кам?

— *Ку пограничник.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл тăван çĕре хураллать.*

— Пограничник тăван çĕре ăçта хураллать?

— *Пограничник тăван çĕре хĕвелтухăç чиккинче хураллать.*

— Вăл тăван çĕре хăçан хураллать?

— *Вăл тăван çĕре çулла та, кĕркунне те, хĕлле те, çуркунне те хураллать.*

— Пограничник мĕнле çын?

— *Пограничник хăюллă та маттур çын.*

Ачасем сăвă йĕркисемпе усă курса пограничник çинчен каласа параççĕ.

Калав тĕсĕ: Ку пограничник. Вăл чикĕре тăрать.

Пограничник Тăван çĕршыва хураллать. Вăл хăюллă та маттур çын.

Ачасем пĕр-пĕринчен пиччĕшĕсем çинчен ыйтса пĕлеççĕ:

— *Санăн пиччӳ пур-и?*

— *Вăл мĕн ятлă?*

— *Вăл мĕн тăвать?*

**2. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ĕçсене пурнăçланă чух словарьпе усă курмалла.

**3. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăмахсене доска çине çыраççĕ, вулаççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш, çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

1—4-мĕш ыйтусен хуравĕсене малтан текстра тупса вулаççĕ, унтан çырса илеççĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене кирлĕ формăра тĕрĕс калаймасан кĕнекене уçса пăхаççĕ, пĕр-пĕрин йăнăшĕсене те хăйсемех тӳрлетеççĕ.

**6. Тетрадьри 6-мĕш ĕçе пурнăçлани, кашни хăйĕн пĕлӳ-хăнăхăвĕсене хаклани.**

**7. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 66-мĕш урок

### Тема: Манăн пичче — пограничник

***Урок тĕллевĕ:*** Тăван çĕршыва сыхлакан — пограничник çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Тăван çĕршыва сыхлакансен кунĕпе саламлă çыру çырма вĕрентесси; 2) вуланă текст содержанине каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **Раççей çарĕ, Тăван çĕршыв, чикĕ, сыхлать, салтак, хураллать.**

***Грамматика материалĕ:*** предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ.

*Урок юхăмĕ*

**1. 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ӳкерчĕке сăнлакан йĕркесене сăвăра тупса вулаççĕ.

**2. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кашни ача хăй çырнине доска е экран çине пăхса тĕрĕслет, унтан пĕр-пĕрин ĕçне хаклаççĕ.

**3. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи ĕçе тунă чух ачасем малтан хăйсем тĕллĕн сăмахсене патаксем туртса уйăраççĕ, кирлĕ паллăсене лартаççĕ, пулнă предложенине вулаççĕ, унтан çыраççĕ.

**4. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Малтан кĕнекери, унтан çыру тетрадĕнчи ĕçе тумалла.

**5. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Малтан ачасенчен Толя кам патне çыру çырнине ыйтса пĕлмелле. Унтан вĕрентекенпе ачасем хăйсем çыру çырас пулсан Толя çырăвĕнчен мĕн илме, мĕн хушма пулнине палăртаççĕ, доска çине хушма предложенисем çырса хураççĕ. Çавăн пекех ачасемпе ашшĕне, аслашшĕне, кукашшĕне саламлама кирлĕ предложенисем те палăртсан аван.

Ача хăйĕнчен хушса çырать пулсан ăна унщăн мухтамалла, сăмахсене тĕрĕс çырма иккĕленсен пулăшмалла.

**6. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**7. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳ-хăнăхăвĕсене хаклани.**

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 67-мĕш урок

### Тема: Тĕрĕ ăсти

***Урок тĕллевĕ:*** тĕрĕ ăстисен ĕçĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш тĕррин элеменчĕсемпе паллаштарасси; 2) вĕсене пĕлтерекен сăмахсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) вуланă текст содержанине каласа пама хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **хĕрарăм, тум, хĕр, çĕлет.**

***Грамматика материалĕ:*** предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем кĕнекери 3-мĕш ĕçри сăмахсемпе тата çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçри сăмах майлашăвĕсемпе усă курса предложенисем йĕркелеççĕ.

**2. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан предложени моделĕсенче кашни схеми мĕне пĕлтернине аса илеççĕ. Манса кайнă пулсан йышăннă паллăсене пăхма сĕнмелле. 4-мĕш ĕçри текстпа паллашнă хыççăн ыйту хуравĕсене малтан текстра тупса вулаççĕ, унтан кирлĕ сăмахсене улăштарса тетраде çырса хураççĕ.

**3. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш, çыру тетрадĕнчи 3-мĕш, унтан кĕнекери 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр вĕренмелле, çĕнĕ сăмахсене астуса юлмалла.

**5. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен пĕлӳ-хăнăхăвĕсене хаклаççĕ, класри ачасен умĕнче каласа параççĕ, ыттисем унпа килĕшнипе килĕшменнине тата мĕншĕнне ăнлантараççĕ.

**6. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 68—69-мĕш уроксем

### Тема: Чăваш тумĕ

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш тумĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш тумĕн ячĕсемпе паллаштарасси, вĕсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) курмасăр иртнĕ вăхăтри ĕçе пĕл-

терекен сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) текстпа усă курса ыйтусене хуравлама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:* тухья, шӳлкеме, тевет, масмак.**

***Грамматика материалĕ:*** иртнĕ причасти.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан 2-мĕш, унтан 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ, хĕр ача çинчен калаçаççĕ.

— Хĕр ача мĕн тăхăннă?

*— Хĕр ача кĕпе тăхăннă, шӳлкеме, тевет çакнă, пуçĕнче — тухья.*

— Чăваш тумĕ мĕнле?

*— Чăваш тумĕ илемлĕ.*

— Вăл чăвашла мĕн тума пĕлет?

*— Вăл чăвашла калаçать, вулать, юрлать.*

— Хĕр ача тăван çĕршыва, чăваш çĕршывне юрататъ-и?

*— Хĕр ача тăван çĕршыва, чăваш çĕршывне юрататъ.*

**2. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: слова первого столбика обозначают действия, которые совершаются в настоящее время, а слова второго столбика обозначают действия, которые совершились в прошлом, очевидцем которого говорящий не был.

**3. Кĕнекери 4-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçланă чух кĕнекери 3-мĕш ĕçри сăмахсемпе усă курмалла.

**4. Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текстпа паллашаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

6-мĕш ĕçе тунă чух схемăсем вырăнне лартмалли сăмахсене 5-мĕш ĕçри текстран çырса илеççĕ.

Ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ, хĕр ачапа арçын ачасем çинчен калаçаççĕ, схема мĕне пĕлтернине ăнлантараççĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**6. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Музея каяс умĕн план тумалла.

**7. Киле ĕç пани.**

Чăвашсен авалхи тумтирĕн ячĕсене астуса юлмалла.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 70-мĕш урок

## Тема: Анне — пуринчен те лайăххи

***Урок тĕллевĕ:*** анне çинчен калаçтарса ачасен пуплевне пуренлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çынна лайăх енчен сăнлакан сăмахсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне хушăнакан ***-çăм(-çĕм), -ăм(-ĕм)*** аффикссен пĕлтерĕшне ăнлантарасси, вĕсемпе çĕнĕ сăмахсем тума вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **ытарайми, лайăх, пĕртен-пĕр, чи лайăххи, юратнă, ырă, çепĕç, шырать.**

***Грамматика материалĕ: -çăм(-çĕм), -ăм(-ĕм)*** аффикссем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвăри сăмахсемпе усă курса ӳкерчĕке сăнлаççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Иккĕмĕш юпари сăмахсене пĕрремĕш юпари сăмахсемпе танлаштараççĕ, мĕнле пулнине асăрхаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: если основа слова оканчивается на гласную букву, то к ней добавляется аффикс ***-çăм(-çĕм)***, если на согласную — то аффикс ***-ăм(-ĕм)***. Иккĕмĕш юпари сăмахсене вырăсла куçараççĕ, çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма тăрăшаççĕ: когда мы с любовью и нежно говорим о самых близких людях, тогда к основе данных слов добавляем аффиксы ***-çăм(-çĕм), -ăм(-ĕм)***.

**3. Кĕнекери 3-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçланă чух 1-мĕш ĕç материалĕпе те усă курма пултараççĕ.

**4. Кĕнекери 4-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Тупсăмĕ: **пукане — анне. Анне** сăмаха çыраççĕ.

**5. Кĕнекери 5-мĕш, çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Хуравланă тата çырнă чух ачасене ***-çĕм*** аффикспа усă курма сĕнмелле.

Çырас умĕн вĕрентекен пулăшнипе ачасем кĕнекери хăнăхтарусенче усă курма кирлĕ сăмахсене, предложенисене палăртаççĕ, унтан вĕсемпе усă курса сăмахпа калаççĕ, кайран тин çыраççĕ. Ун хыççăн тĕрĕс çырнине кĕнекепе тĕрĕслеççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**7. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, амăшне каласа памалла. Амăшĕ чăвашла ăнланмасть пулсан вырăсла куçарса памалла. Хĕрарăмсене саламлама открыткăсем илсе килмелле.

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 71—72-мĕш уроксем

### Тема: Хĕрарăмсен кунĕ

***Урок тĕллевĕ:*** хĕрарăмсен кунĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хĕрарăмсен кунĕпе саламлама вĕрентесси; 2) уйăхсен чăвашла ячĕсене пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) текст патне панă ӳкерчĕк тăрăх каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **пуш уйăхĕ, ака уйăхĕ, çу уйăхĕ, тумлать, кăнтăрла, сывлăхлă пул, сăрт.**

***Грамматика материалĕ:*** предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ.

*Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Чăвашла сăвăпа, унăн вырăсла куçарăвĕпе паллашаççĕ. Хăшпĕр сăмахсен пĕлтерĕшĕсене вырăсла тата чăвашла панă сăвă йĕркисене танлаштарса тавçăрса илеççĕ: **кăчкă** — верба, **шăршă** — аромат...

Ӳкерчĕке сăнлакан сăвă йĕркисене тупса вулаççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

1-мĕш ĕçе тунă чухне ачасем çапла ăнлантараççĕ: каждая пара слов имеет общее значение, слова отличаются тем, что одно из них обозначает предмет, другое — действие. Зная значение одного слова из пары, можно определить значение другого.

**3. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем чăвашла уйăх ячĕсене кĕнекери 1, 2, 3, 38, 39-мĕш уроксене пăхса аса илеççĕ, доска çине çырса хураççĕ.

Ĕçсенче тĕл пулакан сăмахсемпе тата сăмах майлашăвĕсемпе усă курса паянхи куна сăнлаççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**Эпĕ** сăмаха **Лена** сăмахпа улăштарсан **анне, асанне** тата ĕçе пĕлтерекен сăмахсем мĕнле улшăннине каламалла, сăмахсен çав формисене доска çине çырса хумалла. Ачасем вуланă чух вĕсемпе усă курма пултарччăр тата астуса юлччăр.

**5. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ӳкерчĕке сăнаççĕ, вĕрентекен панă ыйтусене хуравлаççĕ.

— Ӳкерчĕк çинче камсене куратăр?

— Вĕсем мĕн тăваççĕ?

— Хĕр ача амăшĕ валли мĕн хатĕрленĕ?

— Вăл мĕнле?

— Мĕншĕн илемлĕ? *(Ал шăллине тĕрленĕ...)*

Унтан икшерĕн ĕçлесе ӳкерчĕк тăрăх кам (хĕр ача, арçын ача, ашшĕ) ячĕпе калассине палăртаççĕ, калав тăваççĕ:

— Эпир — эпĕ, пичче тата атте — аннене саламлатпăр. Эпĕ анне валли ал шăлли хатĕрлерĕм. Вăл тĕрĕллĕ, илемлĕ. Пичче...

**6. Кĕнекери 6-мĕш, çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Схемăсем вырăнне çак сăмахсене лартса çыраççĕ: **анне, ĕçлет, вĕрентет, ăслă** (урăх сăмах та юрать), **юрататăп, саламлатăп**.

**7. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

«Çурхи уяв» текстпа усă курса ачасем амăшĕсене саламлама вĕренеççĕ: кашни мĕнле саламлассине калать, салам сăмахĕсене доска çине çыраççĕ, унтан открыткăсем çине илемлĕ куçарса çыраççĕ.

**8. Киле ĕç пани.**

Амăшĕсене саламламалла, чăвашла уйăх ячĕсене астуса юлмалла.

**9. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**10. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 73-мĕш урок

### Тема: Пирĕн çемье

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен çемйи çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) **хăçан?** ыйтăва хуравлама вĕрентесси; 2) вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси; 3) эрнери кунсен ячĕсене аса илтересси; 4) ыйтусемпе усă курса диалог тума вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** кун ячĕсем.

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен тĕрлĕ формисем; **хăçан?** ыйту.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекен **телейлĕ, юрăллă, канлĕ, эреветлĕ, шевлеллĕ, вăйлă** сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнланса илме пулăшас тĕллевпе экран е доска çине сăмахсем çырса парать:

телей — телейлĕ эревет — эреветлĕ
юрă — юрăллă шевле — шевлеллĕ
кан — канлĕ вăй — вăйлă

Ачасем **эревет, шевле** сăмахсемпе пĕрремĕш хут тĕл пулаççĕ, çавăнпа вĕрентекен пĕрремĕш сăмахне вырăсла калать, ачасен иккĕмĕш сăмах пĕлтерĕшне тавçăрса илмелле.

**2. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Эрнери кунсен ячĕсене çырса илнĕ хыççăн ачасем пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, хаклаççĕ.

**3. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**Хăçан?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсемпе ачасем предложенисем тупса калаççĕ.

**4. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекенĕн ачасене пĕр-пĕрне кĕнекери ыйтусене çеç мар, ытти ыйтусене те пама сĕнмелле, уншăн вĕсене мухтамалла.

**5. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан текста пĕр хут вулаççĕ. Унтан текста **эпĕ** сăмах вырăнне **Катя** сăмах лартса вулаççĕ.

Сăмахсен малтанхи тата улшăннă формисене юпапа доска çине çыраççĕ:

пирĕн çемьере — Катьăн çемйинче
атте — ашшĕ
анне — амăшĕ
Таня йăмăк — Таня йăмăкĕ
эпĕ — Катя
вĕренетĕп — вĕренет
пулăшатăп — пулăшать
пуçтаратăп — пуçтарать
шăваратăп — шăварать
шăлатăп — шăлать
çăватăп — çăвать

Ĕçе тума йывăр пулсан кĕнекене (40 с., 85 с.) уçса пăхма сĕнмелле.

Текста улăштарнă хыççăн 2—3 хут вулаççĕ, малтан вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ, унтан текст содержанине каласа параççĕ.

— Катьăн çемйинче миçе çын?
— Ашшĕ ăçта ĕçлет?
— Амăшĕ ăçта ĕçлет?
— Катя миçемĕш класра вĕренет?
— Таня йăмăкĕ миçе çулта?

— Вăл ăçта çӳрет?
— Вырсарни кун Катя мĕн тăвать?

**6. 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем вĕрентекенпе пĕрле ӳкерчĕке сăнаççĕ, каласа пама план тăваççĕ. План, сăмахран, ыйтусенчен тăма пултарать, вĕсене доска çине çырмалла.

1. Ку камăн пӳлĕмĕ?
2. Унта мĕн пур?
3. Катя пӳлĕмĕ мĕнле?
4. Вăл амăшне пулăшать-и?
5. Катя пӳлĕмре мĕн тăвать?

Ачасен ыйтусене текстпа усă курса туллин хуравламалла. Хуравсем çакнашкал пулма пултараççĕ: **пӳлĕмре теттесем пур, вĕсене пуçтарса диван çине лартнă, кантăк умĕнче чечексем, пӳлĕмре таса, тусан шăлнă.**

**7. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

3-мĕш ĕçре панă текстпа усă курса хăйсен çемйи çинчен каласа параççĕ.

**8. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кашни ӳкерчĕкпе уйрăм ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш ӳкерчĕк тăрăх предложенисем тăваççĕ, вĕсене доска çине çыраççĕ, йăнăш çырма пултарнă вырăнсене аялтан туртса палăртаççĕ, тетраде куçараççĕ. Тĕслĕхрен: Ку Катя. Катя амăшне пулăшать. Вăл чечек шăварать. Катя ĕçчен хĕр ача.

Ытти ӳкерчĕксемпе те çавăн пекех ĕçлемелле.

**9. Киле ĕç пани.**

Кун ячĕсене астуса юлмалла, хĕрарăмсене Мартăн 8-мĕшĕпе саламлама открытка илсе килмелле.

**10. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 74—75-мĕш уроксем

### Тема: Манăн кукамайпа асанне

***Урок тĕллевĕ:*** кукамай (асанне) çинчен анлă каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсене вĕрентекен каласа пынă май çырма вĕрентесси; 2) япалана пĕлтерекен сăмахсен ушкăнĕсемпе малалла паллаштарасси; 3) текст содержанийĕ тăрăх ыйтусем парас хăнăхăва аталантарасси.

***Лексика материалĕ:*** тăванлăх сăмахĕсем.

***Грамматика материалĕ:*** предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекен ачасене текстсенче тĕл пулакан кашни çĕнĕ сăмаха вырăсла куçармалла маррине асăрхаттарать. Тĕслĕхрен: **Янра-татпăр ян та ян иксĕмĕр пĕрле паян** предложение шухăшне кура пĕтĕмĕшле куçарсан та çителĕклĕ.

**2. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан сăмахсене ачасем хăйсем тĕллĕн çырса ушкăнлаççĕ. Ачасен ĕçĕсене пăхнă хыççăн вĕрентекен калаçу ирттерет.

— По какому признаку вы сгруппировали слова?

— Сколько групп у вас получилось?

— Какую выберем? Почему?

— Кто правильно выполнил задание?

— Я хочу сгруппировать эти слова, как Миша: 1-я группа — слова, обозначающие членов семьи, 2-я группа — слова, обозначающие профессии людей. Почему? Догадайтесь.

Ачасем тӳрех тавçăрса илеймесен хушма ыйтусем памалла.

Тĕрĕс çырса илччĕр тесе ачасем йăнăш тума пултаракан вырăнсене (вăрăммăн, янраса илтĕнекен сасăсене палăртакан тата чăваш чĕлхинче çеç тĕл пулакан сас паллисене) аялтан туртаççĕ.

**3. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çырас умĕн сăмахсен пĕрпеклĕхне палăртаççĕ: кашни сăмахра икĕ пĕр пек сас палли çырнă. Çырнă хыççăн юнашар ларакannисем пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, хаклаççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**5. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсенчен предложенисем тăваççĕ, доска çине çыраççĕ. Предложенисенчен çыхăнуллă текст тăваççĕ: малтан кашни предложени умне текстри вырăнне палăртма цифрăсем лартса тухаççĕ, унтан текста вулаççĕ, тетраде çыраççĕ.

**6. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кунта кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи текстсемпе усă курма пулать.

**7. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кашни ушкăн асламăшне (кукамăшне) Мартăн 8-мĕшĕпе саламлама текст хатĕрлет. Вĕрентекен ачасене 71—72-мĕш уроксен материалĕпе усă курма сĕнет. Ĕçе вĕçленĕ хыççăн кашни ушкăнран пĕр ача вуласа парать, ачасем чи лайăххине суйласа илеççĕ те доска çине çыраççĕ. Йăнăш тăвасран асăрханса ача-

сем малтан сăмахсенчи хăш-пĕр сас паллисене аялтан туртса палăртаççĕ, унтан тин открыткăсем çине куçараççĕ.

**8. 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**9. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**10. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, хăйсен пĕлӳ-хăнăхăвĕсене хаклани.**

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 76-мĕш урок

## Тема: Çемье

***Урок тĕллевĕ:*** çемье çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) калава сăпатне улăштарса калама хăнăхтарасси; 2) палăртнă темăпа калаçу ситуацине выляса кăтартас хăнăхусене малалла аталантарасси; 3) амăшĕсене çуралнă кунпа саламлама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **лăпкă, сăпка юрри, ыйту, тĕлĕк.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ сăпат формисем, япала ячĕн камăнлăх форми.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва вулаççĕ. Словарьпе ĕçленĕ хыççăн сăвва тепĕр хут вулаççĕ. Вĕрентекен ачасем мĕнле ăнланнине тĕрĕслеме унăн содержанине вырăсла калаттарать.

**2. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасен Миша çинчен каласа памалла. Каланă чух текстри сăмахсем мĕнле улшăннине пĕрле сӳтсе явмалла, доска çине çырмалла: **анне — амăшĕ, йăмăк — йăмăкĕ, пире — Мишăпа йăмăкне.**

**3. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Калаçу тĕсĕ:

— Юратнă ывăлăм! Сывлăх сунатăп.

— Сывлăх сунатăп, анне. Çыру илтĕн-и?

— Коля, тавтапуç çырушăн, çуралнă кунпа саламланăшăн. Эпĕ лайăх пурăнатăп. Сывлăх аван. Аçу та лайăх пурăнать. Унăн сывлăхĕ те аван. Йăмăкупа шăллу шкулта лайăх вĕренеççĕ. Санăн сывлăху мĕнле?

— Сывлăх аван. Ирхине зарядка тăватăп.

— Пушă вăхăтра мĕн тăватăн?

— Пушă вăхăтра юлташсем патне çыру çыратăп, кĕнеке вулатăп.

— Сывă пул, ывăлăм.

— Сывă пул, анне.

**5. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текстри тĕслĕхпе усă курса ачасем амăшĕсене çуралнă кунпа саламлама вĕренеççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем пусăм правилисене аса илеççĕ.

**7. Тетрадьри 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Предложени моделĕнчи кашни схема мĕне пĕлтернине аса илеççĕ.

Панă схемăпа ачасем ыйтусем хатĕрлеççĕ, вĕсене калаççĕ, унтан пĕр-пĕринпе калаçаççĕ. Пĕр ача юлташне ыйту парать, вăл хуравлать те тепĕр ачаран ыйтать.

— *Санăн аннӳ мĕнле? Саша, кала.*

— *Манăн анне ырă. Санăн аннӳ мĕнле?*

**8. Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем 1-мĕш ĕçри сăмахсемпе усă курса предложение малалла тăсаççĕ. Предложенисем хушса çырма та пулать.

**9. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**10. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 77—78-мĕш уроксем

### Тема: Çĕвĕ ăсти

***Урок тĕллевĕ:*** çĕвĕ ăстин ĕçĕ-пуçĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕвĕçĕ çинчен çĕнĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама вĕрентесси; 2) алфавит йĕркипе сăмахсене çырма хăнăхтарасси; 3) янравлă хупă сасса палăртакан сас паллиллĕ сăмахсене уйăрса илме хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **йĕп, çип, хачă, çĕвĕ машини, тӳме, япала, çакать, якатать, тăрăшать, çăвать, тӳме лартать.**

***Грамматика материалĕ:*** янравлă тата янравсăр хупă сасăсем.

## *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва вулаççĕ, ўкерчĕк тăрăх ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ, сăвăри сăмахсемпе усă курса Натали çинчен каласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Кĕнекери сăмахсене е ўкерчĕксене хупласа ачасем пĕр-пĕрне словаре мĕнле астуса юлнине тĕрĕслеççĕ, тетрадьри ўкерчĕкри япаласен ячĕсене калаççĕ, сăмахĕсене кĕнекере тупса вулаççĕ те çыраççĕ. Юлашкинчен хĕр ачана ят параççĕ, вăл мĕн туни çинчен икшерĕн калаçаççĕ: малтан вĕрентекенпе ача, унтан ачасем.

Т ĕ с л ĕ х р е н:

— Ку кам?

— *Ку хĕр ача.*

— Хĕр ача мĕн ятлă?

— *Хĕр ача Лена ятлă.*

— Ленăн мĕн пур?

— *Ленăн çĕвĕ машини, йĕп, хачă, çип, тўме, пукане пур.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл кĕпе çĕлет.*

— Кĕпе кам валли çĕлет?

— *Кĕпе пукане валли çĕлет.*

— Лена мĕнле хĕр ача?

— *Лена ĕçчен хĕр ача.*

**3. Кĕнекери 3-мĕш, тетрадьри 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текста вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтусем парать, хуравсене ачасем текстра тупаççĕ.

— Кам çĕвĕçĕ? Анна аппан мĕн пур? Вăл мĕн тăвать? Анна аппа мĕнле çĕвĕçĕ?

Унтан тетрадьри схемăна ăнлантараççĕ: согласные звуки, обозначаемые в письме буквами **с, ç, п, т, к, х, ш, ч,** между двумя гласными слышатся звонко. Текстран икĕ уçă сасă хушшинчи янраса илтĕнекен хупă сасса палăртакан сас паллиллĕ сăмахсене çырса илеççĕ: **çĕвĕçĕ, хачă, кĕпе, якатать.**

**4. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ачасем вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ, унтан 3-мĕш ĕçĕн тексчĕпе усă курса каласа параççĕ.

**5. Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлесе кашни ўкерчĕк тăрăх тупмалли юмахсем хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрин тупсăмĕсене пĕлеççĕ, чи лайăх тупмалли юмахсене суйласа илеççĕ.

Т ĕ с л ĕ х р е н: **Хĕлле урана тăхăнаççĕ. Ăшă. Мĕн вăл?**

**6. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ыйтусене хуравличчен чăвашла уйăх ячĕсене аса илеççĕ.

**7. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Эрнери кунсен ячĕсене аса илеççĕ.

**8. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

3-мĕш ĕçе пурнăçлас умĕн ачасем чăваш алфавитне (12 с.) аса илеççĕ. Сăмахсене мĕнле йĕркепе çырмаллине цифрăсемпе палăртаççĕ.

**9. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**10. Киле ĕç пани.**

«Пĕчĕк çĕвĕç» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 79-мĕш урок

### Тема: Эпир — ĕçчен ачасем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен кулленхи пурнăçĕ çинчен каласа парса пуплеве тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) юлашки уроксенче вĕреннĕ сăмахсене аса илсе пуплеве кĕртесси; 2) хальхи, пĕрре (курса) тата курмасăр иртнĕ ĕç-хĕле пĕлтерекен сăмахсемпе тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** тĕрлĕ ăстасен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçнă чух усă куракан сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** хальхи, пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсем, иртнĕ причасти.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва вулаççĕ, вĕрентекен ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ.

— Ку кам? Вăл мĕн тăвать? Урине мĕн çăвать? Хĕр ача камăн кĕпине çăвать? Кĕпене мĕнпе çăвать? (Хуравлаймасан сăвăра туптармалла.) Урине мĕнле хĕр ача?

Унтан Урине çинчен каласа параççĕ: **Ку Урине. Вăл пукане кĕпи çăвать. Кĕпене супăньпе çăвать. Урине ĕçчен хĕр ача.**

**2. Кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем **паян** сăмах вырăнне **ыран** сăмах лартсан ĕçе пĕлтерекен сăмахсен формине хальхи вăхăтра лартмаллине палăртаççĕ.

— *Таня, эсĕ ыран мĕн тăватăн?*

— *Эпĕ ал шăлли, кĕпе çăватăп. Унтан якататăп. Эсĕ мĕн тăватăн?*

— *Эпĕ пукане кĕпи çĕлетĕп.*

Ачасене 3-мĕш ĕçĕн ыйтăвĕсемпе хуравĕсем пĕр формăра пулмаллине асăрхаттармалла.

**3. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем текстра **эпĕ** сăмаха **Катя** сăмахпа улăштарсан ĕçе пĕлтерекен сăмахсен аффиксĕ мĕнле улшăннине калаççĕ: **Эпĕ çĕлетĕп, лартатăп, савăнатăп. — Катя çĕлет, лартать, савăнать.**

**4. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем калаçнă чух тĕрлĕ япала ыйтма пултараççĕ: **супăньпе шыв, кăранташпа сăрă, ручкăпа хут...**

**5. Кĕнекери 6-мĕш, çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çырнă хыççăн ачасем тимлĕ вулаççĕ, йăнăш тума пултаракан сăмахсенче **ă, ĕ, ӳ, ç** сас паллисене, янраса илтĕнекен сасса палăртакан сас паллисене, аффикссене аялтан туртса палăртаççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем хĕрарăм тумĕн ячĕсене манса кайнă е вĕсене мĕнле çырас пирки иккĕленеççĕ пулсан кĕнекене (119—120 с.) пăхма сĕнмелле. Пушă йĕрсем юлсан сăмахсемпе предложенисем туса çырмалла.

**7. Тетрадьри 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ĕçе ăсра, унтан çырса пурнăçлаççĕ. Ачасем сăмахсене çырнă чух иккĕленеççĕ пулсан кĕнекене пăхаççĕ, унта тупаймасан вĕрентекенрен ыйтаççĕ.

**8. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**9. Киле ĕç пани.**

«Ĕçчен Урине» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**10. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 80—81-мĕш уроксем

### Тема: Çĕр ĕçченĕсен ĕçĕ

***Урок тĕллевĕ:*** çĕр ĕçченĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕр ĕçĕпе çыхăннă сăмахсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) хальхи, пĕрре (курса) тата курмасăр иртнĕ ĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **ыраш, тулă, пăрçа, çĕр, акать, вырать, тырă, сухалать, уй-хир, çĕр ĕçченĕ, арман, авăртать, çăнăх, михĕ, пĕçерет.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи, пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсем, иртнĕ причасти.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 2-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кĕнекери ĕçсене пурнăçланă хыççăн ачасем ӳкерчĕк тăрăх пĕрпĕрне ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ, унтан сăвă йĕркисемпе усă курса чăвашла каласа параççĕ.

**3. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем содержанине калаймасан кашни предложение словарьпе усă курса вырăсла куçармалла.

**4. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ыйтусене хуравланă чух текстпа усă курма пултараççĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Схемăсене ăнлантараççĕ, пĕрремĕш схемăри тăваткала симĕс тĕспе, иккĕмĕшĕнчине кăвак тĕспе, çаврашкасене хĕрлĕпе сăрлаççĕ. Кашни сăмахне çырнă чух мĕнле аффикс хушнине ăнлантараççĕ.

**6. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи  профессие пĕлтерекен сăмахсемпе усă кураççĕ.

**7. Кĕнекери 6-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ, ыйтусен хуравĕсене текстра тупса вуласа параççĕ.

**8. Кĕнекери 7-мĕш, тетрадьри 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текстран ĕçе пĕлтерекен сăмахсене малтан йĕркипе çырса илеççĕ, унтан вĕсене вăхăтне кура икĕ ушкăна уйăраççĕ, аффиксĕсене аялтан туртса палăртаççĕ, мĕнле ушкăнланине ăнлантараççĕ. Пушă йĕрке юлсан текстран çав сăмахсемлĕ пĕр предложение  çырса илеççĕ.

**9. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Çырас умĕн йăнăш тăвасран асăрханса ĕçе пĕлтерекен хăш сăмахсенче икĕ **ç** сас палли çырмалли çинчен аса илмелле.

**10. Çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пушă йĕркесем юлсан ытти сăмахĕсемпе те предложенисем туса çырмалла.

**11. Тетрадьри 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан чăваш предложенинчи сăмахсен йĕркине аса илмелле: в чувашском предложении слова-действия стоят последними.

**12. Тетрадьри 8-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**13. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, çĕнĕ сăмахсене астуса юлмалла.

**14. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 82-мĕш урок

### Тема: Çăкăртан хакли çук

***Урок тĕллевĕ:*** çăкăр çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çăнăхран пĕçерекен апат-çимĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе усă курма вĕрентесси; 2) апат-çимĕç ячĕсене аса илесси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) ыйтусене хуравласа калаçу йĕркелеме хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **хуплу, кулач, пĕремĕк, çăкăр завочĕ, çăкăр пĕçерекен.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвăпа паллашнă хыççăн словарьпе паллашаççĕ, вĕрентекенĕн ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.

— Çăкăра мĕнрен пĕçерееççĕ? Кунта мĕн ӳкернĕ? Мĕнле апат-çимĕç ячĕсене пĕлетĕр? Вĕсене мĕнрен пĕçернĕ?

**2. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ӳкерчĕксем çинчи апат-çимĕç ячĕсене каласа тухаççĕ, хуплу пĕçерме мĕн-мĕн кирлине калаççĕ, малтан доска çине çыраççĕ, унтан тетрадьсене куçарса çыраççĕ. Пушă йĕр юлсан **хуплу** сăмахпа предложени тупаççĕ.

**3. Кĕнекери 5-мĕш, çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене малтан доска çине, унтан тетраде куçарса çыраççĕ.

**4. Тетрадьри 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăмахсене ачасем кĕнекепе усă курса хăйсем тĕллĕн çыраççĕ, унтан пĕр-пĕрне тĕрĕслеççĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан предложенисене тăваççĕ, унтан çырса хураççĕ. Ачасене кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, кирлĕ сăмахсене кĕнекере, словарьте тупма хăнăхтармалла. Енчен ачасем пусăм правилисене манса кайнă е пусăм тĕрĕс мар лартаççĕ пулсан, кĕнекери 9—10-мĕш уроксене пăхса аса илме пултараççĕ. Вĕрентекенĕн ачасене сăмах пĕлтерĕшĕсене ырăсла ăнлантарма, пред-

ложенисем тунӑ чух сӑмахсен формисене улӑштарма юранине каламалла.

**6. Тетрадьри 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ыйтусене сӑмахпа хуравлаҫҫӗ. Сӑмахсене ҫыраҫҫӗ, пушӑ йӗр юлсан пӗрер хуравне ҫырса хума пулать.

Тӗслӗхрен: **Сергей Сергеевич хуплу юрататъ.**

**7. Кӗнекери 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ыйтусене хуравланӑ хыҫҫӑн ӳкерчӗк тӑрӑх ҫӑкӑр пӗҫерекенсем ҫинчен каласа параҫҫӗ.

**8. Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Калав тӗсӗ: Катьӑн амӑшӗ ҫӑкӑр заводӗнче ӗҫлет. Вӑл ҫӑкӑр пӗҫерекен. Хура ҫӑнӑхран ҫӑкӑр пӗҫерет. Шурӑ ҫӑнӑхран кулач, пӗремӗк пӗҫерет. Ҫӑкӑр, кулач, пӗремӗк тутлӑ.

Ачасем тӳрех калав тӑваймасан вӗрентекен ыйтӑвӗсене хуравлаҫҫӗ:

— Катьӑн амӑшӗ ӑҫта ӗҫлет? Вӑл кам пулса ӗҫлет? Хура ҫӑнӑхран мӗн пӗҫерет? Шурӑ ҫӑнӑхран мӗн пӗҫерет?

**9. Ҫыру тетрадӗнчи 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани, ачасем хӑйсен пӗлӳхӑнӑхӑвӗсене хаклани.**

**10. Киле ӗҫ пани.**

Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле, ҫӗнӗ сӑмахсене астуса юлмалла.

**11. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

## 83-мӗш урок

### Тема: Повар ӗҫӗ

***Урок тӗллевӗ:*** повар ӗҫӗ ҫинчен каласа пама вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) вуланӑ текстпа усӑ курса ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пама вӗрентесси; 2) сӑпайлӑх сӑмахӗсемпе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

***Лексика материалӗ:*** **ярать, хӑва, апачӗ тутлӑ пултӑр.**

***Грамматика материалӗ:*** хальхи тата пӗрре (курса) иртнӗ вӑхӑтри глаголсем.

#### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ыйту хуравне сӑвӑра тупса вулаҫҫӗ. Ӳкерчӗкпе ӗҫленӗ хыҫҫӑн текста рольпе вулаҫҫӗ.

**2. Кӗнекери 2-мӗшпе 3-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Текста вулаҫҫӗ, вӗрентекен текст содержанийӗ тӑрӑх ыйтусем парать, ачасем хуравлаҫҫӗ.

— Шкулта мĕн пур? Унта кам ĕçлет? Вăл кам? Нина аппа мĕн пĕçерет? Яшкана мĕн ярать? Вăл ачасене мĕн калать? Эсир мĕн калатăр?

Ачасем пĕр-пĕринпе калаçаççĕ: пĕри ыйту парать, тепри хуравлать. «Сăнчăр» вăйă выляççĕ, калав тăваççĕ.

Калав тĕсĕ: Ку шкул столовăйĕ. Унта Валя аппа тата Лена аппа ĕçлеççĕ. Вĕсем поварсем. Валя аппапа Лена аппа тутлă яшка, пăтă, кукăль, икерчĕ, хуплу, кулач пĕçереççĕ. Яшкана какай, çĕр улми, купăста, кишĕр, сухан, кăшман яраççĕ.

**3. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăпайлăх сăмахĕсене йăнăш тăвасран малтан доска çине çыраççĕ, кирлĕ вырăнсене аялтан туртаççĕ, унтан тетрадьсене куçараççĕ.

**4. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кĕнекере хушнă ĕçсене тунă хыççăн кашни ӳкерчĕкпе уйрăм ĕçлеççĕ: вĕрентекен ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ, калав тăваççĕ.

— Ку кам?

— *Ку Сашăн ашшĕ.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл турилкке тăвать.*

— Турилкке мĕнле?

— *Турилкке илемлĕ.*

— Турилккене мĕнрен тунă?

— *Турилккене хăваран тунă.*

— Сашăн ашшĕ мĕнле çын?

— *Сашăн ашшĕ ĕçчен çын.*

Калав тĕсĕ: Ку Сашăн ашшĕ. Вăл хăваран илемлĕ турилккесем тăвать. Сашăн ашшĕ ĕçчен çын. Вăл лайăх ăста.

**5. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Тетрадьре пушă йĕрсем панă. Кунта тĕрлĕ ĕç йĕркелеме пулать. Тĕслĕхрен, ачасем кĕнекери сăмахсене тимлĕ вулаççĕ те кĕнекесене хупаççĕ. Вĕрентекен çав сăмахсене калать, ачасем çыраççĕ. Е вуланă сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ, чи лайăххисене çырса хураççĕ.

**6. Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçри сăмахсемпе усă курма пултараççĕ.

**7. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**8. Киле ĕç пани.**

Шкул столовăйĕ çинчен каласа пама хатĕрленмелле.

**9. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 84—85-мĕш уроксем

## Тема: Парне туянатпăр

***Урок тĕллевĕ:*** çынсем парне туянни, пĕр-пĕрне парне пани çинчен каластарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) хисеп ячĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) хальхи, пĕрре (курса тата курмасăр) иртнĕ вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрма, тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **юнашар, паллашар, туянать, патша, чĕререн, тетте, миçе тенкĕ тăрать?**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи, пĕрре (курса) иртнĕ вăхăтри глаголсем, иртнĕ причасти, хисеп ячĕсем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем малтан çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, унтан сăвва вулаççĕ, вĕрентекен ыйтăвĕсене сăвă йĕркисемпе усă курса хуравлаççĕ: — Тете мĕн ятлă? Клим тете мĕн илнĕ? Клим тете тетте ăçта илнĕ? Клим тете лавккара мĕн илнĕ? Сар автан мĕн тет? Кăвакал мĕн тет? Вăрман патши кам? Вăл мĕн тет?

Юлашкинчен ачасем кашни теттене ӳкерчĕкĕ тăрăх сăнлаççĕ.

Тĕслĕхрен: Ку автан. Вăл сарă тĕслĕ. Унăн хӳри симĕс, кăвак, хĕрлĕ, çуначĕсем хĕрлĕ, киккирикĕ хĕрлĕ тĕслĕ. Автан кукку-рук! тет.

**2. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан çĕр таран шутлаççĕ, маннă пулсан вĕреннĕ материала кĕнекери 102 с. пăхса аса илеççĕ. Унтан числосене çыраççĕ.

**3. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вăйă выляс умĕн ӳкерчĕксенчи япаласен ячĕсене, вĕсем миçе тенкĕ тăнине калаççĕ.

**4. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Калав тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ. Тĕслĕхпе усă курса диалог тăваççĕ. Панă текстсенче ĕçе пĕлтерекен сăмахсене тупса вулаççĕ, вăхăтне палăртаççĕ.

**5. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Панă предложенисенче кирлĕ сăмахсене çырса хураççĕ. Тетраде çырас умĕн числосене малтан доска çине çырса тĕрĕслеççĕ.

**6. Çыру тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекен класри япаласем çинчен калаçу пуçлать. Ачасем класри япаласене шутлаççĕ, каланă май доска çине çырса пыраççĕ, унтан тетраде куçарса çыраççĕ.

— Ку мĕн?

— *Ку пукан.*
— Класра миçе пукан?
— *Класра 28 пукан.*

**7. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем хисеп ячĕсене танлаштараççĕ, уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ, ăнлантараççĕ: когда считаем предметы, не называя слова-предметы, то в середине последнего слова числа согласный звук произносим долго и пишем две одинаковые буквы, обозначающие данный звук. Если называем слова-предметы, то согласный звук произносим звонко и пишем одну букву.

Ушкăнпа ĕçлесе схемăсем тăваççĕ, доска çине ӳкереççĕ. Пурте схемăсене тишкереççĕ, тĕрĕс тунине суйласа илеççĕ, ыттисене хуратаççĕ. Схемăсене сăмахпа ăнлантараççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**8. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ача йăнăшсан кашнинчех правилăна аса илтермелле.

**9. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Класра ачасем пусăм правилисене аса илеççĕ, сăмахсенче пусăм лартса тухаççĕ. **Миçе тенкĕ тăрать?** ыйтăва туллин хуравлаççĕ. Предложенисене доска çине çыраççĕ. Килте 3 предложени тупса çырмалла.

**10. Тетрадьри 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 86—87-мĕш уроксем

### Тема: Пирĕн ĕмĕтсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене хăйсен ĕмĕчĕсем çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пĕрремĕш сăпатри пĕрреллĕ хисеп формипе паллаштарасси; 2) чĕлхе вăрттăнлăхĕсене тишкерме, пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **ĕмĕт, ӳссен пулăп.**

***Грамматика материалĕ:*** пулас вăхăтри глаголсен пĕрремĕш сăпатри пĕрреллĕ хисеп форми.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвăри палăртнă сăмахсене доска çине юпапа çыраççĕ. Вĕсем ĕçе пĕлтерекен сăмахсем пулнине, **эпĕ** сăмахпа çыхăннине калаççĕ, **эпĕ** сăмаха вĕсен умне çыраççĕ. Сăмахсене ыйту-хурав мелĕпе тишкереççĕ.

— Действие совершается в момент речи?

— *Нет.*

— Как мы скажем о действии, которое совершается в момент речи?

— *Эпĕ ӳкеретĕп, ҫыратăп, шутлатăп, пухатăп.*

Ачасем ҫак сăмахсене тепĕр юпана ҫыраҫҫĕ, аффиксĕсене палăртаҫҫĕ, вĕрентекен панă ыйтусене малалла хуравлаҫҫĕ.

— Не говорится ли здесь о прошлом действии, произведенном самим говорящим?

— *Нет.*

— Как скажем о действии, произведенном в недавнем прошлом самим говорящим?

— *Эпĕ ӳкертĕм, ҫыртăм, шутларăм, пухрăм.*

Ачасем сăмахсене виҫҫĕмĕш юпана ҫыраҫҫĕ, аффиксĕсене палăртаҫҫĕ.

— Тогда, наверное, здесь говорится о прошлом действии, очевидцем которого говорящий не был?

— *Нет.*

— Как скажем о прошлом действии, очевидцем которого говорящий не был?

— *Эпĕ ӳкернĕ, ҫырнă, шутланă, пухнă.*

Ачасем сăмахсене тăваттăмĕш юпана ҫыраҫҫĕ, аффиксĕсене палăртаҫҫĕ.

— Какие действия обозначают выделенные слова? Прочитаем стихотворение еще раз и ответим на этот вопрос.

— *Они говорят о действиях, которые будут совершаться после момента речи, в будущем.*

— С помощью каких аффиксов они образованы? Выделите аффиксы.

Ачасем аффиксĕсене палăртаҫҫĕ (вырăс чĕлхи урокĕнче палăртнă пек).

— О чем рассказывают эти аффиксы?

— *О действии, совершенном после момента речи, в будущем.*

Юлашкинчен ачасем пĕтĕмлетӳ тăваҫҫĕ.

**2. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Ачасем Анюкпа Ванюк тата Сергей Сергеевич схемисемпе паллашаҫҫĕ, танлаштараҫҫĕ, ăнлантараҫҫĕ: Аня и Ваня показали общую схему образования слов-действий: слова, обозначающие будущие действия со словом **эпĕ** образуются с помощью аффикса ***-ăп(-ĕп)***.

К основе слова на конечный твердый согласный звук прибавляется аффикс ***-ăп***, на конечный мягкий согласный звук прибавляется аффикс ***-ĕп***.

Профессор Сергей Сергеевич показал этот способ более подробно: если основа слова оканчивается на букву **а**, то она из слова выпадает и сразу прибавляется аффикс ***-ăп***; если основа оканчивается на букву **е**, то она выпадает, прибавляется аффикс ***-ĕп***; если основа слова оканчивается на **и**, то она заменяется буквой **й**, прибавляется аффикс ***-ĕп***; если основа оканчивается на **у**, то она заменяется ***-ăв-***, прибавляется аффикс ***-ăп***.

**3. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан ӳкерчĕксем е слайдсем тăрăх тĕрлĕ профессие пĕлтерекен сăмахсене аса илеççĕ. Унтан ачасем диалогпа паллашаççĕ, хăйсен ĕмĕчĕсем çинчен каласа параççĕ. Мĕн çинчен те пулин ĕмĕтленсе каланă чух ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пулас вăхăтра усă курмаллине калаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х р е н: **Эпĕ ӳссен вĕрентекен пулăп, ачасене вĕрентĕп.**

**4. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Панă сăмахсене ачасем вырăсла куçараççĕ, вĕсемпе усă курса çуллахи каникулта мĕн тăвасси çинчен каласа параççĕ:

— Эпĕ çуллахи каникулта кĕнеке вулăп, шыва кĕрĕп, ишĕп, хĕвел çинче хĕртĕнĕп, вăрмана çӳрĕп, çырла пуçтарăп, тĕрлĕ вăйă выльăп.

**5. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекен ыйтăва вырăсла парать, ачасем чăвашла хуравлаççĕ.

— Лена о чем мечтает, что об этом говорит?

— *Эпĕ йĕлтĕрпе ярăнăп.*

**6. Тетрадьри 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене вырăсла куçараççĕ, сăмахсене виçĕ ушкăна уйăрма пулнине тавçăраççĕ, кашни ушкăна мĕнле сăмахсем тата мĕншĕн ун пек уйăрнине ăнлантараççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| ĕçлĕп | калавçă | çыру |
| юрлăп | тĕрĕçĕ | юрă |
| çырăп | ĕçчен | ĕç |
| тĕрлĕп | çыруçă | тĕрĕ |
| калăп | юрăçă | калав |

Ачасем пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, вĕрентекен ачасене экран е доска çинче тĕрĕс пурнăçланă ĕçе кăтартать.

**7. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**8. Киле ĕç пани.**

«Шкула — ăс пухма» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, кĕнекере панă схемăсене ăнлантарма пĕлмелле.

**9. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 88—89-мĕш уроксем

## Т е м а: Пирĕн ĕмĕтсем

***Урок тĕллевĕ:*** пулас вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен формисемпе, вĕсен пулăвĕпе паллаштарасси; 2) чĕлхе вăрттăнлăхĕсене тишкерме, пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **пулас килет.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн пулас вăхăт формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвăри кашни сăмаха вырăсла куçармасăр, пĕтĕмĕшле мĕнле ăнланнине вырăсла каласа памалла.

**2. Кĕнекери тата çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Ачасем сăвăра палăртнă сăмахсене çыру тетрадьне пĕр йĕркене çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ. Çырас умĕн вĕрентекен сăмахсем умне пĕр сăмах валли вырăн хăварма\-ллине асăрхаттарать. Кайран пушă вырăна ĕçе кам тунине кăтартакан сăмаха **(эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем)** çырса хураççĕ.

Иртнĕ урокра тишкернĕ схемăсене ăнлантараççĕ, паян çырнă сăмахсен схемисене çыру тетрадĕнче ӳкереççĕ, мĕнле тунине каласа параççĕ, тĕрĕс варианчĕсене доска çинче кăтартаççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| |  | + ь + -ăп + -ăр | выля — выльăпăр | |
| Эпир |  | + -ăп + -ăр | кул — кулăпăр | пул — пулăпăр |
| |  | + -ăп + -ăр | вула — вулăпăр | |

**3. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем Анюкпа Ванюк схемисене тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: если основа слов-действий оканчивается на твердый согласный, то в сочетании со словом **эпĕ** прибавляется аффикс ***-ăп*** и со словом **эпир** — аффиксы ***-ăп*** и ***-ăр***; если основа слов-действий оканчивается на мягкий согласный, то в сочетании со словом **эпĕ** к ней прибавляется аффикс ***-ĕп***, со словом **эпир** — аффиксы ***-ĕп*** и ***-ĕр***.

**4. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем кашни схемăна тĕплĕн тишкереççĕ, тĕслĕхсем тупса çирĕплетеççĕ, иртнĕ урокри материалпа усă курса ăнлантараççĕ, малалла пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: слова, обозначающие будущие дейст-

вия, в сочетании со словом **эпĕ** образуются с помощью аффикса ***-ăп(-ĕп)***, в сочетании со словом **эпир** прибавляется аффикс ***-ăр(-ĕр)***, в сочетании со словом **эсĕ** образуются с помощью аффикса ***-ăн(-ĕн)***, в сочетании со словом **эсир** прибавляется аффикс ***-ăр(-ĕр)***, в сочетании со словом **вăл** образуется с помощью ***-ĕ***, в сочетании со словом **вĕсем** прибавляется аффикс ***-ç***.

Во всех случаях, если основа слова оканчивается на букву **а** или е, то она выпадает; если основа слова оканчивается на **и**, она заменяется буквой **й**; если основа оканчивается на **у**, она заменяется слогом ***-ăв***.

**5. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ, ĕçе уйрăм хут листисем çинче пурнăçлаççĕ. Кашни ушкăн хăйĕн ĕçне вуласа парать, ыттисем итлеççĕ, йăнăшĕсене тӳрлетеççĕ те сăлтавне ăнлантараççĕ. Юлашкинчен ушкăнсен ĕçĕсене хаклаççĕ.

**6. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текста вулаççĕ. Хĕр ачан кун йĕрки çинчен урăх çын каласа панă чух текстри мĕнле сăмахсем улшăннине палăртмалла, улшăннă сăмахсене доска çине çырма юрать. Текста улăштарса вулаççĕ:

Т ĕ с л ĕ х р е н: Хĕр ачан амăшĕ больницăра ĕçлет. Вăл ирхине ĕçе каять, хĕр ача — шкула. Уроксем хыççăн хĕр ача киле килет...

Ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ: малтан кушака, унтан хĕр ачана сăнлаççĕ. Хĕр ача юлташĕн çуралнă кунне кайма кофта утюглани çинчен калаçмалла, ӳкерчĕкпе усă курса «Ĕçчен хĕр ача» калава малалла тăсмалла.

**7. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕр пек фигурăсем ăшĕнчи пайсене пухса сăмахсем çыраççĕ: **тăхăнĕç, сыхлăр, итлĕп, юратăп.** Вĕсемпе предложенисем тăваççĕ, доска çине çыраççĕ, йăнăш çырма пултаракан вырăнсене палăртаççĕ, тетрадьсене куçараççĕ.

**8. Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**9. Киле ĕç пани.**

Придумать слово, обозначающее будущее действие, и записать его в сочетании со словами **эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем.**

**10. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 90-мӗш урок

## Тема: Пулас ӗҫсем

***Урок тӗллевӗ:*** пулас вӑхӑтри ҫуклӑ формӑри ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсемпе пуплевре усӑ курма вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулас вӑхӑтри ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен ҫуклӑ формипе паллаштарасси; 2) чӗлхе вӑрттӑнлӑхӗсене тишкерме, пӗтӗмлетӳсем тума вӗрентесси.

***Лексика материалӗ:*** **Чӑваш Ен, тен.**

***Грамматика материалӗ:*** пулас вӑхӑтри глаголсен ҫуклӑ форми.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗшпе 2-мӗш тата ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Сӑвва пӗр хут вуланӑ хыҫҫӑн ӳкерчӗкпе тата текстпа усӑ курса вӗрентекен ыйтӑвӗсене хуравлаҫҫӗ.

— Ӳкерчӗкре мӗн куратӑр?

— *Куракпа ҫерҫи.*

— Курак мӗнле кайӑк?

— *Курак хура, пысӑк.*

— Ҫерҫи мӗнле?

— *Ҫерҫи сӑрӑ, пӗчӗк.*

— Ҫерҫипе курак мӗн тӑваҫҫӗ?

— *Ҫерҫипе курак калаҫаҫҫӗ.*

— Курак мӗн калать? Слова грача скажите и по-чувашски, и по-русски.

— *Кӑр-рак, кӗркуннепе кайӑп, ҫуркуннепе килӗп.*

— *Кар-кар, осенью улечу, весной прилечу.*

— Ҫерҫи мӗн калать?

— *Чим-чим, тен, эс урӑх каймӑн, Чӑваш Енрех лайӑх.*

— Переведите слова воробья на русский язык.

— *Чив-чив, может быть, ты больше не улетишь, в Чувашии же хорошо.*

— Когда был этот разговор?

— *Осенью.*

— Как вы определили?

— *На дереве листья желтые, и их мало.*

Сӑвва рольпе вулаҫҫӗ. Сӑвӑран ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене ҫырса илеҫҫӗ, аффиксӗсене палӑртаҫҫӗ, вӗсем мӗне пӗлтернине ӑнлантараҫҫӗ, сӑмахсене вырӑсла куҫараҫҫӗ.

Ачасем **каймӑн** сӑмах аффиксне тӗрӗс мар палӑртма пултараҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем вӗрентекен сӗннипе сӑвӑри ҫак сӑмахлӑ

предложение тепĕр хут вулаççĕ, **кайăн — каймăн** сăмахсене танлаштараççĕ те тавçăрса илеççĕ.

Тетрадьре пушă йĕр юлсан предложени туса çыраççĕ.

**2. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентекен ачасене ĕç условийĕпе паллаштарать.

— Прочитайте, переведите на русский язык. Прочитайте слова-действия без выделенного аффикса. Что вы заметили? Сравните аффиксы утвердительной и отрицательной форм слов-действий. Какой вывод можно сделать? Какой вывод сделали Аня и Ваня? Вывод они записали в виде схемы. Вы согласны с ними? Приведите примеры, подтверждающие ваши выводы. Что можно сказать о способе образования отрицательной формы слов-действий?

Дети отвечают: отрицательная форма слов, обозначающих будущие действия, образуется путем вставки аффикса ***-м*** — между основой и аффиксом слова-действия.

**3. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем предложенисене йĕрпе çыхăнтараççĕ, ăнлантараççĕ.

**4. Тетрадьри 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Чăвашла предложенинчи сăмахсен йĕркине аса илеççĕ: слово-действие стоит в конце предложения. Предложенисене малтан доска çине, унтан тетраде çыраççĕ.

**5. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пулас вăхăтăн пурлă тата çуклă формăсен аффиксĕсене хушса çыраççĕ: **вĕрен-мĕп, пул-ăн, чирле-мĕ, çыр-ăпăр, пăрах-мĕç, выль-ăпăр, кĕр-ĕпĕр**.

**Выльăпăр** сăмахра **ь** çырмаллине асăрхаттармалла.

**6. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, ĕçе пĕлтерекен сăмахăн пулас вăхăтри çуклă формипе усă курма пĕлмелле.

**7. Тетрадьри 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**8. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 91-мĕш урок

### Тема: Пирĕн таврари йывăççем

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Ен вăрманĕсем çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) йывăççене пĕлтерекен сăмахсемпе паллаштарасси, вĕсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) **умне, умĕнче, çине, çинче, патне, патĕнче** сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:* хурăн, юман, чăрăш, çăка, пилеш, хыр, вĕрене, çĕмĕрт, йăмра, ăвăс, ăçта.**

***Грамматика материалĕ:* ăçта?** ыйту.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем йывăç ячĕсене астуса юлас тĕллевпе икшерĕн ĕçлеççĕ: сăмахсен ячĕсене хуплаççĕ, пĕри ӳкерчĕкне кăтартать, тепри сăмахне вырăсла тата чăвашла калать; пĕри сăмахне калать, тепри ӳкерчĕкне кăтартать.

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва мĕнле ăнланнине кашни сăмахне куçармасăр вырăсла калаççĕ. Сăвăри ӳкерчĕке сăнлакан вырăна тупса вулаççĕ, мĕнле йывăç ӳкернине калаççĕ.

**3. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем икшерĕн ĕçлеççĕ: пĕри сăмах майлашăвĕсене вырăсла калать, тепри — чăвашла, унтан ылмашăнаççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш, çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**5. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кĕнекери ыйтăва ачасем вырăсла хуравлаççĕ, йывăç ячĕсене сăвăра тупса вулаççĕ, ӳкерчĕк тăрăх вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.

— Вăрман хуçине кăтартăр.

— Вăрман хуралçи ăçта ларать?

— Ун умĕнче камсем тăраççĕ?

— Мучи мĕн тет?

**6. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем схемăсене ушкăнпа тишкереççĕ, мĕне пĕлтернине ăнлантараççĕ, **пилеш умне, пилеш умĕнче, пилеш çине, пилеш çинче, пилеш патне, пилеш патĕнче** сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçараççĕ, ыйтăвĕсене калаççĕ, предложенисем тăваççĕ. Кĕнекере панă сăмах майлашăвĕсемпе усă курса калаçаççĕ: малтан ыйтусене вĕрентекен парать, ачасем хуравлаççĕ, унтан ачасем пĕрпĕрне ыйтусем парса хуравлаççĕ.

— Саша, доска умне тух. (Саша доска умне тухать.) Саша ăçта тухать?

— *Саша доска умне тухать.*

— Саша ăçта тăрать?

— *Саша доска умĕнче тăрать.*

— Лена, кĕнекене сĕтел çине хур. (Лена кĕнекене сĕтел çине хурать.) Лена кĕнекене ăçта хурать?

— *Лена кĕнекене сĕтел çине хурать.*

— Кĕнеке ăçта выртать?
— *Кĕнеке сĕтел çинче выртать.*
— Миша, сĕтел патне ут. Миша ăçта утать?
— *Миша сĕтел патне утать.*
— Миша ăçта тăрать?
— *Миша сĕтел патĕнче тăрать.*

Малтан вĕрентекен ачасене ĕç хушать, ыйтусем парать, унтан ачасем пĕр-пĕрне ĕç хушаççĕ, ыйтусем параççĕ.

**7. Кĕнекери 8-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕççене пурнăçлани**.

Ачасем хурăна сăнлакан, **мĕнле?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене суйласа илеççĕ, тетраде çыраççĕ, ун çинчен калав тăваççĕ.

Тĕслĕхрен: Акă хурăн. Унăн туни шурă, çулçисем симĕс. Хурăн çӳллĕ, хитре йывăç. Вăл вăрманта, хулара, пахчара ӳсет.

**8. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем йывăç ячĕсене аса илеççĕ, хăйсем юратнă йывăç ятне калаççĕ, ăна ӳкереççĕ, кĕнекери 8-мĕш тата тетрадьри 2-мĕш ĕççемпе усă курса ун çинчен каласа параççĕ, çырса хураççĕ.

**9. Тетрадьри 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**10. Киле ĕç пани.**

Йывăç ячĕсене пĕлмелле, «Йăмра» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**11. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 92—93-мĕш уроксем

### Тема: Пирĕн енне çуркунне вĕççе килекен кайăксем

***Урок тĕллевĕ:*** çуркунне вĕççе килекен кайăксем çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пирĕн енне çуркунне вĕççе килекен кайăксен ячĕсемпе паллаштарасси, вĕсене ачасен пуплевне кĕртесси; 2) йывăççене, тумтире пĕлтерекен сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) тĕрлĕ формăри ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пĕрпĕринчен уйăрма вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **курак, чĕкеç, тăри, шăпчăк, тăрна, килти кайăк-кĕшĕк, вĕçен кайăксем.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ формисем.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Иртнĕ урокри материала пăхса йывăççен ячĕсене аса илеççĕ, мĕнле çырнине тимлеççĕ, ун хыççăн вĕсене вĕрентекен каласа

пынӑ май тетраде ҫыраҫҫӗ. Юлашкинчен ачасем кӗнекепе усӑ курса пӗр-пӗрин ӗҫӗсене тӗрӗслеҫҫӗ, йӑнӑш шутне пӗлтереҫҫӗ.

**2. Ҫыру тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Тетрадьри 2-мӗш ӗҫпе усӑ курса предложенисене вӗҫлеҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ӳкерчӗксене тимлӗ пӑхса кайӑксен ячӗсене вулаҫҫӗ, вӗсене пӗр-пӗринчен чӑвашла е вырӑсла каласа, ӳкерчӗкне кӑтартса ыйтаҫҫӗ, хуравлаҫҫӗ.

**4. Ҫыру тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Кайӑк ячӗсене тупса аялтан туртаҫҫӗ: (сулахайран сылтӑмалла) — чӗкеҫ, куккук, шӑпчӑк, тӑри; (ҫӳлтен аялалла) — курак, шӑнкӑрч.

**5. Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Сӑвӑ шӑнкӑрч ҫинчен пулнине калаҫҫӗ, ӳкерчӗк тӑрӑх вӗрентекен ыйтусем парать, ачасем сӑвӑ йӗркисемпе усӑ курса хуравлаҫҫӗ, унтан ҫыхӑнуллӑ калав тӑваҫҫӗ.

— Ку мӗнле йывӑҫ?

— *Ку хурӑн.*

— Хурӑн мӗнле? Опиши.

— *Хурӑн ҫӳллӗ, хитре. Унӑн туни шурӑ. Турачӗсем ҫинче пӗчӗк ешӗл ҫулҫӑсем.*

— Хурӑн ҫинче мӗн пур?

— *Хурӑн ҫинче шӑнкӑрч йӑви пур.*

— Йӑвара мӗн пурӑнать?

— *Йӑвара шӑнкӑрчсем пурӑнаҫҫӗ.*

— Шӑнкӑрч мӗн тӑвать?

— *Шӑнкӑрч юрлать.*

— Шӑнкӑрчсем тата мӗн тӑваҫҫӗ? Ответьте на вопрос, используя строки из стихотворения.

— *Шӑнкӑрчсем уй-хирте вӗҫеҫҫӗ, хурт-кӑпшанкӑ пуҫтараҫҫӗ.*

Калав тума хатӗрлес тӗллевпе ыйтусен хуравӗсене темиҫе ачаран ыйтмалла.

Калав тӗсӗ: Ку хурӑн. Хурӑн ҫӳллӗ, хитре. Унӑн туни шурӑ. Турачӗсем ҫинче пӗчӗк ешӗл ҫулҫӑсем. Ҫуркунне ҫитнӗ. Хурӑн ҫинче шӑнкӑрч йӑви. Унта шӑнкӑрчсем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем савӑнӑҫлӑ юрӑ юрлаҫҫӗ. Шӑнкӑрчсем уй-хирте вӗҫеҫҫӗ, хурт-кӑпшанкӑ пуҫтараҫҫӗ. Шӑнкӑрчсем — усӑллӑ кайӑксем.

**6. Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Сӑмах майлашӑвӗсене йӗрсемпе сыпӑнтараҫҫӗ, астуса юлма 2—3 хут вулаҫҫӗ.

**7. Кӗнекери 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Вулама пуҫличчен уйӑхсен чӑвашла ячӗсене аса илмелле. Ыйтусен хуравӗсене текстра тупма тӑрӑшмалла.

**8. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Кашни ушкăн уйрăм хут листи çине текстран ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илет, аффиксĕсене палăртать, аффиксĕсем тăрăх ĕç хăçан (ĕç вăхăтне) тата пурлă е çуклă формăра пулнине калать: действие совершилось в недавнем прошлом в присутствии говорящих (**килчĕç, çавăрчĕç, турăмăр, çакрăмăр, çитрĕç)**, действие происходит в момент речи **(юрлаççĕ, килеççĕ, çавăраççĕ, кăлараççĕ)**.

**9. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем иккĕмĕш калавра ӳкерчĕке сăнлакан вырăна тупса вулаççĕ, ӳкерчĕкпе тата текстпа усă курса шăнкăрчсене мĕнле кĕтсе илни çинчен ушкăнпа хатĕрленсе хут листисем çине çыраççĕ, вуласа параççĕ, чи лайăх калава суйласа илеççĕ, ăна тепĕр хут вулаççĕ.

**10. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлесе хут листи çине текстăн тĕрĕс вариантне çыраççĕ, йăнăшсем ача чăваш сăмахĕсене ăнланманнипе пулнине калаççĕ.

Текстăн тĕрĕс варианчĕ:

Шурă юр ирĕлет. Шыв юхать. Кураксем вĕçсе килеççĕ. Вĕсем йăва çавăраççĕ.

**11. Кĕнекери 3-мĕшпе 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан 3-мĕш ĕçри сăмахсене вулаççĕ, астуса юлма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕрентекен сăмахсем диалогпа ĕçленĕ чух кирлĕ пулнине калать. Унтан 9-мĕш ĕçри диалога рольпе вулаççĕ, Кольăн йăнăшне тупаççĕ. Тупаймасан диалогăн юлашки икĕ предложенине вулаççĕ, вырăсла куçараççĕ. Юлашкинчен килти кайăк-кĕшĕк тата вĕçен кайăксен ячĕсене аса илеççĕ, вĕсене ушкăнласа калаççĕ.

**12. Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан урамра хăйсем мĕн туни çинчен калаççĕ. Унтан кĕнекери диалог пуçламăшне вулаççĕ те ĕçе пĕлтерекен сăмахсене мĕнле формăра лартмаллине юлашки ыйтури сăмахăн формине пăхса пĕлеççĕ, диалога малалла тăсаççĕ.

Ачасем ĕçе пĕлтерекен сăмахсем çумне мĕнле аффикссем хушмаллине манса кайнă пулсан кĕнекене (149 с.) уçаççĕ те аса илеççĕ.

**13. Кĕнекери 11-мĕш, çыру тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен çурхи тата çуллахи тумтире, ачасен ĕç-хĕлне сăнлакан ӳкерчĕксемпе слайдсем кăтартать, ачасем тумтир ячĕсене, ĕçе пĕлтерекен сăмахсене аса илеççĕ, доска çине çыраççĕ. Вĕрентекен ыйтăва хуравланă чух предложенири сăмахсен йĕрки

ыйтури пек пулмаллине, ыйту сăмахĕ вырăнне çеç кирлĕ сăмах лартмаллине аса илтерет. Ачасем ыйтусене сăмахпа хуравлаççĕ, кайран тетраде çырса хураççĕ.

**14. Тетрадьри 6-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**15. Киле ĕç пани.**

Вĕçен кайăксен ячĕсене астуса юлмалла.

**16. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 94-мĕш урок

### Тема: Çĕнтерӳ кунĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕнтерӳ кунĕ çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Çĕнтерӳ кунĕпе çыхăннă çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарасси, ватă çынсене саламлама вĕрентесси; 2) камăнлăх форминчи çынна пĕлтерекен сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **çĕнтерӳ, Çĕнтерӳ кунĕ, кинемей, чи, чи хакли.**

***Грамматика материалĕ:*** япала ячĕсен камăнлăх форми.

*Урок юхăмĕ*

**1. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕçен кайăксен ячĕсене иртнĕ урокри материалпа усă курса аса илеççĕ, мĕнле çырнине тимлĕ пăхаççĕ, мĕнле астуса юлнине пĕр-пĕринчен ыйтса тĕрĕслеççĕ. Унтан вĕрентекен каласа пынă сăмахсене çыраççĕ, кĕнекерипе танлаштарса йăнăшсене тӳрлетеççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕр-пĕринчен ыйтса сăмахсене мĕнле астуса юлнине тĕрĕслеççĕ.

**3. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва вырăсла куçараççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ, каласа пâраççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вуланă хыççăн ачасем вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.

— Çу уйăхĕн тăххăрмĕшĕ мĕнле кун?

— Эпир камсене мирлĕ пурнăçшăн тав тăватпăр?

— Пире мĕн кирлĕ мар?

Унтан текст содержанине чăвашла е вырăсла калаççĕ, сăвă патне панă ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ.

**5. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сӑмахсене пӗр хут вуланӑ хыҫҫӑн вырӑсла куҫараҫҫӗ, иккӗмӗш хут сӑмах умне камӑннине пӗлтерекен сӑмах **(манӑн, санӑн, унӑн)** лартса вулаҫҫӗ, унтан предложенисем тӑваҫҫӗ.

**6. Ҫыру тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ӗҫе пурнӑҫланӑ чух кӗнекери 4-мӗш ӗҫпе усӑ курмалла.

Ачасем вырӑс сӑмахӗсем чӑвашла пӗр пек куҫнине ӑнлантараҫҫӗ: в чувашском языке слова-предметы не имеют рода, поэтому словосочетания **мой внук** и **моя внучка** переводятся на чувашский язык одинаково.

**7. Ҫыру тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем ӳкерчӗк тӑрӑх калаҫаҫҫӗ, **кукамай, асанне** сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантараҫҫӗ: в чувашском языке слово **бабушка** обозначается словами: **кукамай** (бабушка по матери) и **асанне** (бабушка по отцу).

**8. Тетрадьри 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем ҫынна лайӑх енчен сӑнлакан сӑмахсене аса илеҫҫӗ, вӗсене **чи** сӑмахпа ҫыхӑнтарса доска ҫине ҫыраҫҫӗ, килӗшнисене тетраде куҫарса ҫыраҫҫӗ.

**9. Кӗнекери тата ҫыру тетрадӗнчи 5-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Ачасем малтан ҫырӑва вуласа хӑш сӑмахсене улӑштармаллине палӑртаҫҫӗ, вӗсене малтан доска ҫине, унтан тетраде ҫыраҫҫӗ.

**10. Кӗнекери 6-мӗшпе 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем малтан ыйту хуравӗсене ҫырура тупса вулаҫҫӗ, унтан вӗрентекен ыйтӑвӗсене хуравлаҫҫӗ, юлашкинчен калав тӑваҫҫӗ.

— Ӳкерчӗкре камсене ӳкернӗ?
— Вӗсем ӑҫта пурӑнаҫҫӗ?
— Вӗсен мӗнсем пур?
— Асатте мӗн тӑвать?
— Ҫыру кам ҫырнӑ?
— Асанне мӗн тӑвать?
— Вӗсем мӗнле пурӑнаҫҫӗ?
— Асаннепе асатте камсене кӗтеҫҫӗ?

Калав тӗсӗ: Кунта асаннепе асатте. Вӗсем ялта пурӑнаҫҫӗ. Асаннепе асаттен кушак, йытӑ, автан, чӑхсем, чӑх чӗпписем пур. Асатте ҫыру вулать. Ӑна мӑнукӗсем ҫырнӑ. Асанне итлет, чӑхсемпе чӗпсене апат ҫитерет. Асаннепе асатте пӳрт умӗнче лараҫҫӗ, мӑнукӗсене кӗтеҫҫӗ.

**11. Ҫыру тетрадӗнчи 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани, ачасем хӑйсен пӗлӳхӑнӑхӑвӗсене хаклани.**

**12. Киле ӗҫ пани.**

Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле, ватӑ ҫынсем патне Ҫӗнтерӳ кунӗпе саламлӑ ҫыру ҫырмалла.

**13. Урока вӗҫлени. Сывпуллашни.**

# 95—96-мӗш уроксем

## Тема: Ҫулла

***Урок тӗллевӗ:*** ҫӗнӗ сӑмахсемпе усӑ курса ҫулла ҫинчен калаҫа пама вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) ҫуллахи уйӑхсен ячӗсемпе паллаштарасси; 2) текст содержанийӗ тӑрӑх ыйтусем пама хӑнӑхтарасси; 3) вуланӑ текстсемпе усӑ курса ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пама вӗрентесси.

***Лексика материалӗ:*** **ҫӗртме уйӑхӗ, утӑ уйӑхӗ, утӑ ҫулать, ҫурла уйӑхӗ, шӑрӑх, улӑх.**

***Грамматика материалӗ:*** хальхи вӑхӑтри глаголсен тӗрлӗ сӑпат формисем.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем сӑмахсене пурте пӗрле, ретпе, икшерӗн вӗҫе-вӗҫӗн вулаҫҫӗ.

**2. Ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем уйӑх ячӗсене аса илеҫҫӗ, манса кайнӑ пулсан кӗнекере шыраса тупса вулаҫҫӗ, мӗнле ҫырнине тимлӗ пӑхаҫҫӗ, каласа тухаҫҫӗ, кирлӗ уйӑх ячӗсене тетраде ҫыраҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 7-мӗш, тетрадьри 2-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Ачасем малтан хӗллепе ҫыхӑннӑ сӑмахсене, унтан ҫуллапа ҫыхӑннисене ҫыраҫҫӗ.

**4. Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Сӑвӑ йӗркисемпе усӑ курса ӳкерчӗк тӑрӑх калав тӑваҫҫӗ.

**5. Кӗнекери 3-мӗшпе 4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Кӗнекери ӗҫе пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн ачасем текстра каланӑ ӗҫсем хӑш уйӑхра пулнине палӑртаҫҫӗ.

Ачасем «Ҫулла» текста вулаҫҫӗ, вырӑсла куҫараҫҫӗ, унтан каласа параҫҫӗ.

**6. Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем ушкӑнсем ҫине уйӑлаҫҫӗ. Кашни ушкӑн «Ҫулла» текст тӑрӑх ыйтусем хатӗрлет, хут листи ҫине ҫырать. Пӗр ушкӑнри ачасем тепӗр ушкӑнри ачасене черетпе ыйтусем параҫҫӗ, вӗсене хуравлаҫҫӗ. Ушкӑнсен ӗҫӗсене хакланӑ чух тӗрӗс ыйту, хурав панине тата йӑнӑшсене тӳрлетнине шута илеҫҫӗ.

**7. Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Текста **эпир** сӑмах вырӑнне **ачасем** сӑмах лартса ик-виҫӗ хут вулаҫҫӗ.

**8. Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ӳкерчӗк ҫинчен каланӑ чух «Ҫулла» текстпа усӑ курма юранине каламалла.

Калав тĕсĕ: Çулла. Урамра шăрăх. Хĕвел хĕртсе пăхать. Хурăн тăрринче шăнкăрчсем вĕçеççĕ. Шăпчăксем юрлаççĕ. Курăксем, йывăçсем симĕс. Ачасем ялта. Вĕсем канаççĕ. Шыв ăшă. Ачасем шыва кĕреççĕ. Ленăпа Миша велосипедпа вăрмана кайнă. Вĕсем кăмпа, çырла татнă. Епле ырă хĕвеллĕ çулла!

**9. Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Калавра кашни уйăхра мĕн-мĕн туни çинчен калаççĕ.

Ачасем калава 3-мĕш ĕçри предложенисемпе усă курса ушкăнпа йĕркелеме пултараççĕ. Пĕрле çыраççĕ те вуласа параççĕ, чи лайăххине суйласа хак параççĕ.

**10. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**11. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, уйăх ячĕсене астуса юлмалла.

**12. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 97-мĕш урок

## Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çĕнĕ сăмахсемпе усă курса çуллахи каникулта мĕн туни çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пулă ячĕсемпе паллаштарасси; 2) улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсемпе усă курма хăнăхтарасси; 3) ӳкерчĕк тăрăх каласа пама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** **улма-çырла, пахча çимĕç, пулă тытма каятпăр, пулла каятпăр, уланкă, карас, çăрттан, çупах.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи тата пулас вăхăтри глаголсен тĕрлĕ сăпат формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**2. Кĕнекери 3-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене икĕ ушкăна уйăрса çыраççĕ.

Пахча çимĕç: кишĕр, сухан...

Улма-çырла: пан улми, хăмла çырли...

**3. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăмахсене çырма иккĕленсен 2-мĕш ĕçе пăхма сĕнмелле.

Çырас умĕн пахча çимĕç çинчен калаçмалла. Вĕрентекен çарăк кăтартать те ыйтать: — Ку мĕн? Вăл мĕнле? Çарăк ăçта ӳсет? Çарăк пахча çимĕç е улма-çырла? Эсĕ çарăк çиетĕн-и? Эсĕ çарăк юрататăн-и?

Хăш-пĕр хуравсене ачасем малтан доска çине, унтан тетраде çыраççĕ.

**4. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан ачасем ӳкерчĕк тăрăх вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ, унтан калав тăваççĕ.

— Ӳкерчĕкре çулталăкăн мĕнле вăхăтне сăнланă?

— *Çу вăхăтне.*

— Çанталăк мĕнле?

— *Çанталăк ăшă. Хĕвел пăхать.*

— Ачасем ăçта?

— *Ачасем пахчара.*

— Вĕсем мĕн тăваççĕ?

— *Вĕсем ĕçлеççĕ.*

— Ачасене ят парăр.

— *Саша, Лена, Миша.*

— Саша мĕн тăвать?

— *Саша кишĕр çумлать.*

— Лена мĕн тăвать?

— *Лена сухан çумлать.*

— Миша мĕн тăвать?

— *Миша кишĕр шăварать.*

— Саша, Лена, Миша мĕнле ачасем?

— *Саша, Лена, Миша ĕçчен, маттур ачасем.*

Калав тĕсĕ: Çулла. Урамра ăшă. Хĕвел пăхать. Ачасем пахчара ĕçлеççĕ. Саша кишĕр çумлать. Лена сухан çумлать. Миша кишĕр шăварать. Саша, Миша тата Лена ĕçчен, маттур ачасемпе сăмахсем.

**5. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кĕнекери ĕçсене пурнăçланă хыççăн ачасем ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ.

**6. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**7. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем вырăсла тата чăвашла предложенисене йĕр туртса çыхăнтараççĕ. Чăвашла предложенисен йĕркине цифрăсемпе палăртса текст тăваççĕ.

**8. Тетрадьри 5-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳхăнăхăвĕсене хаклани.**

**9. Киле ĕç пани.**

Пулă ячĕсене тата пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене астуса юлмалла.

**10. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# 98—99-мĕш уроксем

## Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çĕнĕ сăмахсемпе усă курса пулăра пулни çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) текста вуласа ăнланма, текст тăрăх ыйтусене хуравлама вĕрентесси; 2) панă предложенисенчен калав тума хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **вăлта, ăман, тăтăшах, Пăла, ярать, пулăра.**

***Грамматика материалĕ:*** хальхи вăхăтри глаголсен тĕрлĕ сăпат формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Пулăсен ячĕсене пĕлнине тĕрĕслени.**

Вĕрентекен пулăсен ячĕсене калать, ачасем ӳкерчĕксене кăтартаççĕ, унтан вĕрентекен ӳкерчĕксем кăтартать, ачасем вĕсен ячĕсене вырăсла тата чăвашла калаççĕ. Çакăн пекех ачасем пĕрпĕрне тĕрĕслеççĕ: пĕри пулă ятне чăвашла, тепри вырăсла калать, унтан ылмашăнаççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем чăваш сăмахĕсене вулаççĕ, пусăм ăçта ӳкнине сăнаççĕ, ăнлантараççĕ, пусăм правилисене аса илеççĕ.

**3. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем малтан сăмахсенче пусăм лартса тухаççĕ, унтан сăмахсене алфавит йĕркипе çыраççĕ.

**4. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва вуланă хыççăн вĕрентекен ӳкерчĕк тăрăх ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ.

— Ку кам? Ăна ят парăр.

— *Ку арçын ача. Арçын ача Ваня ятлă.*

— Ваня ăçта?

— *Ваня пулăра.*

— Вăл ăçта ларать?

— *Вăл Пăла хĕрринче ларать.*

— Пăлара мĕнле пулăсем пур?

— *Пăлара уланкă, карас, çăрттан, çупах пур.*

— Ваньăн мĕн пур?

— *Ваньăн витре, вăлта, ăман пур.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл пулă тытать?*

— Ваня мĕнпе пулă тытать?

— *Ваня вăлтапа пулă тытать.*

— Вăл мĕнле пулă тытнă? Витрере мĕнле пулă выртать?

*— Вăл уланкă тытнă. Витрере уланкă выртать.*

Ушкăнпа ĕçлесе ачасем ÿкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ, хут листисем çине çыраççĕ.

Калав тĕсĕ: Çулла. Ăшă. Хĕвел пăхать. Курăк, йывăççем симĕс. Ваня пулăра. Вăл Пăла хĕрринче. Пăлара пулă нумай: уланкă, карас, çăрттан, çупах. Ваньăн витре, вăлта, ăман пур. Вăл вăлтапа пулă тытать. Арçын ача уланкă тытнă. Уланкă витрере выртать. Ваня пулă тытма юрататъ.

Кашни ушкăн хăйĕн калавне вуласа парать, ыттисем хаклаççĕ, чи лайăххине суйласа илеççĕ. Хакланă чухне мĕн шута илессине ачасем малтан калаçса татăлаççĕ (сăмахсене тĕрĕс калани, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарни, предложенисене тĕрĕс йĕркелени, вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни, ÿкерчĕке уçса пани).

**5. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Калава **эпĕ** сăмаха **Дима** сăмахпа улăштарса калама çăмăл мар, çавăнпа малтан кашни предложенири мĕнле сăмаха мĕнлипе улăштармаллине ушкăнпа сÿтсе яваççĕ, доска çине çыраççĕ: **атте — ашшĕ, эпĕ — Дима, хатĕрлерĕм — хатĕрлерĕ, аттепе — ашшĕпе, кайрăмăр — кайрĕç, ятăм — ячĕ, тытрăм — тытрĕ, эпир — вĕсем, савăнтăмăр — савăнчĕç.**

**6. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ыйтусене «Пулăра» текстпа усă курса хуравлаççĕ.

**7. Йывăççен, кайăксен ячĕсене аса илни.**

Вĕрентекен йывăççен, кайăксен ÿкерчĕкĕсене е слайдсем кăтартать, ачасем чăвашла ячĕсене калаççĕ, сăмахсене доска çине çыраççĕ, мĕнле çырнине ăнлантараççĕ.

**8. Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Йывăççен, кайăксен, пулăсен ячĕсене аса илеççĕ, ушкăнласа çыраççĕ.

**9. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ, калав тăваççĕ, çыраççĕ, вуласа параççĕ, пĕр-пĕрин ĕçне хаклаççĕ, чи лайăх калава суйласа илеççĕ. Хакланă чух мĕн шута илмеллине малтан калаçса татăлаççĕ (предложенисем шухăшĕпе çыхăнни, ăнланмалла пулни).

Калав тĕсĕ: Эпир вăрманта. Вăрманта йывăççем ÿсеççĕ. Чăрăш, вĕрене, йăмра, юман, çĕмĕрт пур. Унта шурă, сарă, кăвак чечек нумай. Вăрман илемлĕ. Кайăксем хитре юрлаççĕ. Вăрманта аван!

**10. Тетрадьри 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен пĕлÿ-хăнăхăвĕсене хаклаççĕ, пурин умĕнче каласа параççĕ, ыттисем унпа килĕшнипе килĕшменнине пĕлтереççĕ, мĕншĕнне ăнлантараççĕ.

**11. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле, йывăçсен, кайăксен, пулăсен ячĕсене астуса юлмалла.

**12. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 100-мĕш урок

### Тема: Экскурсире

***Урок тĕллевĕ:*** экскурсире пулни çинчен калаçтарса ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) текст содержанийĕ тăрăх ыйтусем хатĕрлеме вĕрентесси; 2) экскурсире пулни çинчен пĕр-пĕринпе калаçма хăнăхтарасси.

***Лексика материалĕ:*** **тĕлĕрет, хапăл, хулă, чĕтренет.**

***Грамматика материалĕ:*** глаголăн тĕрлĕ формисем.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем чăвашла тата вырăсла панă сăмах майлашăвĕсене йĕр туртса çыхăнтараççĕ, астуса юлма тăрăшаççĕ, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тăваççĕ.

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Пĕрремĕш хут вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтăвне хуравлаççĕ:

— Сăвă кам çинчен, мĕн çинчен?

Иккĕмĕш хут вуланă хыççăн сăвăра ӳкерчĕке сăнлакан йĕркесене тупса вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ:

— Ача мĕн тăвать? Ачана ят парăр. Саша миçе çулта? (Вĕрентекен сăвăра тупса вулама хушать.) Вăл ăçта пулă тытать? (Атăл хĕрринче.) Мĕнпе пулă тытать?

Юлашкинчен «Пулăра» юрра (сăвви И. Малкайăн, кĕвви Ф. Лукинăн) юрлама вĕренеççĕ.

**3. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем текст тăрăх ушкăнпа хатĕрленĕ ыйтусене пĕр-пĕрне параççĕ, хуравлаççĕ. Текста тепĕр хут вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ.

**4. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем икшерĕн ĕçлесе диалога туса пĕтереççĕ, доска умне пĕрерĕн тухса калаççĕ, ыттисем итлеççĕ, хаклаççĕ. Ĕçе пуçличчен мĕнле хакласси çинчен калаçса татăлаççĕ (сăмахсене тĕрĕс калани, пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарни, предложенири сăмахсен йĕрки тĕрĕс пулни).

**5. Кĕнекери 4-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Иккĕмĕш класра чăваш чĕлхипе илнĕ пĕлӳ-хăнăхусене хакламамалли ĕçсем хатĕрлеççĕ: малтан иккĕмĕш класра мĕн-мĕн вĕреннине аса илеççĕ, вĕсене тĕрĕслеме мĕнле майсем пуррине калаççĕ, унтан ушкăнпа тĕрĕслев ĕçĕсем хатĕрлеççĕ, вĕсене туса пăхаççĕ, ытти ушкăнсен ĕçĕсемпе паллашаççĕ, хаклаççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

**7. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

## 101—102-мĕш уроксем

### Тема: Вĕреннине пĕтĕмлетни

***Урок тĕллевĕ:*** иккĕмĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетесси.

***Урок задачисем:*** 1) иккĕмĕш класра мĕн вĕреннине аса илтересси; 2) иккĕмĕш класра чăваш чĕлхипе илнĕ пĕлӳсене хаклама вĕрентесси.

***Лексика материалĕ:*** вĕрентӳçĕпе ачасем суйласа илекен темăсемпе сăмахсем.

***Грамматика материалĕ:*** вĕрентӳçĕпе ачасем суйласа илекен грамматика темисем.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнеке вĕçĕнче панă чăвашла-вырăсла тематика словарĕпе ĕçлени.**

Ачасем малтан хăйсем тĕллĕн словарьти сăмахсене вуласа тухаççĕ, унтан пĕр-пĕрне мĕнле астуса юлнине тĕрĕслеççĕ: пĕри сăмаха чăвашла е вырăсла калать, тепри вырăсла е чăвашла хуравлать.

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем Анюкпа Ванюк туса хатĕрленĕ тĕрĕслев ĕçĕсемпе паллашаççĕ, пахалаççĕ. Вĕрентекен çак ĕçсемпе усă курса класри ачасен пĕлӳ-хăнăху шайне тĕрĕслет, хаклать.

**3. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**4. Çыру тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсен пĕлӳ-хăнăхăвĕсен шайне тĕрĕслесе хаклани.**

**5. Урока вĕçлени. Сывпуллашни.**

# ТĔСЛĔХ ĔҪ ПРОГРАММИ

## I. Ăнлантару ҫырăвĕ

Иккĕмĕш класра вĕренмелли чăваш чĕлхи курсĕн тĕслĕх ĕҫ программине Раҫҫей Федерацийĕн «Вĕренӳ ҫинчен» ҫырнă Законăн 14-мĕш статйин 16-мĕш пунктне, 15-мĕш статйин 1-мĕш пунктне, 32-мĕш статйин 6-мĕшпе 7-мĕш пункчĕсене, шкул Уставне, пуҫламăш пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕхĕн тĕп вĕрентӳ программине пăхăнса хатĕрленĕ.

Тĕслĕх ĕҫ программине хатĕрленĕ чух усă курнă материалсем:

1. Вĕренӳ учрежденийĕнче пуҫламăш классем валли туса хатĕрленĕ тĕп вĕрентӳ программи.

2. Чăваш чĕлхи программи. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсен I—IV класĕсем валли / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева.

3. Чăваш чĕлхи. 2-мĕш класс / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016.

4. Ĕҫ тетрачĕ. 2-мĕш класс валли (I, II пайсем) / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016.

5. Иккĕмĕш класра чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар, 2017.

Тĕслĕх ĕҫ программине ҫĕнĕ стандартсене пăхăнса ҫырнă. Программăн тĕп тĕллевĕ — иккĕмĕш класра пĕрремĕш класра вĕренни ҫине таянса малаллахи тапхăрсенче чăваш чĕлхине вĕренме никĕс хывасси, вĕренме вĕрентесси.

Вырăсла калаҫакан ачасене чăвашла калаҫма вĕрентес ĕҫре пуҫламăш шкул тивĕҫĕ калама ҫук пысăк. Шăпах пуҫламăш классенче ача чăвашла пуплеве ăнланас, чăвашла калаҫас, вулас, ҫырас пирвайхи хăнăхусене туянать. Чăваш чĕлхине вĕреннĕ май пĕчĕк ачан ăсĕ-тăнĕ аталанать, тавракурăмĕ анлăланать, ача ытти халăх ҫыннисене хисеплеме хăнăхса пырать. Ҫакă вара ăна малалла, вăтам тата аслă классенче, чăваш чĕлхине, чăваш халăхĕн историйĕпе культурине тухăҫлă вĕренме питех те кирлĕ.

Чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи пек вĕрентнин тĕп тĕллевĕ — ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси. Уроксенче эпир ачасене чăвашла калаçăва ăнланма, хăйсене те калаçма, чăвашла вулама-çырма вĕрентетпĕр.

Чăваш чĕлхине вĕрентессин сапăрлăх аспекчĕ те калама çук анлă. Уроксенче тăван ен культурипе те, чăваш халăхĕн историйĕпе те паллаштаратпăр. Ачасем чăваш халăхĕн пуян историйĕпе, тĕрлĕ енлĕ культурипе кăсăкланччăр, чăвашсен Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери вырăнĕпе пĕлтерĕшне курма, туйма хăнăхчăр тесе тăрăшатпăр. Уроксенче чăваш, вырăс тата ытти халăхсен мĕн авалтан çирĕпленнĕ ырă енĕсене, ĕçĕсене кăтартса парса ачасенче çав енсене аталантарма тăрăшатпăр. Тĕрлĕ халăх ачисене пĕр-пĕрин чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине, сăмахюмахне, кĕвви-юррине хисеплеме вĕрентетпĕр. Çакă чăваш чĕлхи урокĕсенче, чăваш чĕлхипе çыхăннă класс тулашĕнчи ĕçсенче çураçулăх (толерантность) туйăмне аталантарма пулăшĕ. Иккĕмĕш класра чăваш чĕлхи вĕрентес ĕç содержанинче асăннă тĕллеве пурнăçламалли материал анлă кĕртнĕ. Кунта чăваш халăхĕн историйĕпе, чăвашсен тумĕпе, Чăваш Енĕн хули-ялĕсемпе, шыв-шурĕпе, Чăваш Енре тĕл пулакан йывăççемпе, кайăксемпе, пулăсемпе тата ытти чĕр чунсемпе паллаштаракан материал чылай.

**Курса пĕтĕмĕшле хак пани.**

Программа чăваш чĕлхине ачасене ăнланса вĕрентме; вĕрентĕве ачасен çулне, вĕсен аталанăвĕн шайне шута илсе йĕркелеме; пĕлĕве, хăнăхусемпе ăслайсене çирĕп системăра парса пыма, вĕрентĕвĕн содержанине ăслăлăх енчен тивĕçлĕ шайра йĕркелеме; уроксенче ачасене пур енлĕн аталанмашкăн условисем туса пама; вĕреннине тăтăшах аса илсе çирĕплетсе пыма; курăм хатĕрĕсемпе анлă усă курма майсем туса парать.

Чăваш чĕлхине ачасем патшалăх чĕлхи пек вĕренеççĕ, çавăнпа чи малтанах вĕренекенсем уроксенче туяннă пĕлӳсемпе, хăнăхусемпе тата ăслайсемпе кулленхи пурнăçра усă курма пултарччăр тесе ĕçлемелле, вĕрентĕве те çак тĕп принципа шута хурса йĕркелемелле. Вĕрентĕве пурнăçри пек е пурнăçа çывăх тăвасси, уроксенче хутшăну саманчĕсем йĕркелесси — чи кирли. Хальхи вăхăтра вырăсла калаçса ӳсекен ачасем пурнăçра хăçан, мĕнле ситуацире, мĕнле темăпа чăвашла калаçма-хутшăнма пултараççĕ, çав темăсем, пуплев ситуацийĕсем уроксенче тĕл пулаççĕ. Вăл е ку ситуацире хăйне чăвашла калаçма-хутшăнма мĕн кирлине уроксенче ача йăлтах туянать.

Уроксенче пуплев ĕçĕ-хĕлне (пуплеве итлесси-тăнлассине, калаçассине, вуласси-çырассине) пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса

вĕрентсе-хăнăхтарса пымалла. Ку тепĕр тĕп шухăш. Программа ачасен урокри калаçăвне те, вулавне те, çырăвне те пĕр темăран тухмасăр йĕркелеме май парать. Вĕренекенсем итлев-тăнлав ĕçĕсенче те, калаçу, вулав, çыру ĕçĕсенче те чĕлхен пĕр единицисемпех усă кураççĕ. Çак принципа тытса пыма, вĕрентӳ содержанийĕнчи кашни ăслая, хăнăхăва аталантарса пыма ятарласа йĕркеленĕ хăнăхтарусен системи пулăшать.

Вырăсла калаçса ӳсекен ачасене чăваш чĕлхине вĕрентесси, паллах, вырăс чĕлхи çине таянмасăр пулаймасть, анчах та ачасен пĕлĕвĕн, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсен шайĕ ӳссе пыни тăван чĕлхе çине сахалрах та сахалрах таянма май парать, çĕнĕ материалпа ĕçленĕ чух кăна ăна тăван (вырăс) чĕлхипе танлаштарма тивет.

Программа чăваш чĕлхине ытти предметсемпе çыхăнтарса вĕрентме майсем шырама хистет. Çакă, пĕр енчен, предметăн пĕлтерĕшне ачасен умĕнче çӳллĕрех шая çĕклет, тепĕр енчен, вĕсене чăвашла ытларах калаçтарма майсем туса парать. Ачасем чăваш чĕлхине те хутшăну хатĕрĕ пек йышăнма пуçлаççĕ.

Калаçу-тăнлав, вулав-çыру темисем пĕтĕмпех ачасен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, вăййи-куллипе çыхăннă. Кунсăр пуçне, уроксенче ачасен тăван енпе, хамăр енре пурăнакан тĕрлĕ халăхăн культурипе паллашма, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕренме май пур. Ачасем уроксенче тăван енри хула-ял, юхан шыв, кайăк-кĕшĕк, йывăç-курăк ячĕсене чăвашла калама вĕренеççĕ, чăваш халăхĕн алĕç культурипе, тăван енри паллă çынсемпе паллашса пыраççĕ. Çакă чăваш ачисене тăван халăха юратма, чăваш мар ачасене чăваш халăхне хисеплеме хăнăхтарса пырать. Халăх сăмахлăхĕн вакрах жанрĕсене (ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене, ачапăча сăвви-юррисене, юмахсене) программăна кĕртни те çӳлерех асăннă принциппа килĕшсе тăрать. Çакнашкал материал кашни урокрах пур.

Ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарса пынă май пуплев этикетне вĕрентесси çинчен те манмалла мар, çавăнпа та уроксенче пуплев этикечĕпе çыхăннă хăнăхтарусемпе ĕçсем те пур.

Иккĕмĕш класра та, пĕтĕмĕшле илсен, пуплев темисем пĕрремĕш класри пекех, анчах вĕсене иккĕмĕш класра анлăрах, кăткăслатарах панă. Ачасем пĕр темăпах калаçаççĕ те, вулаççĕ-çыраççĕ те, анчах иккĕмĕш класра вĕсен пĕлĕвĕ тарăнланать, хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсем анлăланаççĕ, çирĕпленеççĕ.

Вĕренӳ ĕçне ачасене хатĕр пĕлӳ парса мар, хăйсене яланах шыравра çӳретсе йĕркелетпĕр, çĕнĕ материала вĕренӳ задачисем урлă уçса паратпăр. Учителе вĕренӳ задачисене лартма вĕренӳ пособийĕнчи геройсем пулăшаççĕ. Вĕсем пĕрремĕш класрисе-

мех. Геройсем (Анюкпа Ванюк) хӑйсем ӑнлантарса парайман чӗлхе пулӑмӗсемпе тӗл пулсан сиксе тухнӑ ыйтӑва мӗншӗн хуравлайманнине тишкерсе ачасемпе пӗрле хӑйсен умне вӗренӳ задачи кӑларса тӑратаҫҫӗ. Сӑмахпа каласа палӑртнӑ задачӑна модельсемпе усӑ курса кӗскен ҫырса хураҫҫӗ. Лартнӑ задачӑна хуравлама ачасем тӗрлӗ меслет сӗнеҫҫӗ, вӗсене тӗрӗслесе пӑхаҫҫӗ. Пулнӑ результатсене тишкерсе пӗтӗмлетеҫҫӗ, Сергей Сергеевич профессор (кӗнеке геройӗ) ӑнлантарса панипе танлаштарса пӑхаҫҫӗ. Тунӑ пӗтӗмлетӗве (правило-ориентира) схемӑсемпе е модельсемпе ҫырса хураҫҫӗ. Вӗренӳ ӗҫне ҫакӑн пек йӗркелени ачасене хавхалантарать. Чи хакли вара — вӗренмелли меслетсемпе паллашма, малалла вӗсемпе усӑ курма вӗренме май парать.

Вӗренме вӗрентес ӗҫре ача хӑйӗн пӗлӗвне, пултарулӑхне хаклама пӗлни питӗ паха. Вӗренекеншӗн хӑй мӗн пӗлнине пӗлменнинчен уйӑрма пултарни кулленхи шкул ӗҫӗ-хӗлӗнче ҫав тери хаклӑ. Ҫакна шута илсе ачана хӑйӗн ӗҫне хаклама вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫ программинче хӑйне майлӑ система йӗрленсе пырать. Пӗрремӗш класра ачасен пӗлӗвне паллӑ лартса хакламан, вӗренекенсем хӑйсен ӗҫне «хак татӑкӗсемпе» усӑ курса хакланӑ. Ачасем ӗҫ тетрадӗнче уйӑрса хунӑ критерисен йышне кура темиҫе вертикальлӗ татӑк туртнӑ. Кашни татӑк ҫинче ӗҫӗн вӑл е ку енне хакласа паллӑ тунӑ. Лайӑх ӗҫшӗн паллӑ ҫӳлте пулнӑ, начар ӗҫшӗн — аялта. Пӗрремӗш класра ачасем ӗҫе тӗрлӗ енлӗ (тӗрлӗ критерисемпе) хаклама май пуррине ӑнланнӑ, хакламалли критерисене пӗрле тума, хатӗр критерисемпе ӗҫлеме, пӗчӗккӗн тӗрлӗ ӗҫсене хӑйсем тӗллӗн хаклама вӗреннӗ. Ҫапла майпа пӗрремӗш класра ачасем тӗрлӗ ӗҫе мӗншӗн ҫапла хакланине, мӗнле критерисемпе ӗҫленине ӑнлантарса пама вӗренсе пынӑ. Иккӗмӗш класра ҫак ӗҫе малалла тӑсатпӑр. Иккӗмӗш класра вӗренекенсен ӗҫне паллӑсем лартса хаклатпӑр, анчах та ачан тимлесе, ӑнланса вӗренес тесен хӑйӗн ӗҫне хӑйӗн хак пама пӗлмелле. Ҫакна шута илсе авторсем урокра кашни ӗҫе пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн е урок вӗҫӗнче ачасене хӑйсен ӗҫне хаклама сӗнеҫҫӗ. Ҫак тӗллевпе ӗҫ тетрадӗнче ятарлӑ таблицӑсем туса панӑ. Таблицӑн пӗрремӗш юпинче ачасен урокри ӗҫӗн тӗсӗсене кӑтартнӑ. Иккӗмӗш юпинче ачасем хӑйсем пурнӑҫланӑ ӗҫсене хӑйсемех хак параҫҫӗ. Таблицӑн виҫҫӗмӗш юпинче ҫак ӗҫсенех вӗрентекене хаклама сӗннӗ. Ҫапла вара, урок вӗҫӗнче кашни ача хӑй мӗн лайӑх пӗлнине, мӗн пӗлменнине, урокра мӗнле йывӑрлӑхсемпе тӗл пулнине питӗ лайӑх туйса илет. Учитель вара малалла ачапа уйрӑммӑн ӗҫлеме пултарать. Ҫакӑн пек ӗҫлени пӗлӳ пухма ҫеҫ мар, ачасенче харпӑр хӑйлӑх, йӗркелӳ, пӗтӗмӗшле пӗлӳлӗх, хутшӑну пултарулӑхӗсене

аталантарма пулăшĕ. Апла пулсан, чăваш чĕлхи урокĕсенче республикăмăрăн патшалăх чĕлхине вĕреннĕ май ачасем пур енлĕн аталанса пырĕç. Программа содержанийĕ çапла ĕçлеме майсем туса парать.

**«Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн пахалăхĕ:**

— вырăсла калаçса ÿсекен ачасене Чăваш Республикин патшалăх чĕлхине вĕрентни;

— ачана ытти халăх çыннисене хисеплеме хăнăхтарса пыни, çураçулăх (толерантность) туйăмĕсем çуратни;

— ачасенчен интернационалистсем хатĕрлени, пĕр-пĕринпе харкашмасăр, пĕр-пĕрне кÿрентермесĕр пурăнма вĕрентни;

— тăван ен культурипе, чăваш халăхĕн историйĕпе паллаштарни, вĕсене малалла тухăçлă вĕренме никĕс хывни;

— ачана чăваш халăхĕн пуян историйĕпе, тĕрлĕ енлĕ культурипе кăсăкланма, чăвашсен Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери вырăнĕпе пĕлтерĕшне ăнланма, туйма хăнăхтарни;

— чăваш, вырăс тата ытти халăхсен мĕн авалтан çирĕпленнĕ ырă енĕсене, ĕçĕсене кăтартса ачасенче çав енсене аталантарма тăрăшни;

— чăваш чĕлхине вĕреннĕ май пĕчĕк ачан ăсĕ-тăнĕ аталанни, тавракурăмĕ анлăланни.

## II. «Чăваш чĕлхи» предмета вĕреннĕ май пулмалли результатсем

**1. Харкамлăх результачĕсем (личностные результаты):**

— шкула каяс, шкулта вĕренес туйăм ÿсни;

— тăван енĕн, шкулăн, класăн, тăван килĕн, çемьен харпăр хăй пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕпе вырăнне ăнланни;

— килти выльăх-чĕрлĕхĕн, тискер чĕр чунсен, пахча çимĕçĕн, тыр-пулăн çынсен пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне ăнланса илни;

— шкул ачин кун йĕркине пĕлни, кун йĕркине тытса пыма хăнăхса пыни;

— хăш-пĕр ĕçе пĕччен мар, ытти çынсемпе пĕрле пурнăçлани вырăнлăрах пулнине ăнланни;

— вĕренÿ ĕç-хĕлне хăнăхни;

— пĕр вăхăтрах пурин те пĕрле калаçма юраманнине, пĕрин хыççăн теприн калаçăва хутшăнмаллине, пĕр-пĕрне тимлесе итлемеллине пĕлни, çапла калаçма хăнăхни;

— класри ачасене, ваттисене хисеплени;

— вĕрентÿçĕн, ашшĕ-амăшĕн, аслисен, юлташĕсен сĕнĕвĕсене тĕрĕс ăнланма, шута илме пултарни;

— кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине ăнланни;
— хальхи вăхăтра пĕр чĕлхе çеç пĕлни çителĕксĕр пулнине тавçăрни;
— чăвашла пĕлни чăваш халăхне лайăхрах ăнланма пулăшнине тавçăрни;
— чăвашла вĕренес кăмăл малалла аталанни;
— ачан кăсăклăхĕ малалла аталанни, пĕлменнине пĕлес туйăм, вĕренес кăмăл ӳсни.

**2. Пур предмета та вĕреннĕ чух кирлĕ хăнăхусемпе ăслайсем (метапредметные результаты).**

***Пĕлӳ туянма пулăшакан результатсем:***
— çырнă чухне тĕрĕс ларни, çыру хатĕрĕсемпе кирлĕ пек усă курни;
— модельсемпе усă курса шухăша кĕскен çырса хума вĕренни;
— çĕннине пĕлме тĕрлĕ вĕренӳ хатĕрĕсемпе усă курма пултарни;
— япаласен, пулăмсен тĕп паллисене курма вĕренни;
— çут çанталăкăн тĕрлĕ вăхăчĕсен паллисене, тĕрлĕ вăхăтри пулăмсене, кашни вăхăтра çынсем мĕнле ĕçсем тунине пĕлни;
— текстпа ĕçлеме вĕренни.

***Йĕркелӳ-хаклу результачĕсем:***
— ĕçе пуçăниччен унăн тĕллевне лайăх ăнланмаллине пĕлни;
— кашни çыннăн хăйĕн умне яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни;
— ытти çынсен сĕнĕвне тĕрĕс ăнланма, шута илме пултарни;
— харпăр хăйĕн, юлташĕн ĕçне хаклама, йăнăшсене курма, тӳрлетме вĕренни;
— мĕн вĕренни, мĕн туни çинчен каласа пама хăнăхни;
— çыру ĕçĕн йĕркине пĕлни;
— мĕн вĕреннине, мĕн вĕренмеллине калăплама, ĕç-хĕлĕн юхăмне, результатне асăрхаса пыма, ĕçе хаклама вĕренни.

***Хутшăну результачĕсем:***
— вĕрентӳçĕ, юлташсем каланине итлеме пултарни;
— калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă, ăнланмалла каласа пама тăрăшни;
— вĕренӳпе çыхăннă ыйтусем пама пĕлни;
— харпăр хăй шухăшне ыттисене ăнлантарса пама пултарни;
— ĕçе ушкăнпа шăкăл-шăкăл калаçса, пĕр-пĕрин хушшинче пайласа пурнăçлама вĕренни;
— пулăшу ыйтма, ыттисене пулăшма хатĕр пулни, йывăрлăхсене палăртма, çĕнтерме хăнăхни;
— иккĕн калаçу йĕркелеме пĕлни.

**3. «Чăваш чĕлхи» предметăн пайрам результачĕсем (предметные результаты):**

— сăмахсен сасă моделĕсене тума вĕренни;

— вырăс чĕлхине пĕлнипе чăваш чĕлхине вĕреннĕ чух усă курма пултарни;

— кашни сăмахăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пулнине, пĕлтерĕшне кура вĕсене ушкăнланине, сăмахсем хушшинче ытлашшине тупма пĕлни;

— япаласене сăнама, ушкăнлама хăнăхни;

— ансат калăплă предложенисене тĕрĕс йĕркелеме пултарни;

— текст, предложени, сăмах схемисене тума, панă схемăсемпе, модельсемпе усă курса текст йĕркелеме, предложени, сăмах тупма пултарни;

— пуплеврен предложенисене, предложенирен сăмахсене, сăмахран сыпăксене, сыпăкран сасăсене уйăрса илме пĕлни;

— предложенисен, сăмахсен, уçă тата хупă сасăсен паллисене, схемисене пĕлни, вĕсемпе усă курни;

— уçă тата хупă сасăсене уйăрни, вĕсенчен сыпăксемпе сăмахсем туни, предложенисем калăплани;

— пусăм çинчен пĕлни, пусăм тĕрĕс лартса сăмахсене вулама вĕренни;

— чăваш алфавитĕнчи сас паллисене паллама тата çырма пĕлни;

— программăра панă сăмахсене пĕлни, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхни;

— вĕреннĕ темăсемпе 3—4 предложенирен тăракан пĕчĕк текст тума пултарни;

— япалана, япала паллине, ĕçе пĕлтерекен сăмахсене уйăрма пĕлни;

— хупă сасăсем янравлă тата янравсăр, çемçе тата хытă пулнине пĕлни, вĕсене уйăрма пултарни;

— чăваш чĕлхинчи вулав тата çыру правилисене пĕлни, чăвашла тĕрĕс вулама тата çырма хăнăхни;

— пăхса çырса илме пĕлни.

## III. Вĕренӳ курсĕн содержанийĕ
*(102 сехет)*

**Тема: Сывă-и, шкул? Сывă-и, ачасем! Вĕреннине аса илетпĕр, вулама-çырма вĕренетпĕр, хăнăхатпăр** *(14 сехет).*

1-мĕш класра вĕреннĕ пуплев материалне аса илесси.

**[Ă], [ĕ], [ç], [ӳ]** сасăсемпе ĕçлесси, вĕсене палăртакан **Ăă, Ĕĕ, Çç, Ӳӳ** сас паллисем. **Ă, ĕ, ç, ӳ** сас паллиллĕ сăмахсене вулама, çырма хăнăхасси. Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсен системине аса илесси.

Сăмахсенчи уçă тата хупă сасăсене уйăрма хăнăхасси.

Сасăсен килĕшĕвне пăхăнса (çемçен е хыттăн) вулама хăнăхасси.

**В** сас паллипе пĕтекен сăмахсене вулама вĕренесси.

Икĕ уçă сасă хушшинчи хупă сасă янăраса илтĕнни, ăна çырура янăраман хупă сассăн паллипе палăртасси. Çавăн йышши сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма хăнăхасси.

Кăтарту наклоненийĕн хальхи вăхăт формисемпе пуплевре усă курма хăнăхасси.

Çитĕннĕ çынсене хисеплесе, вĕсемпе калаçнă чух **Эсир, Сире, Сирĕн** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Япалана, япала паллине, ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрма хăнăхасси. Вĕсен схемисемпе усă курса предложенисем йĕркелесси. Панă предложенисен схемисем патне тĕслĕхсем тупасси.

Сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе вуласси, çырасси.

Ӳкерчĕке сăнласа паракан текста суйласа илесси.

Текст тăрăх ыйтусем парасси, вĕсене хуравласси.

**Тема: Кĕрхи кунсем** *(7 сехет).*

Чăвашла вулав вăрттăнлăхĕсене шута илсе вулама хăнăхасси. Чăваш алфавичĕпе паллашасси, ăна вырăс алфавичĕпе танлаштарасси, сăмахсене алфавит йĕркипе лартма вĕренесси. Уçă сасă, хупă сасă, хытă хупă сасă, çемçе хупă сасă терминсемпе паллашасси, пуплевре усă курасси. Пусăм правилисемпе паллашасси, вĕсемпе усă курса сăмахсене тĕрĕс вуласси. **Манăн, санăн, унăн** сăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле пуплевре усă курасси. **Ăçта?** ыйтăва хуравлама, хуравланă чух **çине, çинче, патне, патĕнче, умне, умĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

«Шкул», «Пӳлĕм», «Килти чĕр чунсем», «Çуллахи ĕçсем», «Апатçимĕç», «Пахча çимĕç» темăсемпе 4—5 ансат предложени туса каласа пама хăнăхасси. Чăвашларан вырăсла куçарма вĕренесси.

**Т е м а: Кун йӗрки** *(11 сехет).*

**Ă, ĕ, ÿ, ç** сас паллилле сăмахсене сасăсен килĕшĕвне пăхăнса вулас хăнăхăва малалла аталантарасси.

Çемçе, вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсем, **е, ю, я** сас паллилле сăмахсем. Вĕсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

Икĕ уçă сасса тата ялан янравлă хупă сасăпа уçă сасса пĕлтерекен сас паллисем хушшинчи хупă сасса пĕлтерекен сас паллине янăратса вулама, ăна çырура тĕрĕс палăртма хăнăхасси.

Чăваш алфавичĕпе усă курма вĕренесси.

Пусăм правилисемпе усă курма вĕренесси.

Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен сăпатланăвĕпе, хисеп улшăнăвĕпе, вĕсен пурлă тата çуклă формипе паллашасси.

Кăтарту наклоненийĕнчи хальхи вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисеприглаголсемпе пуплевре усă курасси.

Япала ячĕн камăнлăх формисемпе пуплевре усă курма вĕренесси.

Япаласене ушкăнлама хăнăхасси, пĕтĕмлетÿ сăмахĕсене астуса юласси.

**«Ку манăн (санăн, унăн, Сашăн) + яп.я.»** йышши пуплев ĕлки. Çак ĕлкепе усă курса предложенисем тума хăнăхасси.

Т ĕ с л ĕ х р е н: Ку санăн кĕнекÿ-и? — Ку манăн кĕнеке. Саша, мана кĕнеке пар-ха. — Акă санăн кĕнекÿ. Ку Сашăн кĕнеки.

**Ăçта?** ыйтăва хуравлама хăнăхасси.

**«Яп.я. + çине, çинче (умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче)»** пуплев ĕлкипе усă курса предложенисем тума вĕренесси:

1. — Илемпи, кĕнекене сĕтел çине хур.

— *Эпĕ кĕнекене сĕтел çине хуратăп.*

— Илемпи, сĕтел çинче кĕнеке пур-и?

— *Сĕтел çинче кĕнеке пур.*

— Вова, доска умне тух.

— *Эпĕ доска умне тухатăп.*

— Вова ăçта тăрать?

— *Вова доска умĕнче тăрать.*

Кун каçа мĕн ĕçлени çинчен 4—5 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси, юлташсемпе калаçма хăнăхасси. **Тархасшăн** йышши сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

**Т е м а: Ăстасен çĕршывĕнче** *(15 сехет).*

Чăвашла вулавăн вăрттăнлăхĕсене (маларах вĕреннисене) астуса юлнине, вулама тата çырма пĕлнине малалла аталантарасси.

Чăваш чĕлхинчи пусăм (ударени) системипе усă курса пусăм тĕрĕс лартма вĕренесси.

***-Çă(-çĕ)*** аффикс хушса çĕнĕ сăмахсем тума вĕренесси, вĕсемпе предложенисем тăвасси.

**Тĕрĕ — тĕрлет — тĕрĕçĕ** йышши сăмахсен хушшинчи çыхăнăва уçса парасси.

**Çине, çинче, умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе предложенисем тума хăнăхасси.

Ĕçе пĕлтерекен сăмахсене тĕрлĕ сăпатра лартса предложенисем тума вĕренесси. Предложенири сăмахсен йĕрки çинчен аса илесси.

Япала ячĕн камăнлăх формисемпе усă курма хăнăхасси.

Чăваш тумĕпе, тĕррипе паллашасси.

Сăмахсене ушкăнлама хăнăхасси.

Чăвашларан вырăсла куçарасси.

Сăмахсенчен предложенисем йĕркелеме вĕренесси.

Предложенисенчен текст тăвасси. Тĕрлĕ профессипе ĕçлекен çынсем çинчен 4—5 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси.

**Тема: Юратнă тăван çĕршывăм** *(6 сехет).*

Янăраса илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсене аса илесси.

Япала ячĕсене камăнлăх формине, глаголсене çуклă формăна лартма хăнăхасси.

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ тата пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Хирĕçленине **ан** татăкпа усă курса палăртма вĕренесси.

Чăваш вăййисемпе паллашасси.

Юлташ çинчен каласа пама хăнăхасси.

Тантăш патне çыру çырма вĕренесси.

**Тема: Çĕнĕ çула хатĕрленетпĕр** *(6 сехет).*

Вулав хăнăхăвне аталантарасси. Пусăм тĕрĕс лартма хăнăхасси.

**Валли, хыççăн** сăмахсемпе усă курма вĕренесси.

Çынна пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисемпе усă курасси. Тĕрлĕ вăхăтри глаголсене пуплеве кĕртесси.

Саламлă çыру çырма вĕренесси.

Çĕнĕ çула хатĕрленни çинчен ансат предложенисемпе каласа пама вĕренесси.

Вырăсларан чăвашла куçарасси.

**Тема: Хĕл çитрĕ** *(14 сехет).*

Вулав тата çыру хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси.

**[Йĕ], [йă], [йӳ]** сасăсен çыхăнăвĕсем пур сăмахсене тĕрĕс калама, тĕрĕс вулама-çырма хăнăхасси.

Юнашар тăракан икĕ пĕр пек хупă сас паллине вăрăммăн вулама вĕренесси **(пĕррехинче, таврăннă, параппан, аллă)**.

***-Çă(-çĕ)*** аффикссемпе сăмахсем тума хăнăхасси.

Камăнлăх формисенчи япала ячĕсемпе предложенисем тăвасси:

— Валя, Ленăн кам пур?

— *Ленăн ашшĕ, амăшĕ, аслашшĕ, асламăшĕ пур.*

**Ăçта?** (куда? где?), **мĕнпе?** ыйтури сăмахсемпе предложенисем тума вĕренесси.

Хĕл çинчен, юлташ çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕренесси.

Пĕрре иртнĕ (курса иртнĕ) вăхăтри глаголсемпе, вĕсен сăпатланăвĕпе, пурлă тата çуклă формисемпе паллашасси.

Хĕллехи каникулта мĕн туни çинчен каласа пама вĕренесси.

**Тема: «Шутлама вĕренетпĕр»** *(5 сехет).*

Чăвашла çĕр таран шутлама вĕренесси, вĕсене япала ячĕсемпе юнашар тăнă чух тĕрĕс калама вĕренесси, хисеп ячĕсен кĕске формипе хăçан усă курнине ăнланса илесси.

**Миçе тенкĕ тăрать?** ыйтăва хуравлама вĕренесси.

**Вуннă тата виççĕ миçе пулать? — Вуннă тата виççĕ вун виççĕ пулать** йышши пуплев пĕрлĕхĕсене калама вĕренесси.

Пушă вăхăтра мĕн туни çинчен 5—6 ансат предложенипе каласа пама вĕренесси.

**Тема: Пирĕн çемье** *(8 сехет).*

**Мĕн кирлĕ, кил кунта** йышши сăмах çыхăнăвĕсенче иккĕмĕш сăмах пуçламăшĕнчи хупă сас паллисен сассисене янăратса калама, тĕрĕс вулама хăнăхасси.

Сăмахри юнашар тăракан икĕ пĕр пек сас паллине вăрăммăн каласа тĕрĕс вуласси **(анне, атте, лайăххи)**.

Пусăм тĕрĕс лартса вулама хăнăхасси.

Камăнлăх формине йышăннă япала ячĕсемпе пуплевре анлăрах усă курасси.

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупма хăнăхасси, вĕсене пуплеве кĕртесси **(вată — çамрăк, пысăк — пĕчĕк)**.

***-Çăм(-çĕм)*** аффикссем хушса **аннеçĕм, аппаçăм** йышши сăмахсем тăвасси.

Хушу наклоненийĕнчи глаголсемпе пуплевре усă курма вĕренесси.

Эрнери кун ячĕсене аса илесси.

**Чи лайăххи** йышши пĕрлешӳсемпе предложенисем йĕркелесси.

Çемье, çемьери çынсем çинчен ансат предложенисемпе каласа пама вĕренесси. Саламлă çыру çырма вĕренесси.

**Тема: Çуркунне** *(7 сехет).*

Сăмахсене пусăм тĕрĕс лартса вуласси.

Янравлă хупă сасăллă, **[нч], [лч]** сасăсен çыхăнăвĕсем пур сăмахсене тĕрĕс вулама, çырма вĕренесси.

Пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсемпе пуплевре усӑ курма вӗренесси. Ҫурхи уйӑхсен ячӗсене ас туса юласси.

**Ӑҫта?** ыйтӑва хуравлама хӑнӑхасси. Хальхи, пӗрре иртнӗ вӑхӑтри глаголсене, иртнӗ причастисене пуплеве кӗртесси.

**Умне, умӗнче, ҫине, ҫинче, патне, патӗнче** сӑмахсемпе предложенисем тӑвасси.

Сӑмахсенчен предложенисем йӗркелесе ҫырасси.

**Тема: Ҫулла** *(6 сехет).*

Вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене аса илесси.

Йывӑҫ, чечек, вӗҫен кайӑк, пулӑ ячӗсемпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхасси.

Сӑмахсене ушкӑнлама вӗренесси.

**Мӗнле?** ыйтури сӑмахсемпе усӑ курасси. Пулас вӑхӑтри глаголсене пуплеве кӗртесси.

Чӑвашла вуланине вырӑсла калама хӑнӑхасси.

Вырӑсларан чӑвашла куҫарасси.

Панӑ предложенисенчен текст йӗркелеме вӗренесси.

Калаҫу, тӑнлу, вулав тата ҫыру хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси.

**Тема: Ҫулталӑк вӑхӑчӗсем. Вӗреннине аса илсе тӗрӗслер** *(3 сехет).*

**Хӑш вӑхӑт? миҫемӗш?** ыйтусене хуравлама вӗренесси.

Ҫулталӑк вӑхӑчӗ ҫинчен каласа пама вӗренесси.

Вӗреннине аса илесси. Тӗрлӗ вӑхӑтри глаголсемпе ачасене усӑ курма вӗрентесси.

Ачасен пуплев хӑнӑхӑвӗсене, вӗсем тӗрӗс, ӑнланса вулама, пӑхса ҫырса илме пӗлнине тӗрӗслесси.

### Асра хӑвармалли сӑмахсем

Авӑрт *(гл.)*, авӑт *(гл.)*, алӑ ҫуп *(гл.)*, аллӑ, алсиш, ал шӑлли, ама хупахӗ, аман *(гл.)*, анчӑк, апат-ҫимӗҫ, аркӑ, арман, арманҫӑ, асӑрхануллӑ, астуса, аташса, атӑ, атӑҫӑ, ахаль. Ӑман, ӑна, ӑсат *(гл.)*, ӑслӑ, ӑста, ӑшала *(гл.)*. Валли, васка *(гл.)*, ватӑ, ватӑл *(гл.)*, вӑйӑ, вӑйлӑ, вӑлта, вӑрҫӑ, вӑтан, вӑтӑр, вил *(гл.)*, вит *(гл.)*, вула, вун виҫҫӗ, вун иккӗ, вун пӗр, вун пиллӗк, вун саккӑр, вун ҫиччӗ, вун тӑваттӑ, вун тӑххӑр, вун улттӑ, выля *(гл.)*, вырӑн, выҫ. Ен (енне). Ӗмӗр, ӗҫчен. Илемпи, ирхи апат, ирхине. Йӑва, йӑвала, йӑмра, йӗм, йӗп, йӗпе, йӗр *(гл.)*, йывӑҫ. Кавир, кай *(гл.)*, кайран, кала, калпак, карас, карҫинкка, кас (урам), кас *(гл.)*, кастрюль, каҫ *(яп.я.)*, каҫ *(гл.)*, каҫхине, кӑвакарчӑн, кӑвак ҫеҫпӗл, кӑкшӑм, кӑлар *(гл.)*, кӑнтӑрла, кӑсӑя, кӑтарт *(гл.)*, кӗлетке, кӗмӗл, кӗпе ҫӑвакан, кӗрӗк, кӗт *(гл.)*, кивӗ, килӗштер, кимӗ, кинемей, кукӑр, кукка, кулач, кулса, курак, кӳр *(гл.)*. Лайӑххи, лантӑш, лӑпкӑ, лӗпӗш. Малта, малтан, ман *(гл.)*, манӑн, мӑлатук, михӗ,

мухтан *(гл.)*, мучи. Наян, нихăçан. Паллаш *(гл.)*, паллă, параппан, парне, патне, патĕнче, паттăр, пашалу, пашка *(гл.)*, пăнтăртат *(гл.)*, пăр *(яп.я.)*, пăр *(гл.)*, пăрçа, пăшатан, пĕл *(гл.)*, пĕрле, пĕрмай, пĕррехинче, пĕçер *(гл.)*, пир, пир тĕртекен, пиçихxи, пул *(гл.)*, пулăç, пулăш *(гл.)*, пурĕ, пуринчен, пурнăç, пуртă, пурте, пуçлар *(гл.)*, пушă вăхăт, пушмак, пуянлăх, пӳрнеске, пыр *(гл.)*. Сав *(гл.)*, савăн *(гл.)*, савăт-сапа, сакăр вуннă, саламла, саппун, сас палли, сехет, сивĕн *(гл.)*, сире, сирĕн, столовăй, сулă, сулла *(гл.)*, сурпан, сурхури, суха ту *(гл.)*, сухан, сывă-и, сывлăхлă, сывлăх сун, сыпăк, сырăш, сыхла *(гл.)*. Çаврашка, çаврăн *(гл.)*, çак *(гл.)*, çакă (çак), çап *(гл.)*, çăлтăр, çăм атă, çăнăх, çăр *(гл.)*, çăрттан, çемçелĕх палли, çепĕç, çерçи, çĕвĕç, çĕле *(гл.)*, çĕлĕк, çĕмĕр *(гл.)*, çĕнтерӳ, çĕр *(х.я.)*, çĕр *(яп.я.)*, çĕр *(гл.)*, çĕрĕ, çĕр пин, çил курăкĕ, çимĕç, çине, çинче, çип, çирĕм, çит *(гл.)*, çитĕн *(гл.)*, çитмĕл, çу *(гл.)*, çул *(гл.)*, çум, çумла *(гл.)*, çун *(гл.)*, çупах, çуран, çутă, çӳлтен, çӳхе, çывăр *(гл.)*, çыр *(гл.)*, çырма *(яп.я.)*, çых *(гл.)*. Таврăн *(гл.)*, тантăш, тапта *(гл.)*, тар *(гл.)*, тасат *(гл.)*, тат *(гл.)*, ташă, тăвар *(яп.я.)*, тăм, тăрăх, тăрăш *(гл.)*, тăри, тăрна, тăхăн *(гл.)*, тăхăр вуннă, тевет, телей, тенкĕ, теçетке, тет, тĕк, тĕлĕк, тĕлĕн, тĕп хула, тĕрĕ, тĕрĕсле *(гл.)*, тĕрĕçĕ, тĕрле *(гл.)*, тĕрлĕрен, тĕрт *(гл.)*, тĕртекен, тĕттĕм, тимĕрçĕ, тинĕс, ту *(яп.я.)*, ту *(гл.)*, тулă, тултар *(гл.)*, тумтир, тура *(гл.)*, турат, тутăр, тух *(гл.)*, тухья, тӳрĕ, тӳрлет *(гл.)*, тыт *(гл.)*. Уйăп, уйăх, ула, уланкă, ула такка, умĕнче, умне, унталла, унтан, урам, усал, уçă сасă, утмăл. Ӳк *(гл.)*, ӳкер *(гл.)*, ӳпле, ӳпре, ӳхĕ. Хаклă, халиччен (хальччен), хатĕр, хатĕрлен *(гл.)*, хачă, хăвăрт, хăйма, хăнана, хăпар *(гл.)*, хăра *(гл.)*, хăюллă, хăюллăн, хĕвел тухăçĕ, хĕрел *(гл.)*, хĕрĕх, хĕрринче, хĕрхен *(гл.)*, хисепле *(гл.)*, хулăн, хуп *(гл.)*, хуплу, хуравла *(гл.)*, хуралçă, хурат *(гл.)*, хуратмалли, хут *(гл.)*, хут купăс, хушăран, хушшине, хушшинче, хыпар, хыççăн, хытăлăх палли. Чакак, чаплă, чăваш тумĕ, чăрăш, чечек çыхxи, чĕвĕлти (тус), чĕкеç, чикĕ, читлĕх, чун, чуста, чӳлмек, чӳлмекçĕ, чӳхе *(гл.)*. Ыран, ыраш. Шăвар, шăл *(гл.)* шăмă, шăн *(гл.)*, шăна, шăнкăрав, шăнкăрч, шăпчăк, шăрттан, шăхлич, шиклен *(гл.)*, шӳлкеме, шӳт, шӳтле *(гл.)*, шывлан *(гл.)*, шыра *(гл.)*. Эреш, эсир. Юмахçă, юсар *(гл.)*. Якат *(гл.)*, ялан, яр (кала), яр *(гл.)*.

## IV. Тĕслĕх тематика планĕ

| Урок-сен № | Темăсем, тĕллевĕсем | Ачасен ĕçĕ |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| 1, 2 / 1 | **Шкула.** Вĕренӳ кĕнекипе, кĕнекери геройсемпе паллашасси. Урок темипе çĕнĕ сăмахсем вĕренесси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Чăвашла вулавăн «вăрттăнлăхĕсене» аса илесси, вĕсене шута илсе вуласси. | — «Шкул» темăпа çыхăннă пĕрремĕш класра вĕреннĕ сăмахсене аса илеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ **(паян, уяв, пулать, авăн уйăхĕ, пуçланать, пĕрремĕшĕ)**;<br>— пĕрремĕш класра вĕреннĕ чăвашла вулавăн «вăрттăнлăхĕсене» аса илеççĕ, вĕсене пăхăнса сăмахсем вулаççĕ, сăмахсене мĕнле вуламаллине кура ушкăнлаççĕ, хăйсен ĕçне модельсем туса çирĕплетеççĕ;<br>— вырăс чĕлхинчен çыру урлă кĕнĕ тата чăн чăваш сăмахĕсене тишкерсе **в** сас паллин сăмах вĕçĕнчи ĕçне палăртаççĕ, модель туса çĕнĕ правилăна ăса хываççĕ;<br>— **в** сас паллипе вĕçленекен сăмахсене вулама хăнăхаççĕ, çĕнĕ сăмахсене малтан тата çак урокра вĕреннĕ вулав правилисене тĕпе хурса вулаççĕ;<br>— текст содержанийĕпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. |
| 3 / 2 | **Кĕркунне.** Кĕрхи уйăх ячĕсене астуса юласси. Кĕркунне çинчен каласа пама вĕренесси. Чăвашла вулавăн правилисене пăхăнса вуласси. | — кĕркунне çинчен сăвă вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ **(юпа уйăхĕ, чӳк уйăхĕ, пахчара, шăнать, час-часах, ылтăн кĕркунне, хура кĕркунне, шăп)**;<br>— кĕркунне çинчен текст вулаççĕ, текста ăнланас тесе ĕçлеççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложенисем тăваççĕ;<br>— кĕркунне çинчен текст туса каласа параççĕ. |
| 4 / 3 | **Шкулта.** Çĕнĕ сăмахсене астуса юласси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — шкул çинчен сăвă вĕренеççĕ;<br>— аффикссен пĕлтерĕшне тĕпчеççĕ **(чăваш — чăвашла, пĕрре — пĕрремĕш)**;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ, пуплевре усă курма хăнăхаççĕ **(ӳнер урокĕ, таврапĕлӳлĕх урокĕ, ĕç урокĕ, туслă, тăрăшуллă)**; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — текстпа ĕçлеççĕ: вулама йывăр вырăнсене палăртаççĕ, чăвашла вулавăн правилисене пăхăнса вулаççĕ, пĕлмен сăмахсене палăртса текст содержанине ăнланма тăрăшаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, текст содержанине **эпир** сăмаха **эпĕ** сăмахпа улăштарса  каласа параççĕ;<br>— панă ыйтусем тăрăх диалог йĕркелесе калаçаççĕ;<br>— шкулта мĕн туни çинчен пĕчĕк калав тăваççĕ, каласа параççĕ. |
| 5/4 | **Шкулта. Алфавит.**<br>Сас палли сассăн паллийĕ пулнине ăса хывасси.<br>Чăваш алфавитне тишкересси, алфавита пăхмасăр калама пĕлмеллине ăнланасси, ăна пăхмасăр калама вĕренесси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ: вулав правилисене пăхăнса вуламалли вырăнсене палăртаççĕ, **[ă], [ĕ], [ӳ], [ç]** сасăсене тĕрĕс артикуляципе калаççĕ, сăвва тĕрĕс интонаципе вулама вĕренеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ, шкулта мĕн туни çинчен диалог мелĕпе калаçаççĕ, шкулта мĕн туни çинчен **вăл, вĕсем** тунă пек каласа параççĕ;<br>— сасă, паллă, сас палли сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тишкерсе палăртаççĕ;<br>— чăваш алфавичĕпе паллашаççĕ, ăна вырăс алфавичĕпе танлаштараççĕ;<br>— сас паллисен ятне астуса юлаççĕ, алфавита пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| 6/5 | **Сасă тата сас палли. Шкулта.**<br>Сасăсене чăвашла каласа хак пама вĕренесси<br>(уçă сасă, хупă сасă,<br>çемçе хупă сасă, хытă хупă сасă).<br>Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма вĕренесси.<br>Çĕнĕ сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — Урине çинчен калакан сăвва тишкерсе çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— сăмахсен сасă моделĕсене туса кашни сассине чăвашла каласа хак параççĕ, кашни сасса палăртма чăваш алфавитĕнчен сас палли суйласа илеççĕ, мĕншĕн вăл е ку сас паллине суйласа илнине ăнлантараççĕ;<br>— сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарса çыраççĕ;<br>— текстпа ĕçлеççĕ: текста вуласа ăнланаççĕ, вулавра тунă йăнăшсене тӳрлетеççĕ, **ç** сас паллине хак панине тишкереççĕ, **ă, ĕ, ӳ** сас паллисем çинчен хăйсем каласа параççĕ, чăваш чĕлхи урокĕнче мĕн туни çинчен кĕнекери материалпа усă курса каласа параççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 7, 8 / 6 | **Урокра.**<br>Çĕнĕ сăмахсене астуса юласси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхасси. «Урок», «Кĕр» темăсемпе вĕреннине аса илсе каласа пама вĕренесси.<br>**Миçе? миçемĕш?** ыйтусене хуравлама вĕренесси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ **(сăвă, тĕрĕслев ĕçĕ, ыйтать, хуравлать)**;<br>— япалана, палла, ĕçе пĕлтерекен сăмахсен моделĕсем вырăнне юрăхлă сăмахсем лартса кĕнекери текста вулаççĕ;<br>— уроксенче мĕнле ĕçлени çинчен каласа паракан текстпа ĕçлеççĕ: вулаççĕ, йăнăшсене тишкереççĕ, тӳрлетеççĕ, пайăн-пайăн вуласа тишкереççĕ, кашни пайне ят парса план тăваççĕ, план тăрăх каласа параççĕ;<br>— **ĕ** сас паллин сассине хак параççĕ;<br>— **миçе? миçемĕш?** ыйтусене хуравлама вĕренеççĕ: Анюкпа Ванюк ĕçне тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарса панипе хăйсен пĕтĕмлетĕвĕсене танлаштараççĕ, астуса юлаççĕ;<br>— вĕреннине диалог туса пуплевре çирĕплетеççĕ;<br>— кĕр çинчен калакан текста вуласа тишкереççĕ, кĕркунне çинчен каласа параççĕ. |
| 9, 10 / 7 | **Пусăм. Урокра.**<br>Чăваш чĕлхинчи сăмахсенчи пусăм вырăнне тишкерсе палăртасси. Алгоритм туса хатĕрлесси, унпа усă курса пусăм лартма хăнăхасси. | — сăвăпа ĕçленĕ май урок тĕллевне палăртаççĕ;<br>— пусăм вырăнне кура ушкăнланă сăмахсене тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ туса модельсемпе çирĕплетеççĕ, хăйсем тунă пĕтĕмлетӳсем тăрăх пусăм лартмалли алгоритм хатĕрлесе пăхаççĕ;<br>— Сергей Сергеевич туса панă алгоритмпа паллашаççĕ, унпа усă курма вĕренеççĕ;<br>— сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтараççĕ, пусăм лартаççĕ;<br>— ӳнер урокĕ çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, вулавра пулнă йăнăшсене тӳрлетеççĕ, сăмахсенчи пусăм вырăнне ăнлантараççĕ, ӳнер урокĕ çинчен каласа параççĕ. |
| 11, 12 / 8 | **Уроксем хыççăн.**<br>Уроксем хыççăнхи ĕçсем çинчен каласа пама вĕренесси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ;<br>— шкулти ĕçсем çинчен диалог туса калаçаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | Алгоритмпа усă курса пусăм лартма хăнăхасси. Чăваш чĕлхинчи çĕнĕ сăмахсем тумалли меслетсене тишкерesси. | — сăмахсенче пусăм лартаççĕ, вĕсене вуласа куçараççĕ, предложенисем тăваççĕ;<br>— уроксем хыççăн тăвакан ĕçсем çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— чăваш чĕлхинчи çĕнĕ сăмахсем тумалли меслетсене тишкереççĕ **(юрă — юрлать; юрă — юрра ăста)**;<br>— «Тух-ха, Ванюк» сăвва вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ, ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ;<br>— урокра вĕреннине пĕтĕмлетсе кĕнекери ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ. |
| $\frac{13}{9}$ | **Кун ячĕсем.** Кун ячĕсене вĕренесси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă содержанине тишкернĕ май кун ячĕсемпе паллашаççĕ;<br>— кун ячĕсене астуса юлаççĕ, йĕркипе калама вĕренеççĕ;<br>— диалога вулаççĕ, çавнашкал диалог туса пĕр-пĕринпе калаçаççĕ;<br>— вырсарни кун мĕн тăвасси çинчен хальхи вăхăтри глаголсемпе усă курса каласа параççĕ. |
| $\frac{14, 15}{10}$ | **Кĕркунне.** «Кĕр» темăпа çыхăннă çĕнĕ сăмахсене пуплеве кĕртесси. Кĕркунне çинчен каласа пама вĕренесси. | — сăвă содержанине тишкернĕ май çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— кĕр çинчен текст вулаççĕ, содержанине вырăсла каласа параççĕ, учитель вырăсла каланă предложенисене чăвашла текстра тупаççĕ, содержанине чăвашла каласа параççĕ;<br>— паянхи çанталăка сăнласа каласа пама вĕренеççĕ;<br>— кĕнекери текстпа ӳкерчĕке танлаштараççĕ, ӳкерчĕк тăрăх текста çĕнĕ предложенисем хушаççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| $\frac{16, 17}{11}$ | **Кун йĕрки.** Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **вăл** сăмахпа çыхăнтарма вĕрентесси, ку форма мĕнле пулнине тишкересси, | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ;<br>— хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **вăл** сăмахпа çыхăнтарса усă курма вĕренеççĕ, ку форма мĕнле пулнине тишкереççĕ;<br>— хăйсен ĕçне Анюкпа Ванюк пĕтĕмлетĕвĕпе танлаштараççĕ, Сергей Сергеевич |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир тăвасси. | каласа кăтартнине тишкерсе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— кам та пулин **(вăл)** хальхи вăхăтра тăвакан ĕçсем çинчен каласа пама хăнăхаççĕ;<br>— Петьăн кун йĕркийĕ çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсене виççĕмĕш сăпат формине лартса ĕç тетрадĕнче панă предложенисене çырса илеççĕ;<br>— Ванюкпа Анюк канмалли кунсенче мĕн туни çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ. |
| 18/12 | **Кун йĕрки.**<br>Хальхи вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсен виççĕмĕш сăпатри нумайлă хисеп **(вĕсем)** формипе паллашасси, ку форма мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир тăвасси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— хальхи вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсен виççĕмĕш сăпатри нумайлă хисеп форми мĕнле пулнине тишкереççĕ;<br>— хăйсен ĕçне Анюкпа Ванюк пĕтĕмлетĕвĕпе танлаштараççĕ, Сергей Сергеевич каласа кăтартнине тишкерсе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— хальхи вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсен виççĕмĕш сăпатри нумайлă хисеп формипе пуплевре усă курма хăнăхаççĕ **(вĕсем лараççĕ)**;<br>— ачасем тĕрлĕ уроксенче мĕнле ĕçлени çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, ĕçе пĕлтерекен сăмахсене икĕ ушкăна (аффикссене кура) уйăрса çырса илеççĕ, ыйтăва хуравласа текст содержанине каласа параççĕ;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсем çумне кирлĕ аффикссем хушса ĕç тетрадĕнче панă предложенисене çырса илеççĕ. |
| 19/13 | **Пахчари кĕрхи ĕçсем.**<br>Хальхи вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсен виççĕмĕш сăпатри пĕррелле тата нумайлă хисеп формисем, вĕсен пулăвне малалла | — сăвăпа ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **вăл** тата **вĕсем** сăмахсемпе çыхăнтараççĕ, **кала** тата **итле** сăмахсен сăпатланăвне тишкерсе хăйсен умне проблема лартаççĕ, хурав шыраççĕ, Анюкпа Ванюк мĕнле шухăшланине тишкереççĕ, |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир тăвасси. | хăйсен пĕтĕмлетĕвне Сергей Сергеевич ăнлантарнипе танлаштараççĕ, правило-ориентир туса çырса хураççĕ;<br>— тунă правилăсемпе усă курса ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **вăл** тата **вĕсем** сăмахсемпе çыхăнтарса улăштараççĕ, мĕнле аффикс суйласа илмеллине ăнлантараççĕ;<br>— юпа уйăхне сăнласа паракан текста вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ. |
| 20, 21 / 14 | **Эпир — ĕçчен ачасем.** Хальхи вăхăтри ĕçсене пĕлтерекен сăмахсене **эпĕ** сăмахпа çыхăнтарса усă курма вĕренесси, ку форма мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир тăвасси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ: сăвва вулаççĕ, чăвашла вулав правилисене пăхăнса вуламалли вырăнсене палăртаççĕ, сăмахсенчи пусăм вырăнне ăнлантараççĕ, чăваш чĕлхинче çеç тĕл пулакан сасăсен артикуляцине çирĕплетеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ, **эпĕ** сăмахпа çыхăннă ĕçе пĕлтерекен сăмахсене сăвăран çырса илеççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, аффиксăн çемçе варианчĕ çуккине асăрхаççĕ, хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюк ĕçĕпе танлаштараççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарнине тишкереççĕ, правило-ориентир туса хатĕрлеççĕ, ăна модель туса çырса хураççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе ĕçе пĕлтерекен сăмахсене **эпĕ** сăмахпа çыхăнтараççĕ, **кай, выля, çӳре** сăмахсенче туса хатĕрленĕ правило-ориентир ĕçлеменнине асăрхаççĕ, çак сăмахсене тишкерсе правилăсене анлăлатаççĕ;<br>— «Ĕçчен хĕр ача» текста вулаççĕ, кашни абзацне вуласа ят параççĕ, текста план тăрăх сăпатне **(вăл)** улăштарса каласа параççĕ;<br>— кашни хăй амăшне мĕнле пулăшни çинчен каласа парать;<br>— диалог вулаççĕ, унпа усă курса хăйсем çинчен калаçаççĕ;<br>— уроксем хыççăн мĕн туни çинчен каласа параççĕ. |
| 22 / 15 | **Пирĕн çемье.** Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пĕрремĕш сăпатри | — сăвăпа ĕçлеççĕ: сăвва вулаççĕ, чăвашла вулавăн правилисене пăхăнса вуламалли вырăнсене палăртаççĕ, сăмахсенчи пусăмăн вырăнне ăнлантараççĕ, чăваш чĕлхинче çеç тĕл пулакан сасăсен артикуляцине çирĕплетеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | нумайлӑ хисеп форми, ку форма мӗнле пулнине тишкересси, пӗтӗмлетсе модель-ориентир туса хатӗрлесси. Ҫемье ҫинчен каласа пама вӗренесси. | — **эпир** сӑмахпа ҫыхӑннӑ ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене сӑваран ҫырса илеҫҫӗ, аффиксӗсене палӑртаҫҫӗ;<br>— Анюкпа Ванюк ӗҫне тишкереҫҫӗ, вӗсен пӗтӗмлетӗвӗпе килӗшсе правило-ориентир туса хатӗрлеҫҫӗ, модель туса ҫырса хураҫҫӗ;<br>— правило-ориентирпа усӑ курса ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене **эпир** сӑмахпа ҫыхӑнтарса калаҫҫӗ;<br>— текстпа хӑнӑхтарусене тунӑ май ӗҫлеҫҫӗ;<br>— ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлеҫҫӗ. |
| 23, 24 / 16 | **Манӑн юлташсем.** Хальхи вӑхӑтри ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен иккӗмӗш сӑпатри пӗрреллӗ тата нумайлӑ хисеп формисем, ку формӑсем мӗнле пулнине тишкересси, пӗтӗмлетӳ туса модель-ориентир туса хатӗрлесси. Ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен хальхи вӑхӑт формисем мӗнле пулнине сӑнлакан таблица туса хатӗрлесси. | — сӑвӑпа ӗҫлеҫҫӗ: сӑвва вулаҫҫӗ, чӑвашла вулавӑн правилисене пӑхӑнса вуламалли вырӑнсене палӑртаҫҫӗ, сӑмахсенчи пусӑмӑн вырӑнне ӑнлантараҫҫӗ;<br>— чӑваш чӗлхинче ҫеҫ тӗл пулакан сасӑсен артикуляцине ҫирӗплетеҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсене астуса юлаҫҫӗ, **эсӗ** сӑмахпа ҫыхӑннӑ ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене сӑваран ҫырса илеҫҫӗ, аффиксӗсене палӑртаҫҫӗ;<br>— ушкӑнпа ӗҫлесе ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен иккӗмӗш сӑпат формисене тишкереҫҫӗ, хӑйсен ӗҫне Анюкпа Ванюкӑн ӗҫӗпе танлаштараҫҫӗ, правило-ориентир туса хатӗрлеҫҫӗ;<br>— Сергей Сергеевич хатӗрленӗ ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен хальхи вӑхӑт формисен пулӑвне кӑтартакан таблицӑпа паллашаҫҫӗ, ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен кашни формипе тӗслӗхсем тупаҫҫӗ;<br>— текста вулаҫҫӗ, текста ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене тӗрлӗ формӑра лартса каласа параҫҫӗ;<br>— вырӑсла панӑ предложенисене чӑвашла куҫарса ҫыраҫҫӗ, сӑмахсенче тӗрлӗ вырӑнта тӑракан сасӑсене палӑртма мӗнле сас палли суйласа илнине ӑнлантараҫҫӗ. |
| 25, 26 / 17 | **Вӗренӳ хатӗрӗсем.** Япалана пӗлтерекен сӑмахсен камӑнлӑх форми. | — сӑвӑпа ӗҫлеҫҫӗ, панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, астуса юлаҫҫӗ;<br>— сӑмахсене чӑваш графикин законӗсене пӑхӑнса тӗрӗс сас палли лартса ҫырса илеҫҫӗ;<br>— япала камӑн пулнине кӑтартмалли мелсене тишкереҫҫӗ, аффикссене палӑртаҫҫӗ, |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | Япала камăн пулнине кăтартакан аффикссене тишкересси, правило-ориентир тăвасси. Аффикссемпе пуплевре усă курасси. | сăнанă тăрăх пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, тунă пĕтĕмлетĕве Анюкпа Ванюкăн ĕçĕпе танлаштараççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарнине тишкереççĕ, правило-ориентир туса модельсемпе çырса хураççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх панă схемăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ыйтусем тăваççĕ, хуравлаççĕ;<br>— диалог вулаççĕ, çак тĕслĕхпе усă курса хăйсем диалог тăваççĕ;<br>— япалана пĕлтерекен сăмахсене **манăн**, **санăн, унăн** сăмахсемпе çыхăнтарса çыраççĕ. |
| 27/18 | **Вĕренӳ хатĕрĕсем**. **Ăçта** (где?), **ăçта** (куда?) ыйтусем. **Ăçта** (куда? где?) ыйтăвăн пĕлтерĕшне ăнланса уйăрма, ăна хурав пама вĕренесси. | — шут сăввипе ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— **сĕтел çине, сĕтел çинче** майлă сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçараççĕ, вĕсем патне ыйту лартаççĕ, вырăсла икĕ тĕрлĕ ыйту **(где? куда?)** вырăнне чăвашла пĕр ыйту **(ăçта?)** лартмаллине асăрхаççĕ, хăçан мĕнле аффикс хушмаллине тишкерсе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, **çине, çинче** сăмахсене лартса кĕнекере панă ĕçе пурнăçлаççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе сăмах майлашăвĕсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, ушкăнланин принципне ăнлантараççĕ, Анюкпа Ванюк ĕçĕпе паллашаççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарнине тишкереççĕ, правило-ориентирсем туса модельсемпе çырса хураççĕ, правилăсемпе усă курса вырăсла предложенисене чăвашла куçараççĕ. |
| 28/19 | **Шкула.** **Ăçта** (где?), **ăçта** (куда?) ыйтусем. **Ăçта** (куда? где?) ыйтăвăн пĕлтерĕшне ăнланса уйăрма, ăна хурав пама вĕренесси. | — сăвăпа хушнă ĕçсене пурнăçланă май ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх панă ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— схемăсене сăмахсемпе улăштарса предложенисене вулаççĕ;<br>— «Хушнине ту» вăйă выляççĕ;<br>— текстсене **ăçта?** ыйтури сăмахсем лартса вулаççĕ, çырса илеççĕ. |
| 29, 30/20 | **Кĕрхи çанталăк.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, | — К.В. Ивановăн сăввине вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(шăнать, саралать)**; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — **сарă — саралать** тĕслĕхе тишкерсе паллăна пĕлтерекен сăмахсенчен ĕçе пĕлтерекен сăмахсем тăваççĕ;<br>— кĕрхи уйăхсене сăнлакан текста вулаççĕ, вырăсла панă шухăша сăнлакан предложение чăвашла текстра тупса вулаççĕ;<br>— текстран чĕр чунсен кĕрхи пурнăçне сăнлакан предложенисем тупса вулаççĕ;<br>— текстран чĕрĕ мар çут çанталăкри кĕрхи улшăнусене сăнлакан предложенисем тупса вулаççĕ;<br>— панă ыйтусене хуравласа кĕнекери ӳкерчĕке сăнлаççĕ;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсене мĕншĕн виçĕ ушкăна уйăрнине ăнлантараççĕ, çав сăмахсемпе усă курса шкул ачин кун йĕрки çинчен **эпĕ, эсĕ, вăл, вĕсем** сăмахсемпе усă курса каласа параççĕ;<br>**— умне, умĕнче, патне, патĕнче, хушшине, хушшинче** сăмахсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ, пĕр-пĕринпе калаçаççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| 31/21 | **Зоопаркра.**<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(хыпар хучĕ, васкăр, çурçĕр, пăхаççĕ, утă, тĕве, упăте, арăслан, хир сысни, çурçĕр тилли, пăлан)**;<br>— «Зоопаркра» текста вулаççĕ, ăнланман сăмахсемпе ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— тĕрлĕ чĕр чун çинчен каласа параççĕ. |
| 32, 33/22 | **Зоопаркра.**<br>Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çуклăх форми. Чĕр чун çурисен ячĕсене калама вĕренесси. Хальхи вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çуклăх формине тĕпчесси, | — сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— зоопаркра пулни çинчен калакан диалога рольсемпе вулаççĕ;<br>— панă сăмахсене **кам? мĕн?** ыйтусем тăрăх уйăраççĕ, мĕншĕн çапла уйăрнине ăнлантарса параççĕ;<br>— планпа усă курса ӳкерчĕкри чĕр чунсене сăнласа параççĕ;<br>— тĕрлĕ чĕр чун çурисен ячĕсене тĕрĕс калама вĕренеççĕ;<br>— чĕр чун ячĕсене вырăсларан чăвашла куçарса алфавит йĕркипе çыраççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | вăл мĕнле майпа пулнине тишкерессии, ку формăпа пуплевре усă курма вĕренесси. | — урок пуçламăшĕнче вуланă сăвăран ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илеççĕ, **хăрамасть** сăмахра пĕлмен аффикс пуррине асăрхаççĕ, унăн пĕлтерĕшне тĕпчемелли çинчен калаçса татăлаççĕ;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пурлă тата çуклă формисене вырăсла куçараççĕ, икĕ ушкăна уйăраççĕ, вырăс чĕлхинче ĕçе туманнине **не** татăкпа палăртнине калаççĕ, чăваш чĕлхинче çак пулăма мĕнле «калаçа панине» тĕпчеççĕ, **-мас(-мес)** аффикссене «кураççĕ», пурлă форма тăвакан аффиксри усă сасă тухса ӳкнине асăрхаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, модель туса çырса хураççĕ, профессор ăнлантарнипе паллашаççĕ;<br>— тунă пĕтĕмлетӳпе усă курса пурлă тата çуклă формăри сăмахсемлĕ предложенисене вырăсларан чăвашла куçараççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| 34/23 | **Фермер ĕçĕ-хĕлĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа ĕçлеççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(сăвать, кукка, сĕт ĕçтерет, курăк çитерет, кĕтӳ, улăх)**, çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне сăмах тĕпĕ тата аффикс пĕлтерĕшĕ çине таянса ăнланма вĕренеççĕ;<br>— текстпа ĕçлеççĕ: вулаççĕ, вулакан тунă йăнăшсене ăнлантарса тӳрлетеççĕ, текст содержанине вырăсла каласа параççĕ, вырăсла панă предложенисен куçарăвне чăвашла текстра тупса вулаççĕ, çырса илеççĕ, текст содержанине чăвашла каласа параççĕ;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çуклă формине тăваççĕ, ăнлантарса параççĕ, пусăм лартаççĕ, сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ. |
| 35, 36/24 | **Выльăх пăхакансен ĕçĕ-хĕлĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси. Выльăх пăхакансен ĕç-хĕлĕ çинчен каласа пама вĕренесси. | — урок валли панă сăвва вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ **(макăрать, йĕрет, сĕлĕ, çĕмĕрнĕ)**;<br>— панă предложенисемпе усă курса юмаха малалла тăсаççĕ;<br>— кукамайпа кукаçин хуçалăхĕ çинчен диалог вулаççĕ, диалога малалла тăсаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — предложенисене ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пурлă тата çуклă формисене кирлĕ аффикссем лартса çырса илеççĕ;<br>— кроссворд шутлаççĕ: кроссвордра пур чĕр чун ячĕсене тупса çыраççĕ, вĕсене сăнласа каласа параççĕ;<br>— ӳкерчĕксене тивĕçтерекен текстсене палăртаççĕ;<br>— пĕр ӳкерчĕкне сăнласа калав тăваççĕ;<br>— вырăсла панă предложенисене текстсемпе усă курса чăвашла куçараççĕ;<br>— килти чĕр чунсем çинчен каласа параççĕ. |
| 37/25 | **Хĕл çитрĕ.**<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси.<br>Хĕлле çинчен çĕнĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама вĕренесси.<br>Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ;<br>— сăмахсене пусăм тĕрĕс лартса вулаççĕ, кашни ушкăнри сăмахсем валли пĕтĕмлетӳ сăмахĕ суйласа илеççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ **(тăвайкки)**, «Хĕлле» темăпа çыхăннă унччен вĕреннĕ сăмахсене аса илеççĕ;<br>— текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, янратса вуламалли сас паллиллĕ сăмахсене тупса палăртаççĕ, текст содержанине каласа параççĕ, паянхи çанталăка сăнласа калав тăваççĕ. |
| 38, 39/26 | **Хĕлле.**<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси.<br>Хĕлле çинчен çĕнĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама вĕренесси.<br>**Мĕнпе?** ыйтăва хурав пама хăнăхасси. | — В. Давыдов-Анатрин сăввине пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ **(раштав уйăхĕ, кăрлач уйăхĕ, нарăс уйăхĕ, шуратать, лапка-лапка çăвать, мамăк сарнăн туйăнать)**;<br>— чăвашла тата вырăсла панă текстсенче содержани енчен пĕр пек предложенисене тупаççĕ, раштав уйăхне сăнласа каласа пама вĕренеççĕ;<br>— **мĕнпе?** ыйтăва хуравлама вĕренеççĕ, раштав уйăхне сăнлакан текстпа тата ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, ушкăнпа ĕçлесе раштав уйăхĕ çинчен калав хатĕрлеççĕ, панă сăмахсемпе усă курса пĕчĕк калав тăваççĕ, çырса хураççĕ. |
| 40/27 | **Пирĕн патра хĕл каçакан кайăксем.** | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ;<br>— кайăксен ячĕсене астуса юлаççĕ, тĕрĕс калама вĕренеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | Кайӑксен ячĕсемпе паллашасси. Ҫĕнĕ сӑмахсене пуплеве кĕртесси. | — чӑвашла тата вырӑсла панӑ текстсенче содержани енчен пĕр пек предложенисене тупаҫҫĕ;<br>— кроссворд шутлаҫҫĕ;<br>— тĕрлĕ кайӑксене сӑнласа текстсем тӑваҫҫĕ. |
| 41, 42 / 28 | **Кайӑксене пулӑшатпӑр.** Ҫĕнĕ сӑмахсемпе паллашасси. Вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхасси. | — сӑвӑпа тата ӳкерчĕкпе ĕҫлеҫҫĕ;<br>— ҫĕнĕ сӑмахсемпе паллашаҫҫĕ, вĕсене астуса юлаҫҫĕ;<br>— кайӑксен ячĕсене алфавит йĕркипе вырнаҫтараҫҫĕ, пусӑм лартаҫҫĕ, кашни кайӑкне сӑнласа пĕчĕк текст тӑваҫҫĕ;<br>— хĕл каҫакан кайӑксем ҫинчен панӑ ыйтусене хуравлаҫҫĕ;<br>— ачасем кайӑксене хĕлле мĕнле пӑхни ҫинчен калакан калава вулаҫҫĕ, текст содержанине ачасем сӑмаха **эпир** тата **эпĕ** сӑмахсемпе улӑштарса каласа параҫҫĕ;<br>— диалога вулаҫҫĕ, содержанине ӑнланас енĕпе ĕҫлеҫҫĕ, диалога малалла тӑсаҫҫĕ, диалогра тĕл пулнӑ **куртӑм, куртӑн** сӑмахсене ҫырса илеҫҫĕ, халиччен кун пек формӑсем тĕл пулманнине палӑртаҫҫĕ, тепĕр урок валли проблема лартаҫҫĕ. |
| 43 / 29 | **Кайӑксене пулӑшатпӑр.** Иртнĕ вӑхӑтри ĕҫе пĕлтерекен сӑмахсен пĕрремĕш сӑпатри пĕрреллĕ хисеп форми. Ку формӑн пурлӑ тата ҫуклӑ формисем мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир хатĕрлесси. | — сӑвӑпа, ӑна сӑнлакан ӳкерчĕкпе ĕҫлеҫҫĕ;<br>— текстпа ĕҫлеҫҫĕ: вулаҫҫĕ, вырӑсла куҫараҫҫĕ, ĕҫ пулса иртнĕ вӑхӑта палӑртаҫҫĕ, ĕҫе пĕлтерекен сӑмахсене ҫырса илеҫҫĕ;<br>— ушкӑнпа ĕҫлесе **-тӑм, -тĕм, -рӑм, -рĕм** аффикссене уйӑраҫҫĕ, вĕсен «ĕҫне» палӑртаҫҫĕ, мĕншĕн вӑл е ку аффикс хушӑннине тĕпчеҫҫĕ;<br>— ҫак ĕҫе Анюкпа Ванюк мĕнле тунине тишкереҫҫĕ, вĕсемпе килĕшсе сӑмахсем ҫумне хӑҫан мĕнле аффикс хушмаллине модельсем туса ӑнлантараҫҫĕ, Сергей Сергеевич ӑнлантарнине тишкереҫҫĕ, пĕтĕмлетӳ тӑваҫҫĕ;<br>— туса хатĕрленĕ модельсемпе усӑ курса ĕҫе пĕлтерекен сӑмахсене тĕрĕс формӑра лартса предложенисем тӑваҫҫĕ. |
| 44, 45 / 30 | **Ҫĕнĕ ҫул ҫывхарать.** Иртнĕ вӑхӑтри | — сӑвӑпа, ӑна сӑнлакан ӳкерчĕкпе ĕҫлеҫҫĕ;<br>— ҫĕнĕ сӑмахсемпе паллашаҫҫĕ, вĕсене астуса юлаҫҫĕ **(Хĕл Мучи, Ҫĕнĕ ҫул, парне,** |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | ĕçe пĕлтерекен сăмахсен иккĕмĕш сăпатри пĕрреллĕ хисеп форми.<br>Ку формăн пурлă тата çуклă формисем мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир хатĕрлесси.<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | **хутаç, чĕнет, Юр пике, хатĕрлет, илемлетет, тĕрлет, çыхать)**;<br>— **валли** сăмахпа япалана пĕлтерекен сăмахсенчен пулнă сăмах майлашăвĕсене вулаççĕ, вырăсла куçарса пĕлтерĕшне ăнланаççĕ, пуплевре усă курма хăнăхаççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх панă сăмахсемпе усă курса калав тăваççĕ;<br>— диалога вулаççĕ, паллă тунă сăмаха çырса илсе тишкереççĕ, ĕçе пĕлтерекен сăмах ĕç калаçуччен (иртнĕ вăхăтра) пулнине палăртаççĕ, иртнĕ вăхăтра пулнă ĕçсем çинчен «каласа памалли» меслете тишкересси çинчен калаçса татăлаççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе иртнĕ вăхăтри ĕçсем çинчен «калакан» аффикссене палăртаççĕ, мĕнле сăмахсем мĕнле аффикссемпе çыхăннине тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ туса модельсемпе çырса хураççĕ;<br>— çак ĕçе Анюкпа Ванюк мĕнле пурнăçланине тишкереççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарнипе паллашаççĕ, тунă модельсемпе усă курса вырăсла панă сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçараççĕ, сăмахсене майлаштарса предложенисем тăваççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ, вĕсене хуравлаççĕ. |
| 46/31 | **Çĕнĕ çул парнисем.**<br>Иртнĕ вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен виççĕмĕш сăпатри пĕрреллĕ хисеп форми.<br>Ку формăн пурлă тата çуклă формисем мĕнле пулнине тишкерессы, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир хатĕрлесси.<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, | — «Хĕл Мучи хутаçĕнче...» сăвăпа тата ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(мăйăр, пыл, çĕлет)**;<br>— ĕçе пĕлтерекен сăмахсен моделĕсемпе ĕçлеççĕ;<br>— предложенисене вуласа ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çĕнĕ формине тупаççĕ, ĕç калаçуччен пулса иртнине асăрхаççĕ, **вăл** сăмахпа иртнĕ вăхăтра мĕнле аффикссем «ĕçленине» тишкереççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе панă ыйтăвăн хуравне шыраççĕ;<br>— пĕтĕмлетӳсем, модельсем тăваççĕ, çырса хураççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк ĕçне тишкерсе пĕтĕмлетеççĕ, профессор ăнлантарнине тишкереççĕ, правило-ориентирсем туса модель- |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | вĕсене пуплеве кĕртесси. | семпе çырса хураççĕ, тунă модельсемпе усă курса вырăсла панă предложенисене чăвашла куçараççĕ. |
| 47, 48 / 32 | **Çĕнĕ çул уявĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — В. Давыдов-Анатрин сăввине вулаççĕ, панă ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(якатать, çывхарать, сыхлать)**;<br>— Çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленни çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, текст содержанийĕпе усă курса хăйсем Çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленни çинчен каласа параççĕ;<br>— чĕр чун ячĕсене вулаççĕ, вĕсене пĕтĕмĕшле ят пама юрăхлă сăмах суйласа илеççĕ, чĕр чун ячĕсене икĕ ушкăна уйăрса çырса илеççĕ, кашни ушкăнне ят параççĕ;<br>— елка валли ачасем мĕнле тумсем хатĕрлени çинчен калакан текста вулаççĕ, кам мĕнле тум тăхăннине пĕлеççĕ, хăйсем елка валли мĕнле тум хатĕрлени çинчен каласа параççĕ;<br>— текст содержанине хальхи тата иртнĕ вăхăтсенче каласа параççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе панă сăмахсенчен текст тăваççĕ. |
| 49, 50 / 33 | **Хĕллехи каникулта.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Çынна пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисене тĕпчесси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(çиçет, кунĕпе, хăрататать, çил-тăман, юр хырать, кĕтет, пĕррехинче, йĕлтĕр сырать);**<br>— пĕр пек пĕлтерĕшлĕ чăвашла тата вырăсла сăмах майлашăвĕсене йĕр туртса çыхăнтараççĕ;<br>— çынна пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисене тĕпчеççĕ, чĕрĕ мар япаласен камăнлăх формийĕсемпе танлаштараççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, çынна пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формийĕпе усă курса предложенисем тăваççĕ;<br>— ачасем каникулта мĕн тунине сăнлакан калав тата диалог вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ, текстсемпе усă курса хăйсем каникулта мĕнле канни çинчен каласа параççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 51/34 | **Хĕллехи каникулта.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(тăван кил, Улатăр, кивĕ, ватă, палăк)**, **ир — ирхине** тĕслĕхпе усă курса вăхăта пĕлтерекен ытти сăмахсене чăвашла куçараççĕ, панă сăмахсенчен предложенисем тăваççĕ;<br>— вырăсла панă предложенисене чăвашла куçараççĕ;<br>— Улатăр çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. |
| 52, 53/35 | **Хĕллехи каникулта.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Ĕçе пĕлтерекен сăмахсен иртнĕ вăхăт формисем çинчен пĕтĕмлетӳ тăвасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(Çĕмĕрле, Хусан, Мускав, çĕршыв, тĕп хула)**;<br>— сăмахсене пусăм лартса вулаççĕ, кашни ушкăнне пĕтĕмĕшле ят параççĕ;<br>— япалана, паллăна, ĕçе пĕлтерекен сăмахсен схемисене тивĕçтерекен сăмахсем тупаççĕ, вĕсемпе усă курса иртсе кайнă хĕллехи каникул çинчен **эпĕ, эсĕ, вăл** сăмахсемпе çыхăнтарса калав тăваççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçе пĕлтерекен сăмахсен иртнĕ вăхăтри формисем пĕррелĕ хисепре мĕнле пулнине сăнлакан таблица туса хатĕрлеççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк тĕпчесе тунă схемăсемпе паллашаççĕ, вĕсен шухăшне тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ, Сергей Сергеевич тунă таблицăна нумайлă хисеп форми хушса калаççĕ;<br>— ачасем хĕллехи каникул вăхăтĕнче ăçта пулни çинчен калакан текста вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ. |
| 54, 55/36 | **Хĕллехи каникулта.** Иртнĕ вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çуклăх форми. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(улать, тăман, вĕçтерет, пурпĕрех, хăрамастпăр)**;<br>— ӳкерчĕке сăнлакан сăмахсемпе усă курса калав тăваççĕ;<br>— каникулта мĕн туни çинчен панă ыйтусене хуравлаççĕ, предложенисене вуласа вырăсла куçараççĕ, предложенисем мĕнле те пулин ĕçе туманни çинчен каласа панине асăрхаççĕ, ĕçе пурнăçламанни çинчен мĕнле аффикспа усă курса «каласа панине» тишкереççĕ, çуклăх торминчи ĕçе пĕлтерекен сăмахсене ***-ма (-ме)*** |

| 1 | 2 | 3 |
| --- | --- | --- |
| | Ĕçе пĕлтерекен сăмахсен иртнĕ вăхăт формийĕсем çинчен пĕтĕмлетӳ тăвасси. | аффикссемсĕр вуласа пăхаççĕ, пĕтĕмлетӳ туса модельсемпе çырса хураççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк тунă схемăсене тишкереççĕ, **[р, л, м]** сасăсемпе пĕтекен сăмахсем çуклăх формăра ытти сăмахсенчи аффикссенех йышăннине асăрхаççĕ, тунă пĕтĕмлетӳсене схема-ориентир туса çыраççĕ;<br>— диалога тишкереççĕ, ăна тĕрлĕ формăри ĕçе пĕлтерекен сăмахсем хушса вулаççĕ. |
| 56/37 | **Манăн тус.**<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси.<br>Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(çурт, хваттер, миçемĕш хут)**;<br>— япалана пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх формисем мĕнле пулнине сăнаççĕ, пĕррелле тата нумайлă хисепре япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне пĕр пек аффикссем хушăннине асăрхаççĕ;<br>— япалана пĕлтерекен сăмахсене **санăн, вĕсен, унăн, манăн, пирĕн, сирĕн** сăмахсемпе çыхăнтарса предложенисем çыраççĕ;<br>— туссем çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, туссене сăнласа çырнă калавпа диалога вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| 57/38 | **Шутлама вĕренетпĕр.**<br>Шут сăмахĕсем. Пĕрремĕш теçеткери шут сăмахĕсене аса илесси.<br>Теçеткесен ячĕсене астуса юласси.<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(тăрăшать)**;<br>— шут сăмахĕсем япалана пĕлтерекен сăмахсемпе тăнă чух кĕскелнине аса илеççĕ, кĕнекере панă ĕçе пурнăçлаççĕ, теçеткесен ячĕсене вуласа астуса юлаççĕ, чăваш графикин законĕсене пула шут хисеп ячĕсене каланă чух пулакан йывăрлăхсене палăртаççĕ;<br>— шут хисеп ячĕсене астуса юлма панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— «Йывăр задача» текста вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ;<br>— сăвăран юнашар тăракан икĕ пĕр пек сас паллиллĕ сăмахсене икĕ ушкăна уйăрса çырса илеççĕ, мĕншĕн çапла ушкăнланине ăнлантараççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 58 / 39 | **Шутлама вӗренетпӗр.** Теҫеткесем ҫумне единицӑсем хушса шут сӑмахсене калама вӗренесси. | — сӑвӑ тата ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, астуса юлаҫҫӗ **(тӳрлетет, пурӗ, тӗрӗс мар, кӑларсан)**;<br>— Сергей Сергеевич мӗнле шутламаллине ӑнлантарнине тишкереҫҫӗ, схема-ориентир туса пӗтӗмлетӳсене ҫырса хураҫҫӗ;<br>— шут хисеп ячӗсене астуса юлма панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— шут хисеп ячӗсемпе усӑ курса ҫырнӑ текста вулаҫҫӗ, унпа ҫыхӑннӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— цифрӑсемпе панӑ тӗслӗхсене сӑмахпа ҫыраҫҫӗ. |
| 59, 60 / 40 | **Чӳлмек ӑсти.** Единица разрядӗнчи шут сӑмахӗсем япалана пӗлтерекен сӑмахсемпе пӗрле каланӑ чух яланах кӗскелнине сӑнаса пӗтӗмлетӳ тӑвасси. Ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашасси, вӗсене пуплеве кӗртесси. | — сӑвӑ тата ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— Анюкпа Ванюк шута пӗлтерекен иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш, ... теҫеткесенчи сӑмахсем япалана пӗлтерекен сӑмахсемпе мӗнле ҫыхӑннине тишкернине сӑнаҫҫӗ, профессор ӑнлантарнипе паллашаҫҫӗ, пӗтӗмлетсе правило-ориентир тӑваҫҫӗ, модельсемпе усӑ курса ҫырса хураҫҫӗ;<br>— тунӑ пӗтӗмлетӳсемпе усӑ курса класри япаласен шучӗ ҫинчен калаҫаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, астуса юлаҫҫӗ **(тӑм, шӑхлич, кӑкшӑм, чӳлмек, чӳлмекҫӗ)**;<br>— чӳлмекҫӗ ӗҫӗ ҫинчен калакан предложенисене вулаҫҫӗ, ҫырса илеҫҫӗ;<br>— Миша пиччепе Коля калаҫӑвне вулаҫҫӗ. Миша пичче ҫинчен калав туса каласа параҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ыйтусене вуласа хуравлаҫҫӗ;<br>— текстри сӑмах схемисене урокра вӗреннӗ сӑмахсемпе улӑштарса вулаҫҫӗ, пичче ҫинчен панӑ ыйтусене хуравлаҫҫӗ. |
| 61, 62 / 41 | **Чӳлмек ӑсти.** Курса тата курмасӑр иртнӗ ӗҫсем ҫинчен каласа пама | — сӑвӑпа тата ӳкерчӗкпе ҫыхӑннӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ, ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— тӗслӗхпе усӑ курса диалог тӑваҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ; вӗсене ас- |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | вĕренесси, пĕтĕмлетсе правило-ориентир тăвасси. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | туса юлаççĕ **(халăх, авал, кăмака, ăста, ăсталать, хĕртет)**; — урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ; — курса тата курмасăр иртнĕ ĕçсем çинчен калакан текстсене вулаççĕ, вырăсла куçараççĕ, пĕрремĕш калаври ĕçсем авал, эпир курма пултарайман вăхăтра пулнине асăрхаççĕ, иккĕмĕш калаври ĕçсем — нумай пулмасть, иртнĕ эрнере пулса иртнине, каласа параканĕ çак ĕçсене хăй те курма пултарнине асăрхаççĕ, çак пулăмсене мĕнле аффикссемпе палăртнине сăнаççĕ, профессор ăнлантарнине тишкереççĕ, кĕнекере панă схемăсемпе паллашса пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, модель туса правило-ориентир çырса хураççĕ, тунă пĕтĕмлетӳсемпе усă курса **ту, хатĕрле, çыр, вула** сăмахсене **эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем** сăмахсемпе çыхăнтарса çыраççĕ. |
| 63, 64 / 42 | **Йывăçпа ĕçлекен ăста.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(ывăс, алтăр, арча, эреш, йывăçпа ĕçлекен ăста, йăла-йĕрке, пуринчен хакли, ытарми, илĕртет)**; — урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ; — ĕлĕк-авал чăвашсем йывăçран тунă япаласемпе усă курни çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, текст тăрăх панă ыйтусене хуравлаççĕ, текстран ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илеççĕ, çырса илнĕ сăмахсене **вăл** сăмахпа çыхăнтарса калаççĕ; — Антун пичче çинчен калакан текста вулаççĕ, текст тăрăх панă ыйтусене хуравлаççĕ, текстран ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илеççĕ, çырса илнĕ сăмахсене **эпĕ, эсĕ** сăмахсемпе çыхăнтарса калаççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 65/43 | **Тăван çĕршыва сыхлакансен кунĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă, ӳкерчĕк тăрăх ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(çар, Раççей, çĕршыв, тăван, сыхлать, салтак)**;<br>— çынна пĕлтерекен сăмахсене камăнлăх формисене лартаççĕ;<br>— урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ;<br>— Раççей çарĕ çинчен калакан текста вулаççĕ, содержанине вырăсла каласа параççĕ, текст содержанийĕпе панă ыйтусене хуравлаççĕ, текст содержанине чăвашла каласа параççĕ. |
| 66/44 | **Манăн пичче — пограничник.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(вăрçă, мир)**;<br>— салтаксем çинчен калакан текста вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ;<br>— Кольăпа Толя пĕр-пĕрин патне çырнă çырусене вулаççĕ, панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ;<br>— сăмахсенчен предложенисем туса çыраççĕ. |
| 67/45 | **Тĕрĕ ăсти.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(тĕрĕ, çĕвĕ, çĕлет, тум, хĕр, хĕрарăм)**;<br>— урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ;<br>— сăмах тĕпĕ тата аффикс пĕлтерĕшĕсене пĕлни çине таянса çĕнĕ сăмах пĕлтерĕшне ăнланма тăрăшаççĕ;<br>— Катя аппа çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— Катя аппа çинчен ун ятĕнчен каласа параççĕ;<br>— чăваш тĕрри çинчен калакан предложенисене вулаççĕ, тĕрĕри тĕрлĕ элементсем мĕне пĕлтернине тишкереççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 68, 69 / 46 | **Чăваш тумĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ўкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(Чăваш Ен, килĕшет, чунтан, тĕрĕллĕ, тухья, шўлкеме, тевет, масмак)**;<br>— чăваш халăх тумĕсен ячĕсене курса тата курмасăр иртнĕ ĕçсене пĕлтерекен сăмахсемпе çыхăнтарса сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ;<br>— «Чăвашсен авалхи тумĕ» текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, текстпа усă курса ўкерчĕкри хĕр мĕн тăхăнни çинчен каласа параççĕ;<br>— Таньăпа арçын ачасем çинчен вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— схемăсене сăмахсемпе улăштарса предложенисене çырса илеççĕ, чăваш халăх тумĕсен ячĕсене çыраççĕ, çырнине словарьпе усă курса тĕрĕслеççĕ;<br>— краеведени музейне экскурсие каяççĕ. |
| 70 / 47 | **Анне — пуринчен те лайăххи.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ўкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(пуринчен те лайăххи, шырать, юратнă, ытарайми, пĕртен-пĕр, лайăх, ырă, çепĕç)**;<br>— камăнлăх формисем çумне ачашлав аффиксĕсем хушăннă сăмахсене вулаççĕ, хăçан çавăн пек каланине тĕпчеççĕ, çак сăмахсемпе усă курма вĕренеççĕ: урокра вĕреннĕ пахалăха пĕлтерекен сăмахсемпе çыхăнтарса сăмах майлашăвĕсем, предложенисем тăваççĕ;<br>— «Пуринчен те лайăххи» текста вулаççĕ, ун тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ, ребус шутлаççĕ, ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |
| 71, 72 / 48 | **Хĕрарăмсен кунĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ўкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(пуш уйăхĕ, ака уйăхĕ, çу уйăхĕ, тумла, тумлать, кăнтăрла)**, урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ;<br>— çуркунне пуçламăшне сăнлакан пред- |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | ложенисене вулаççĕ, кирлĕ сăмахсем лартса çырса илеççĕ;<br>— «Çурхи уяв» текста вулаççĕ, текстпа çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ, кашни ушкăн амăшне саламлани çинчен ӳкерчĕкри тĕрлĕ герой ятĕнчен каласа парать;<br>— схемăсене кирлĕ сăмахсемпе улăштарса предложенисене çырса илеççĕ. |
| 73<br>49 | **Пирĕн çемье. Хăçан?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, астуса юлаççĕ **(çĕрле, ыран, хăçан)**;<br>— **хăçан?** ыйтăва хуравлама кирлĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсемпе сăмах майлашăвĕсем, предложенисем тăваççĕ;<br>— пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ, хуравлаççĕ;<br>— Катьăн çемйи çинчен каласа паракан текста вулаççĕ, текст тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ, ӳкерчĕк тăрăх Катьăн пӳлĕмĕ çинчен, вăл амăшне мĕнле пулăшни çинчен каласа параççĕ;<br>— хăйсен çемйи çинчен, ашшĕ-амăшне мĕнле пулăшни çинчен урокра тĕл пулнă сăмахсемпе усă курса каласа параççĕ;<br>— кун ячĕсене çырса илеççĕ, астуса юлаççĕ. |
| 74, 75<br>50 | **Манăн кукамайпа асанне.** Вĕреннĕ сăмахсене пуплевре çирĕплетесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çемьери çынсене пĕлтерекен сăмахсене вулаççĕ, вĕсене мĕнле çырмаллине тишкереççĕ, астуса юлаççĕ, кĕнекесене хупса учитель вуланă хыççăн çыраççĕ, кроссворд шутлаççĕ;<br>— Лена асламăшĕ çинчен калакан текста вулаççĕ;<br>— ун тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— сăмахсенчен предложенисем туса çыраççĕ;<br>— амăшне, асламăшне е кукамăшне саламлама ушкăнпа текст çыраççĕ;<br>— урокра вĕреннĕ сăмахсемпе усă курса хăйсен çемйи çинчен калав тăваççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 76/51 | **Çемье.**<br>Вĕреннĕ сăмахсене пуплевре çирĕплетесси.<br>Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăпка юррине вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ;<br>— пахалăха пĕлтерекен сăмахсене вулаççĕ, пусăм лартаççĕ, вырăсла куçараççĕ, сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, икшерĕн пĕр-пĕрне ыйтусем парса хуравлаççĕ;<br>— Миша каласа панине вулаççĕ, Мишăн амăшĕ çинчен каласа параççĕ;<br>— ывăлĕ амăшĕ патне çырнă çырăва вулаççĕ, Коля çинчен мĕн пĕлнине каласа параççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— амăшĕ ывăлĕн ыйтăвĕсене мĕнле хуравлама пултарнине сӳтсе яваççĕ, ывăлĕпе амăшĕ скайппа калаçнине выляса кăтартаççĕ;<br>— Кольăн çырăвĕнче амăшне уяв ячĕпе саламланă вырăна тупса вулаççĕ, çав текстпа тата панă сăмахсемпе усă курса амăшĕ валли саламлă çыру çыраççĕ. |
| 77, 78/52 | **Çĕвĕ ăсти.**<br>Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси.<br>Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(йĕп, çип, хачă, тӳме, çĕвĕ машини, супăнь, çăвать, ал шăлли, çакать, якатать)**;<br>— Аня çĕвĕçĕ çинчен вулаççĕ, чăвашла вулав графикин правилисене пăхăнса вуламалли вырăнсене тупса палăртаççĕ, текст содержанине каласа параççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— çĕвĕ фабрики çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— ушкăнпа ӳкерчĕк тăрăх тупмалли юмахсем тăваççĕ, ытти ушкăнри ачасенчен тупсăмне ыйтаççĕ;<br>— хăш вăхăтра мĕн тăхăнни çинчен пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ, хуравлаççĕ;<br>— сăмахсене пусăм лартса вулаççĕ, алфавит йĕркипе çыраççĕ, предложенисем тăваççĕ;<br>— амăшĕпе хĕрĕ япала çуни çинчен вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, учитель хушнă предложенисене тупса вулаççĕ, мĕн вуласа пĕлни çинчен каласа параççĕ, схемăсене сăмахсемпе улăштарса предложенисене çырса илеççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 79/53 | **Эпир — ĕçчен ачасем.** Вĕреннĕ сăмахсене пуплевре çирĕплетесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвва вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ; — сиктерсе хăварнă вырăнсене япалана пĕлтерекен сăмахсем лартса сăмах майлашăвĕсем, предложенисем тăваççĕ; — диалога вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ; — пĕчĕк текста **эпĕ** сăмаха **Катя** сăмахпа улăштарса вулаççĕ; — амăшĕпе хĕрĕ калаçăвне малалла тăсаççĕ, выляса кăтартаççĕ; — кĕнекере панă предложенисене диктант пек çыраççĕ. |
| 80, 81/54 | **Çĕр ĕçченĕсен ĕçĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(ыраш, тулă, пăрçа, çĕр, çĕр ĕçченĕ, уй-хир, тырă, сухалать, акать, вырать, пуçтарать, арман, авăртать, çăнăх, михĕ, тултарать, пĕçерет)**; — урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, пĕлтерĕшĕ енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ; — тракторист тата комбайнер ĕçĕсем çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, учитель вырăсла калană шухăшсене чăвашла текстра тупса вуласа параççĕ, текст содержанине каласа параççĕ, вĕреннĕ сăмахсене пуплевре çирĕплетес тĕллевпе панă ĕçсене пурнăçлаççĕ; — авалхи тата хальхи пурнăçри арманçăн ĕçĕхĕлне сăнлакан текстсене вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, арманçăн ĕçĕ çинчен каласа параççĕ; — сăмахсенчен предложенисем тăваççĕ. |
| 82/55 | **Çăкăртан хакли çук.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. | — сăвва вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ; — çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(кулач, хуплу, премĕк, çăкăр завочĕ, çăкăр пĕçерекен)**; — виçĕ ушкăнра панă сăмахсене пусăм тĕрĕс лартса вулаççĕ, сăмахсене мĕншĕн çапла уйăрнине ăнлантараççĕ, сăмахсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ; — ӳкерчĕк тăрăх панă ыйтусене хуравлаççĕ; — çăкăр заводĕнче ĕçлекен Катьăн амăшĕ çинчен калав тăваççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 83/56 | **Повар ӗҫӗ.** Ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашасси, вӗсене пуплеве кӗртесси. | — сӑвӑ тата ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсене астуса юлаҫҫӗ **(ярать, мӗншӗн тесен, хӑва)**;<br>— апат ячӗсене пӗлтерекен сӑмахсене тӗрӗс пусӑм лартса вулаҫҫӗ, вӗсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ;<br>— повар ӗҫне сӑнлакан текста вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ, учитель вырӑсла каланӑ шухӑша чӑвашла текстра мӗнле палӑртнине тупса вулаҫҫӗ, текстпа усӑ курса ӳкерчӗк тӑрӑх калав тӑваҫҫӗ;<br>— панӑ предложенисене тивӗҫтерекен ӳкерчӗксем суйлаҫҫӗ;<br>— апат-ҫимӗҫ тата пахча ҫимӗҫ ячӗсене аса илсе ҫыраҫҫӗ. |
| 84, 85/57 | **Парне туянатпӑр.** Ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашасси, вӗсене пуплеве кӗртесси. Вӗреннӗ грамматика материалӗпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхасси. | — сӑвӑпа тата ӳкерчӗкпе ҫыхӑннӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсене астуса юлаҫҫӗ **(юнашар, паллашать, туянать, чӗререн, миҫе тенкӗ тӑрать?)**;<br>— теттесен ячӗсене тӗрӗс пусӑм лартса вулаҫҫӗ, вӗсемпе предложенисем тӑваҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗксем тӑрӑх ыйтусем тӑваҫҫӗ, вӗсене хуравлаҫҫӗ;<br>— Саша валли ҫуралнӑ куна мӗн-мӗн илни ҫинчен калакан текста вулаҫҫӗ, содержанине каласа параҫҫӗ, панӑ тӗслӗхпе диалог туса выляса кӑтартаҫҫӗ;<br>— сӑмахпа ҫырнӑ хисеп ячӗсене цифрӑсемпе ҫыраҫҫӗ, предложенисене хисеп ячӗсем лартса ҫырса илеҫҫӗ, хисеп ячӗсем япалана пӗлтерекен сӑмахсемпе тӑнӑ чухне кӗскелнине аса илеҫҫӗ;<br>— ушкӑнпа ӗҫлесе хисеп ячӗсене япалана пӗлтерекен сӑмахпа е сӑмахсӑр калаҫҫӗ, ҫырса хураҫҫӗ. |
| 86, 87/58 | **Пирӗн ӗмӗтсем.** Пулас вӑхӑтри ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсен пӗрремӗш сӑпатри пӗрреллӗ | — сӑвва вулаҫҫӗ, вырӑсла куҫараҫҫӗ, ӗҫ калаҫу хыҫҫӑн пуласса палӑртаҫҫӗ;<br>— ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене ҫырса илеҫҫӗ, пулас вӑхӑт аффиксӗсене туртса паллӑ тӑваҫҫӗ;<br>— Анюкпа Ванюк ӗҫне тишкереҫҫӗ, пӗтӗм- |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | хисеп форми, вăл мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетсе правило-ориентир тăвасси. | летӳ туса Сергей Сергеевич каласа панипе танлаштараççĕ, правило-ориентир туса çырса хураççĕ;<br>— «Ĕмĕт» калава вулаççĕ, мĕн çинчен те пулин ĕмĕтленсе каланă чух ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пулас вăхăтра усă курмаллине пĕлеççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлеççĕ: **вула, çыр, кай, çӳре, шутла, ту** сăмахсене пулас вăхăтра **эпĕ** сăмахпа çыхăнтараççĕ, çав сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ, усă курса мĕн çинчен каласа пама пултарни çинчен пĕлтереççĕ, текст тăваççĕ. |
| $\frac{88, 89}{59}$ | **Пирĕн ĕмĕтсем.** Ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пулас вăхăт формисем. Ĕçе пĕлтерекен сăмахсен пулас вăхăт формисем мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир хатĕрлесси. | — сăвва вулаççĕ, вырăсла куçараççĕ, ĕç калаçу хыççăн пуласса палăртаççĕ, паллă тунă ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илеççĕ, вĕсене эпир сăмахпа çыхăнтарма пулнине палăртаççĕ, аффиксĕсене туртса паллă тăваççĕ, хăйсен ĕçне Анюкпа Ванюк ĕçĕпе танлаштараççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ;<br>— профессор каласа кăтартнине тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ туса правило-ориентир çырса хураççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлеççĕ: ĕçе пĕлтерекен сăмахсене пулас вăхăтăн тĕрлĕ формисене лартса çыраççĕ;<br>— «Ĕçчен хĕр ача» текста вулаççĕ, ун тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ. |
| $\frac{90}{60}$ | **Пулас ĕçсем.** Пулас вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсен çуклă форми, вăл мĕнле пулнине тишкересси, пĕтĕмлетӳ туса модель-ориентир хатĕрлесси. | — сăвва вулаççĕ, сăвă содержанине тишкереççĕ, паллă тунă ĕçе пĕлтерекен сăмахсене çырса илеççĕ, вырăсла куçараççĕ, аффиксĕсене паллă тăваççĕ, кашни аффиксăн пĕлтерĕшне палăртаççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк ĕçне тишкереççĕ, правило-ориентир туса хатĕрлеççĕ;<br>— пулас вăхăтри ĕçе пĕлтерекен сăмахсемлĕ чăвашла предложенисене вырăсла куçарăвĕпе çыхăнтараççĕ, вырăсла панă предложенисене чăвашла куçарса çыраççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 91/61 | **Пирĕн таврари йывăççем.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси. Вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕççене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(хурăн, юман, чăрăш, çăка, пилеш, хыр, вĕрене, çĕмĕрт, йăмра, ăвăс, юхан шыв, хĕрринче, мучи, вăрман хуралçи)**;<br>— Чăваш Ен вăрманĕсем çинчен калакан текста вулаççĕ, ыйтусен хуравĕсене текстра тупса çырса илеççĕ;<br>— вăрман хуралçи çинчен сăвă вулаççĕ, вăл мĕншĕн пăшăрханни çинчен калакан сăвă йĕркисене тупса вуласа параççĕ;<br>— схемăсемпе усă курса ушкăнпа предложенисем тăваççĕ;<br>— сăмах ушкăнĕнчен кирлĕ сăмахсем суйласа илсе хурăн çинчен калав тăваççĕ. |
| 92, 93/62 | **Пирĕн енне çуркунне вĕççе килекен кайăксем.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх ĕççене пурнăçлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(вĕлле, ывăнма пĕлмест, кĕвĕлет, хура курак, чĕкеç, тăри, шăпчăк, тăрна)**;<br>— панă сăмахсене вырнаçтарса çуркунне çинчен предложенисем тăваççĕ;<br>— çурхи уйăхсене сăнласа паракан текста вулаççĕ, калав хыççăн панă ыйтусен хуравĕсене текстра тупаççĕ, текстра ĕçе пĕлтерекен сăмахсене тупаççĕ, мĕншĕн ку е вăл формăпа усă курнине ăнлантараççĕ;<br>— икĕ текстран хăшĕ кĕнекери ӳкерчĕке тивĕçтернине тишкерсе калаççĕ;<br>— панă предложенисенче йăнăшсем тупаççĕ, тӳрлетсе çырса хураççĕ;<br>— шӳтлĕ диалога вуласа Кольăн йăнăшне тупаççĕ;<br>— вĕçен кайăк сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне палăртаççĕ;<br>— япалана, паллăна, ĕçе пĕлтерекен сăмахсемпе усă курса предложенисем тăваççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 94/63 | **Çĕнтерӳ кунĕ.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(çĕнтерӳ, Çĕнтерӳ кунĕ)**; — Çĕнтерӳ кунĕ çинчен калакан текста вулаççĕ, содержание каласа параççĕ; — çынна пĕлтерекен камăнлăх форминчи сăмахсемпе усă курма хăнăхаççĕ; — аслашшĕпе асламăшĕ патне мăнукĕ Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламласа çырнă çырăва вулаççĕ, ун тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ; — ӳкерчĕк тăрăх аслашшĕпе асламăшĕ мĕнле пурăнни çинчен каласа параççĕ. |
| 95, 96/64 | **Çулла.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвă тата ӳкерчĕк тăрăх панă ĕçсене пурнăçлаççĕ; — çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(çĕртме уйăхĕ, утă уйăхĕ, çурла уйăхĕ, шăрăх, улăх, утă çулать)**; — урокра вĕреннĕ сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ, содержани енчен пĕр пек вырăсла сăмах майлашăвĕсемпе йĕр туртса çыхăнтараççĕ, «Çулла» текста вулаççĕ, содержанине каласа параççĕ; — ушкăнпа ĕçлеççĕ: текст содержанийĕ тăрăх ыйтусем тăваççĕ, текста **эпир** сăмаха ачасем сăмахпа улăштарса вулаççĕ; — ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ; — хĕле тата çăва сăнлакан сăмахсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, вĕсемпе усă курса пĕчĕк калав тăваççĕ. |
| 97/65 | **Çуллахи каникулта.** Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси, вĕсене пуплеве кĕртесси. Вĕреннĕ грамматика материалĕпе пуплевре усă курма хăнăхасси. | — сăвăпа тата ӳкерчĕкпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлаççĕ; — çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлаççĕ **(çупах, çăрттан, уланкă, карас, улма-çырла, пахча çимĕç, Атăл, Атăл хĕрри)**, сăмахсене икĕ ушкăна уйăраççĕ, кашни ушкăнне ят параççĕ; — вырăсла панă предложенисене чăвашла куçараççĕ; — çулла пахчара мĕн туни çинчен ӳкерчĕк тăрăх каласа параççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — пулӑ ячӗсене астуса юлаҫҫӗ, вырӑсла тата чӑвашла текстсенче содержани енӗпе пӗр пек предложенисене тупса палӑртаҫҫӗ. |
| $\frac{98, 99}{66}$ | **Ҫуллахи каникулта.** Ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашасси, вӗсене пуплеве кӗртесси. Вӗреннӗ грамматика материалӗпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхасси. | — сӑвӑ тата ӳкерчӗк тӑрӑх панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсене астуса юлаҫҫӗ **(Пӑла, тӑтӑшах, вӑлта, ӑман, ярать)**;<br>— сӑмахсене пусӑм лартса вулаҫҫӗ, алфавит йӗркипе ҫыраҫҫӗ, йӑнӑшма май пур вырӑнсене паллӑ тӑваҫҫӗ, диктант пек ҫыраҫҫӗ;<br>— «Пулӑра» текст тӑрӑх панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— ушкӑнпа панӑ предложенисене вырнаҫтарса текст тӑваҫҫӗ;<br>— йывӑҫ, кайӑк, пулӑ ячӗсене аса илсе ҫыраҫҫӗ. |
| $\frac{100}{67}$ | **Экскурсире.** Вӗреннӗ сӑмахсене пуплевре ҫирӗплетесси. Вӗреннӗ грамматика материалӗпе пуплевре усӑ курма хӑнӑхасси. | — сӑвӑпа тата ӳкерчӗкпе ҫыхӑннӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ;<br>— «Экскурсире» текста вулаҫҫӗ, текст содержанийӗ тӑрӑх ыйтусем тӑваҫҫӗ, пӗр-пӗрне параҫҫӗ, хуравӗсене хаклаҫҫӗ;<br>— диалога малалла тӑсса пӗр-пӗринпе калаҫаҫҫӗ;<br>— чӑваш чӗлхипе илнӗ пӗлӳ-хӑнӑхусене хакламалли ӗҫсем хатӗрлеҫҫӗ. |
| $\frac{101, 102}{66}$ | **Вӗреннине пӗтӗмлетни.** Чӑваш чӗлхипе илнӗ пӗлӳ-хӑнӑхусене пӗтӗмӗшле хакласси. | — Анюкпа Ванюк туса хатӗрленӗ пӗлӳ-хӑнӑхусене хакламалли мелсене пахалаҫҫӗ;<br>— туса хатӗрленӗ ӗҫсемпе усӑ курса пӗлӳ-хӑнӑху шайне тӗрӗслеҫҫӗ, хаклаҫҫӗ. |

## АЧАСЕН ПӖЛӲ ХӐНӐХӐВӖСЕНЕ ТӖРӖСЛЕМЕЛЛИ ӖҪСЕМ

**1. Профессие пӗлтерекен сӑмахсене туп.**

1) Кам-ши?
Ҫӑкӑр, кулач пӗҫерет,
Ҫынсене савӑнтарать.
2) Кам ҫӑкӑр пӗҫерет?
Художник, пахчаҫӑ, комбайнер, ҫӑкӑр пӗҫерекен.
3) Художник мӗн тӑвать?
Ҫӑкӑр пӗҫерет, ӳкерет, сыватать, вӗрентет.
4) Пахчаҫӑ мӗн ӳстерет?
Пахча ҫимӗҫ, какай, сӗт, ҫӑкӑр.
5) Вӗренекене кам пӗлӳ парать?
Тухтӑр, вӗрентекен, комбайнер, пахчаҫӑ.
6) Кам ҫынсене сыватать?
Тухтӑр, вӗрентекен, художник, комбайнер.

**2. Кашни йӗркере ытлашши сӑмах туп.**

1) Шкул ачи, вӗренекен, тухтӑр, вӗрентекен.
Кӑранташ, альбом, кӗнеке, кашӑк.
Пан улми, чие, хурлӑхан, слива, сӗт.
2) Кишӗр, кӑшман, пан улми, ҫӗр улми.
Чие, пилеш, редис, хурлӑхан.
Хурӑн, хыр, чӑрӑш, хурма.
3) Кашӑк, ҫӗҫӗ, турилкке, сӗтел.
Куртка, пальто, ручка, кӗрӗк.
Кӗпе, тутӑр, пукан, саппун.
4) Анне, аппа, пичче, атте, йӑмӑк, асанне, асатте, вӗрентекен, кукамай, кукаҫи, мӑнук.

**3. Сӑмахсене ушкӑнла.**

1) Упа, тилӗ, шӑнкӑрч, ҫерҫи, мулкач, кашкӑр, кӑсӑя, сурӑх, качака, курак, чӗрӗп, така, тигр, чӗкеҫ, тӑри, лаша, сысна, ӗне.

2) Вĕрене, кĕнеке, хурăн, ручка, ăвăс, кăранташ, чăрăш, хур, чăх, сăрă, кăвакал, автан.

3) Кĕпе, куç, пуç, пушмак, нуски, ура, шăлавар, çĕлĕк, тутăр, алă, шăл, сăмса, пит, пӳрне, атă, кĕрĕк.

4) Чей курки, турилкке, çăкăр, кашăк, кукăль, çăмарта, çĕçĕ, чейник, сĕт, чашăк, çатма, çу, канфет, сахăр.

**4. Тĕрĕс куçарусене палăрт.**

| | |
|---|---|
| кишĕр — капуста | сухан — лук |
| алă — рука | хăяр — картофель |
| çумăр — дождь | çарăк — репа |
| хĕвел — солнце | паян — сегодня |

**5. Ыйтăвне кура сăмахсене икĕ ушкăна уйăр.**

Кĕнеке, ӳкерчĕк, вĕрентекен, шкул ачи, сăрă, вĕренекен, сĕтел, библиотека, директор, тухтăр.

**6. Тĕрĕс кала.**

Кушакăн — çура, ĕнен — пăру, сурăхăн — ... , чăхăн — ... , кăвакалăн — ... , лашан — ... , йыттăн — ... , хурăн — ... , качакан — ... .

**7. Сăмах майлашăвĕсем ту. Йĕр туртса çыхăнтар.**

| | |
|---|---|
| сарă | тутăр |
| хитре | çĕлĕк |
| пысăк | кĕпе |
| хура | кăвакарчăн |
| пĕчĕк | шăнкăрч |
| илемлĕ | çерçи |

**8. Кирлĕ сăмах суйласа ил.**

1) манăн ... (кĕнекӳ, кĕнеки, кĕнекем)
санăн ... (шкулăм, шкулу, шкулĕ)
унăн ... (вĕрентекенĕ, вĕрентекенĕм, вĕрентекенӳ)

2) Асанне хĕлле валли алсиш ... (çыхатăп, çыхать, çыхатпăр).
Асаттене эпĕ питĕ ... (юратрăн, юрататьт, юрататăп).
Эсĕ урокра лайăх ... ( итлетĕп, итле, итлĕр).

3)

| | |
|---|---|
| сарă, хĕрлĕ, хăмăр | вăрман |
| ăшă, сивĕ | çил |
| пĕчĕк, ула, юратнă | пан улми |
| хĕрлĕ, тутлă, пысăк | кушак çури |

4)

| | |
|---|---|
| Ăшă çу кунĕсем ... | пиçет |
| Вăрманта çырла ... | çитрĕç |
| Кайăксем хитре ... | кĕреççĕ |
| Ачасем шыва ... | юрлаççĕ |

5) лаша — нартлатать
вăкăр — чупать
хур — тăрать
кăвакал — ишет

6) çĕвĕçĕ — сыватать
тухтăр — тĕрлет
кĕтӳçĕ — пăхать
атăçă — юсать
тĕрĕçĕ — çĕлет

7) Илемпи — кил сыхлать
Хураçка — пулă тытать
Пулăçă — тĕрĕ тĕрлет
Ванюк — кĕнеке вулать

**9. Кирлĕ сăмах ларт.**

1) ... кĕпе çĕлет; ... çынсене сиплет; ... апат пĕçерет; ... ачасене вĕрентет; ... чӳлмек тăвать; ... йывăçран сĕтел-пукан тăвать.

2) Володя уроксем ... ташă кружокне çӳрет. Урок пуçланать, ачасем парта ... ларчĕç. Таня паян доска ... питĕ лайăх ĕçлерĕ. Шкул ... машина тăрать. Эпир Маринăпа пĕр парта ... ларатпăр.

**10. Хисеп ячĕсене сăмахпа çыр.**

1) 34, 37, 42, 46, 1, 4, 29, 15, 100, 2, 27, 3, 38, 5, 65, 6, 10, 7, 72, 8, 83, 9, 96, 20, 30, 40, 50, 60, 70, 80, 90, 99, 87, 71.

2) Манăн анне 33 çулта. Атте 36 çулта. Манăн йăмăк 5 çулта. Вăл 10-мĕш ача садне çӳрет. Эпĕ 8 çулта, 4-мĕш шкулта, 2-мĕш класра вĕренетĕп.

**11. Ыйтусене хуравла.**

1) — Çĕр улми ăçта ӳсет?
Пахчара, пӳлĕмре, шкулта, вăрманта.
— Çĕр улмине хăçан лартаççĕ?
Кĕркунне, хĕлле, çулла, çуркунне.
— Çĕр улмине хăçан кăлараççĕ?
Кĕркунне, хĕлле, çулла, çуркунне.

2) — Кам çăкăр пĕçерет?
— Кам çĕр сухалать?
— Кам тулă вырать?
— Кам кĕпе çĕлет?
— Кам тĕрĕ тĕрлет?

3) Ачасем вăрмана кайнă. Вĕсем унта кăмпа татнă, мăйăр пухнă. Вăрманта ачасем чĕрĕп, мулкач тата пакша курнă.

— Ачасем ăçта кайнă?
— Вĕсем унта мĕн тунă?
— Вăрманта ачасем мĕн курнă?

4) Çуркунне çитрĕ. Çанталăк ăшăтрĕ. Кайăксем вĕçсе килчĕç. Кураксем йăва çавăраççĕ. Шăнкăрчсем юрлаççĕ, ачасене савăнтараççĕ. Епле ырă çуркунне!

— Çуркунне çанталăк мĕнле?
— Кураксем мĕн тăваççĕ?
— Мĕнсем ачасене савăнтараççĕ?

**12. Çырса пĕтер.**

1) Эпĕ мĕн тăватăп?

| | |
|---|---|
| вула... | ĕçле... |
| выля... | иш... |
| чуп... | çыр... |
| пуçтар... | кил... |
| ӳкер ... | юрла... |

2) Эсĕ мĕн турăн?

| | |
|---|---|
| лар... | пĕл... |
| пурăн... | ил... |
| юрат... | пĕçер... |
| савăн... | ут... |
| вĕç... | чуп... |

3) Вĕсем мĕн тăвĕç?

| | |
|---|---|
| сик... | тăр... |
| çывăр... | шăвар... |
| тат... | ак... |
| хур... | ярăн... |
| çи... | шутла... |

**13. Тĕрĕссине палăрт.**

1) Учитель дает знание.
   Вĕрентекен вĕрентет.
   Вĕрентекен ăслă çын.
   Вĕрентекен пĕлӳ пухать.
   Вĕрентекен пĕлӳ парать.
2) Я буду доктором.
   Вăл тухтăр пулать.
   Эпир тухтăр пулăпăр.
   Эпĕ тухтăр пулатăп.
   Эпĕ тухтăр пулмастăп.
3) Художник рисует зеленый лес.
   Художник симĕс вăрман ӳкернĕ.

Художник чăрăш вăрманĕ ӳкерет.
Художник симĕс вăрман ӳкерет.
Художник симĕс вăрман ӳкерĕ.

**14. Йăнăшсене тӳрлет. Тĕрĕс кала.**

1) Пулă сывлăшра вĕçет. Самолет шывра ишет. Кушак вăрманта пурăнать. Тилĕ — килти чĕр чун. Упан чĕпĕ пур.

2) Тилĕ сĕтел çинче выртать. Зоопаркра кĕнеке куртăм. Упа витере пурăнать. Ёне вăрманта пурăнать. Чăх сĕт парать. Курак шăши тытать. Кушак йăва çавăрать.

**15. Хăшĕ предложени пулмасть?**

Пирĕн шкулăн пысăк пахча пур.
Пахча хăяр, купăста, кишĕр, кăшман.
Кăçал пахча çимĕç лайăх пулнă.
Вĕсене ăста пахчаçăсем ӳстернĕ.

**16. Тĕрĕс йĕркеленĕ предложенисене палăрт.**

1) Манăн юлташ шкулта вĕренет.
Юлташ вĕренет манăн шкулта.
Вĕренет манăн юлташ шкулта.
Шкулта манăн юлташ вĕренет.

2) Ӳсет пахчара кишĕр.
Эпĕ кишĕр юрататăп.
Пирĕн пахчара кишĕр ӳсет.
Çулла йăмăк кишĕр çумлать.

**17. Предложенисене вĕçле.**

1)

| | |
|---|---|
| Асанне кукăль ... | вĕренет |
| Йăмăк сăвă ... | ĕçлет |
| Атте тракторпа ... | пĕçерет |
| Асатте пулă ... | çĕлет |
| Анне кĕпе ... | тытать |

2) Эпĕ вулатăп, çыр..., шутла... . Эсĕ юрла..., ташла... . Вăл итле..., калаç... . Вĕсем выля..., ярăн... . Эпир хур..., ил... . Эсир ак..., шăвар... .

3) Эпир утрăмăр, лар... . Эсĕ сик..., чуп... . Эпĕ çывăр..., тăр... . Вăл лар..., тăр... . Эсир çыр..., шутла... . Вĕсем ӳкер..., сăрла... .

4) Эпĕ вулăп, çырăп, шут... .
Эсĕ вула... , çыр... , шутла... .
Вăл вула... , çыр... , шутла... .
Эпир вула... , çыр... , шутла... .
Эсир вула... , çыр... , шутла... .
Вĕсем вула... , çыр... , шутла... .

**18. Панă сăмахсенчен предложенисем ту.**

1) Таня, пулать, тухтăр. Шкулта, лайăх, вĕренет, вăл. Амăшĕ, тухтăр, унăн. Больницăра, ĕçлет, вăл.

2) Ачасен, шкулта, янăрать, сасси. Килеççĕ, шкула, хăнасем, паян. Тĕрлĕ, ачасем, çӳреççĕ, шкулта, кружоксене. Вĕренекенсен, çуллахи, пуçланать, каникул.

3) Вырсарни кун, паян. Ачасем, килчĕç, шкула. Класпа, каяççĕ, вăрмана. Хĕллехи, илемлĕ, вăрман. Курчĕç, вăрманта, ачасем, пакша. Сикет, вăл, йывăç, йывăç, çинчен, çине.

4) Çу, иртрĕ, ăшă. Кĕр, çитрĕ, çумăрлă. Эпир, вăрмана, кайрăмăр, ачасемпе. Юрламаççĕ, кайăксем, унта. Çук, йывăçсем, çулçăсем, çинче. Выртаççĕ, çĕр, çулçăсем, çинче. Вĕрет, çил, сивĕ.

5) Кун, ăшă, хĕллехи. Кайнă, ачасем, тăвайккине. Йĕлтĕрсем, илнĕ, вĕсем, çунашкасем. Ярăннă, аван, тăвайккинчен, йĕлтĕрпе, çунашкапа.

6) Çуркунне, ăшă, çитрĕ. Кайăксем, вĕçсе, вĕçен, килчĕç. Выляççĕ, хаваслăн, ачасем, урамра.

7) Çитрĕç, çу, кунĕсем, ăшă. Шкул, ачисем, канаççĕ, лагерьте. Хĕрринче, кӳлĕ, лагерь, вырнаçнă. Вырăн, илемлĕ, кӳлĕ, питĕ, хĕрринче. Лагерь, симĕс, патĕнче, вăрман, пур. Экскурсие, çӳреççĕ, ачасем. Коллекци, Юра, çулçăсенчен, Сергейпа, турĕç.

8) Хĕрарăмсен, çитет, уявĕ. Ачасем, парнесем, пĕчĕк, хатĕрлеççĕ. Тĕрлет, Марук, тĕрĕ. Ӳкерет, Раман, ӳкерчĕк.

**19. Панă предложенисенчен текст ту.**

1) Çăкăр заводĕнче çăкăр, сушка, премĕк, печени пĕçереççĕ. Манăн анне çăкăр пĕçерекен. Эпĕ аннепе мухтанатăп. Пирĕн хулара çăкăр завочĕ нумай. Вăл çăкăр заводĕнче ĕçлет. Анне тутлă çăкăр пĕçерет.

2) Анне çăкăр заводĕнче ĕçлет. Йăмăк ача садне çӳрет. Эпĕ, атте, анне, асанне тата йăмăк. Пирĕн çемье пысăк, пилĕк çын. Атте — инженер. Вăл çăкăр пĕçерекен. Асанне — пенсионер. Вăл стройкăра ĕçлет.

3) Ăшă çумăр çăвать. Кунĕпе сарă хĕвел пăхать. Савăнăçлă çу кунĕсем çитрĕç. Ешĕл вăрманта тĕрлĕ çырла пиçет. Ачасем шыва кĕреççĕ, хĕвел çинче хĕртĕнеççĕ, пулă тытаççĕ.

**20. Текстри предложенисене уйăр.**

Вĕрентекен ачасене вĕрентет ачасем урокра вулаççĕ, çыраççĕ, задача шутлаççĕ чăваш чĕлхипе Вера Петровна вĕрентет эпир чăваш чĕлхи урокĕнче чăвашла калаçатпăр, вулатпăр, çыратпăр, юрлатпăр канмалли кунсенче вĕрентекенпе чăваш театрне каятпăр.

**21. Калав содержанине кала.**

МАТТУР ХĔР АЧА

Автобусра ҫын нумай пулнӑ. Пĕр вырӑн та пулман. Катьӑпа амӑшĕ ларнӑ. Вĕсен умĕнче хĕрарӑм тӑнӑ. Унӑн аллинче пысӑк сумка пулнӑ. Катя хĕрарӑма хӑй вырӑнне лартнӑ. Хĕрарӑм Катьӑна тав тунӑ.

ПАХЧАРА

Ҫулла. Кун лайӑх. Ӑшӑ ҫил вĕрет. Сарӑ хĕвел пӑхать. Эпир аннепе сухан лартрӑмӑр. Саша шӑллӑм лейкӑпа кишĕр шӑварчĕ. Мĕнле лайӑх пахчара!

КИМĔСЕМ

Ачасем пĕчĕк юхан шыв хĕрринче вылянӑ. Вĕсем шыва кимĕсем янӑ. Кимĕсем ишнĕ. Ачасем савӑннӑ.

ҪЫРЛАРА

Ҫулла. Ӑшӑ кун. Сарӑ хĕвел пӑхать. Ачасем вӑрмана кайнӑ. Надя нумай ҫырла курнӑ. Вӑл юлташĕсене чĕннĕ. Ҫырла питĕ тутлӑ. Ачасем нумай ҫырла татнӑ. Вĕсем питĕ савӑннӑ.

ХУРСЕМ

Пĕчĕк Раман урама тухнӑ. Урамра хурсем курӑк ҫинĕ. Вĕсем какаланӑ, ача патне утнӑ. Пĕчĕк Раман хурсенчен хӑраман. Раман патак илнĕ те хурсене хӑваланӑ. Хурсем пĕвене кайнӑ, шыва кĕнĕ.

ПЕТЯ ТУСĔ

Петя вӑрмана кӑмпана кайнӑ. Вӑл нумай кӑмпа татнӑ. Курӑк ҫине ларнӑ. Вӑл сасӑ илтнĕ. Ача умне пĕр пысӑк йытӑ утнӑ. Ку вӑл Петьӑн тусĕ Улай пулнӑ. Улай Петьӑна вӑрманта тупнӑ. Улай — лайӑх тус.

**22. Вырӑсла куҫар.**

ТАРАСПА ПАВӐЛ

Тараспа Павӑл туслӑ. Вĕсем вӑрмана кайнӑ. Вӑрманта кӑмпа нумай. Тараспа Павӑл кӑмпа пуҫтарнӑ. Вĕсем савӑннӑ.

АНЮКПА ИЛЮШ

Анюкпа Илюш — пĕр ҫемьери ачасем. Анюк пиллĕкмĕш класра вĕренет. Илюш — иккĕмĕш класра. Вĕсем лайӑх вĕренеҫҫĕ. Вĕсене учительсем юратаҫҫĕ.

## ЛИЗА АМĂШĔ

Кĕркунне. Лизăпа амăшĕ пахчара ĕçленĕ. Вĕсем патне Зинăпа Зоя пынă. Лиза амăшĕ çĕр улми кăларнă, хĕр ачасем пуçтарнă. Лиза амăшĕ хĕр ачасене тав тунă.

## ПИРĔН ÇЕМЬЕ

Пирĕн çемье пысăк. Эпир пиллĕкĕн пурăнатпăр. Атте, анне, йăмăк, пичче тата эпĕ — Гера. Эпĕ иккĕмĕш класра вĕренетĕп. Йăмăк Галя ятлă. Вăл ача садне çӳрет. Пичче Коля ятлă. Вăл институтра вĕренет.

Эпир туслă пурăнатпăр. Эпир аттепе аннене юрататпăр.

## КАНМАЛЛИ КУН

Вырсарни кун. Ирхине Таня тăчĕ. Вăл вырăн пуçтарчĕ. Чечексене шăварчĕ. Урай çурĕ. Амăшĕ яшка пĕçерет. Таня амăшне те пулăшрĕ.

Таня маттур хĕр ача.

## ĔÇЧЕН АЧА

Петя çулла ялта пурăннă. Вăл аслашшĕпе асламăшне пулăшнă. Сухан, купăста, кишĕр, хăяр çумланă, шăварнă. Пушă вăхăтра кĕнеке вуланă, пулă тытнă.

Петя — ĕçчен ача.

## ЯКУР

Манăн шăллăм Якур ятлă. Вăл пилĕк çулта. Эпĕ иккĕмĕш класра вĕренетĕп. Пушă вăхăтра эпир Якурпа урамра вылятпăр, шыва кĕретпĕр. Эпĕ Якура юрататăп.

Пирĕн Якур лайăх ача.

## МАРЬЕ

Марье шкула çӳрет. Вăл Вальăпа пĕр парта хушшинче ларать. Марье лайăх вĕренет. Килте Марье амăшне пулăшать. Пушă вăхăтра кĕнекесем вулать, телевизор пăхать, компьютерпа вылять.

## УРОКРА

Уроксем пуçланчĕç. Ачасем класра лараççĕ. Пĕрремĕш урокра вĕсем вуларĕç. Иккĕмĕш урокра шутларĕç. Виççĕмĕш урокра çырчĕç. Тăваттăмĕш урокра ӳкерчĕç.

## СЕРЕЖА

Сережа шкултан таврӑнать, апат ҫиет, выляма тухать. Вӑл пӗр сехет урамра вылять. Унтан уроксем тӑвать. Кайран амӑшне пулӑшать.

Сережа ӗҫсене яланах вӑхӑтра тӑвать.

## ИРХИНЕ

Эпӗ ирхине тӑратӑп, вырӑн пуҫтаратӑп. Унтан зарядка тӑватӑп, тумланатӑп, ирхи апат ҫиетӗп. Сакӑр сехетре шкула каятӑп.

## КУПӐСТАПА КИШӖР

Пахчара купӑстапа кишӗр ӳснӗ. Вӗсем туслӑ пурӑннӑ. Пахчаҫӑ вӗсене пӑхнӑ, кашни кун шӑварнӑ. Кӗркунне ҫимӗҫсем лайӑх пулнӑ. Пахчаҫӑ савӑннӑ.

**23. Вула, ыйтусем хатӗрле.**

## ЭПИР ӲКЕРЕТПӖР

Вова лаша ӳкерет. Эпӗ пӳрт ӳкеретӗп. Ира пӳрт умӗнчи чӑхпа чӗпсене ӳкерет. Эпир пурте тӑрӑшатпӑр.

## ПИРӖН КЛАСС

Пирӗн класс пысӑк та ҫутӑ. Класра партӑсем, сӗтел, пукан, доска, шкап пур. Шкапа кӗнекесем, кӑранташсем, сӑрӑсем хуратпӑр. Чӳрече ҫинче чечексем пур. Вӗсем илемлӗ.

## ЛЕВА ПИЧЧЕ

Лева пичче — летчик. Вӑл Шупашкарта пурӑнать. Лева пичче пысӑк самолетпа вӗҫет. Пӗррехинче вӑл мана самолет ҫине лартрӗ. Эпӗ питӗ савӑнтӑм.

Ӳссен эпӗ те летчик пулатӑп.

## ЭРХИП

Эрхип чирленӗ. Унӑн пуҫ ыратнӑ. Эрхип піччӗшӗ тухтӑра чӗннӗ. Тухтӑр Эрхипе эмел панӑ. Эрхип эмеле ӗҫнӗ. Вӑл сывалнӑ.

## ТУССЕМ

Манӑн йытӑпа кушак пур. Йытӑ Улай ятлӑ. Кушак Мӑрмӑр ятлӑ. Улай шӑмӑ юратать. Мӑрмӑр хӑйма юратать. Кушакпа йытӑ туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Эпӗ Улайпа Мӑрмӑра юрататӑп, пӗрле вылятӑп.

## НИНĂПА АСЛАМĂШĔ

Нина шкултан килнĕ. Килĕнче асламăшĕ пулнă. Нина сĕтел хушшине ларнă. Вăл асламăшне кĕнеке вуласа панă, сăвă каланă. Асламăшĕ итленĕ. Нина лайăх вуланă. Асламăшĕ савăннă, Нинăна мухтанă.

## ĔНЕ ФЕРМИ

Вера аппа фермăра ĕçлет. Вăл ĕнесем пăхать. Ĕнесем хĕрлĕ, ула, хура, шурă тĕслĕ. Вĕсем сĕт параççĕ. Сĕтрен хăйма пулать. Хăйма, сĕт тутлă. Эпир сĕт, хăйма юрататпăр.

**24. Диалог йĕркеле.**

— Санăн юлташ пур-и?
— ... .
— Вăл мĕн ятлă?
— ... .
— Лена миçемĕш шкулта вĕренет?
— ... .
— Миçемĕш класра вĕренет?
— ... .
— Санăн юлташу миçе çулта?
— ... .
— Вăл мĕнле вĕренет?
— ... .
— Мĕнле предметсене юратать?
— ... .
— Пушă вăхăтра мĕн тăвать?
— ... .

**25. Калава малалла тăс.**

Пирĕн çемье пысăк. Çемьере пилĕк çын. Эпĕ, атте, ...

**26. Вулав тĕрĕслемелли текстсем.**

## ÇĂКĂРА УПРА

Пирĕн çемье пысăк: асатте, асанне, атте, анне, пичче, шăллăм тата эпĕ. Аслисем пурте ĕçлеççĕ. Асатте выльăхсем пăхать. Асанне апат пĕçерет. Атте — бригадир, хирте ĕçлет. Анне фермăра ĕçлет. Эпир пиччепе шкулта вĕренетпĕр. Ванюк шăллăм шкула каймасть.

Пĕррехинче апат çиетпĕр. Эпир пиччепе тирпейлĕ çирĕмĕр. Ванюк шăллăм сĕтне тăкрĕ, çăкăрне ӳкерчĕ.

Атте Ванюка каларĕ:

— Çăкăр хаклă. Ăна тума нумай çын ĕçлет. Вĕсем суха тăваççĕ, акаççĕ, выраççĕ, авăртаççĕ, пĕçереççĕ.

Ванюк хĕрелчĕ. Çăкăрне илчĕ. Атте савăнчĕ. Яланах тирпейлĕ пул терĕ.

## ПУКАНЕ

Верукăн пукане пур. Пукане хитре. Унăн куçĕ кăвак. Çӳçĕ сарă. Пушмакĕ шурă. Кĕпи симĕс. Саппунĕ хĕрлĕ.

Верук пуканепе вылять, калаçать. Ăна вăл çăвать, çӳçне турать, тумлантарать. Верук пуканепе урама тухать. Пукане чирлет. Верук ăна сыватать. Ăна лайăх пăхать. Каçхине пĕрле çывăраççĕ.

Верук пуканене юрататъ.

## КЛАСРА КУЛЛЕН УСĂ КУРАКАН ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

Ырă кун пултăр, ачасем.
Сывлăх сунатăп, ачасем.
Сывлăх сунатпăр,
Анна Ивановна.
Сывă пулăр, ачасем.
Сывă пул, Лена.
Тăрăр.
Тăр, тархасшăн.
Ларăр.
Лар, тархасшăн.
Ил, тархасшăн.
Урок пуçланать.
Урока хатĕрленĕр.
Класс урока хатĕр.
Урок вĕçленчĕ.
Паян кам дежурнăй?
Класра кам çук?
Итлĕр, тархасшăн.
Итлĕр те калăр.
Дневниксене сĕтел çине
хурăр.
Кĕнекесене вун иккĕмĕш
страницăна уçăр.
Кĕнекесене хупăр.
Тĕрĕс.
Тĕрĕс мар.
Маттур.
Доска умне тух.
Манăн ыйтусене хуравлăр.
Ыйтусем пур-и?
Ыйтăва хуравла.
Ыйтусене хуравлăр.
Ӳкерчĕк çине пăхăр та калăр.
Предложенисем тăвăр.
Вулатпăр.
Çыратпăр.
Тĕрĕслетпĕр.
Ручкăсене илĕр.
Ручкăсене хурăр.
Йăнăшсем пур-и?
Йăнăшсене тӳрлетĕр.
Сăвва пăхмасăр вĕренĕр.
Доска тасат(ăр).
Доска çине çыр(ăр).
Паян мĕнле число?
Паян (ыран) мĕнле кун?
Алăк (чӳрече) уç(ăр).
Алăк (чӳрече) хуп(ăр).
Каçар(ăр), тархасшăн.
Ку тĕрĕс (тĕрĕс мар).
Эсĕ йăнăшатăн.
Кĕме юрать-и?
Тухма юрать-и?
Ман хыççăн калăр.
Тепĕр хут кала.
Каласа пар.

# ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . . . 3
Уроксем . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Тĕслĕх ĕç программи . . . . . . . . . . 107
Ачасен пĕлӳ хăнăхăвĕсене тĕрĕслемелли ĕçсем . . . . . . . . . . . . . . . 148
Класра куллен усă куракан предложенисем . 159

*Учебное издание*

**Игнатьева Валентина Ивановна**
**Чернова Нина Николаевна**
**Николаева Людмила Васильевна**

**Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем**

**Методические указания к учебному пособию «Чувашский язык»**

**2 класс**

*Пособие для учителя*

На чувашском языке

Редактор *Н.В. Вечеркина*
Художник *Д.В. Литаврин*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *Н.Г. Герасимова, Э.В. Шельтямова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600.
Подписано к печати 16.10.17. Формат 60×84 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,3. Тираж 600 экз.
Заказ № К-2091. Изд. № 65.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail:chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.